Иван Мучи,
Хветĕр Уяр

# Октябрьти революциччченхи чăваш литератури

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар ◆ 1946

## АСĂРХАНĂ ЙĂНĂШСЕМ

| Хăш страницăра | Миççемĕш йĕркере | Пичетленнĕ: | Вуламалла: |
|---|---|---|---|
| 7 | Çӳлтен 5 йĕркере | кĕтмелме | кĕтмелле |
| 68 | „ 1 йĕркере | Тиллĕкри | Пиллĕкри |
| — | „ 2 йĕркере | Пин | Тин |
| — | Аялтан 1 йĕркере | Ĕррипе | Еррипе |
| 82 | Çӳлтен 11 йĕркере | Çак ăнпа | Çакăнпа |

Иван Мучи, Федор Уяр
„Дореволюционная чувашская литература"

ИВАН МУЧИ,
ХВЕТĔР УЯР

# Октябрьти революцинченхи чăваш литератури

## ХРЕСТОМАТИ

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР 1946

## УМСĂМАХ

Чăваш илемлĕ литератури, ытти халăхсенни пекех, халăх творчествинчен—фольклортан пуçланса тухать.

„Сăмах искусствин пуçламăшĕ—фольклорта",— тенĕ вырăссен аслă писателĕ М. Горький. Горький калани çамрăк чăваш литературишĕн те улшăнми тĕрĕс сăмах пулса тăрать. Халăх сăмахлăхĕнчи юрă-сăвăсем, юмах-халлапсем вĕсем илемлĕ литературăна çуралса ӳсмелли тымар пулса тăраççĕ. Илемлĕ литература çак тымарсенчен ӳссе аталанать. Чăваш литературинчи малтанхи паллă произведенисене („Арçури", „Нарспи" тата ытти те) илсен те эпир çавнах куратпăр. Вĕсем халăх хăй хывнă формăсемпе, халăх творчествинчи сăнлăхсемпе çырнă япаласем.

Çакăнпа пĕрлех тата илемлĕ литература вăл тăван чĕлхе çырулăхĕн ӳсĕмĕпе таччăн çыхăнса тăракан япала. Паллах, тăван çырулăхĕ çук халăхăн литератури те пулма пултараймасть. Çырулăхĕ ӳссе çирĕпленнĕ халăхăн фольклорĕ çинче анчах илемлĕ литература та никĕс хывса аталанма май тупать.

Пирĕн чăвашăн 1873—1880 мĕш çулсемччен хăйĕн çырулăхĕ пулман. Çав çулсенче кăна, И. Я. Яковлев тăрăшнипе, чăвашсен хăйсен алфавичĕ—çырулăхĕ пуçланса кайнă.

Тăван çырулăх пуличчен чăваш фольклорне тĕплĕн пухакансем пулман. Мĕншĕн тесен, ун чух чăваш халăхĕн хăйĕнчен тухнă вĕреннĕ çынсем çукпа пĕрех пулнă. Сайра-хутран кăна Иоакинф Бичурин пек пĕччен вĕренкелесе тухнисем те вăл вăхăтра тăван халăхне вĕрентсе çутатас тĕлĕшпе ĕçлеме пултарайман. Иоакинф Бичурин хăй вăхăтĕнче пĕтĕм Российăшăн пысăк учĕнăй шутĕнче тăнă. Вăл инçетри хĕвелтухăçĕнче пурăнса китай, тибет, монгол халăхĕсен пурнăçĕсене вĕреннĕ, вĕсем çинчен кĕнекесем çырса кăларнă. Анчах та çав хушăрах вăл тăван халăхĕ çинчен нимĕн те çырайман.

Чăваш фольклорĕпе интересленнĕ хашпĕр вырăс учĕнăйĕсем кăна, ăна çиелтен сăнакаласа, вырăсла тран-

скрипципе çырса илнĕ (Александра Фукс, В. Сбоев Н. Золотницкий, В. Магницкий, тата ыт. те).

Чăваш чĕлхипе чи малтан çырнисенчен эпир 180 çул ĕлĕкрех—1767 çулта çырнă сăвва кăна пĕлетпĕр. Çав вăхăтра хресчен халăхĕ хăй ирĕкĕшĕн хытă кĕрешни пире паллă. 1773—74-мĕш çулсенче Емельян Пугачев пуçарнă хресчен вăрçине чăваш халăхĕ те хутшăннă. Вăрçă ун чухнехи йывăр пурнăçа хирĕç пынă. Анчах та çак вăхăтрах, Пугачев пăлхавĕ тухиччен пĕр 5—6 çул маларах кăна, Хусанти „Новокрещенски" шкулта (тин çеç тĕне кĕвисен шкулĕнче) вĕренекен темиçе чăваш ачи, хăйсен шкул начальстви хушнипе, Екатерина патша патне яма ăна мухтакан ода майлă сăвă çырнă. Чăваш çырулăхĕ пулманнипе одине вырăс çырулăхĕн правилисемпех сăвăланă. Вăл сăвă йĕркисем çапла вуланаççĕ:

Пелместапар абир тя минь барас парня,
Сана чибер патша гора—мырын Ання!
Иоратныжан пире пелместа мар халчень
Тора хужу сюлда пельзан и дах чечень
Памалых ся-ванжен, ни мен çиох чон анчах
Парня вырня полдар вулда аппинь санах...

Çав сăвва хальхи транскрипципе йĕркелесе çырсан, çапла пулать:

Эй, пурсăмăрăн анне—илемлĕ патша,
Эпир сана, пире юратнăшăн,
Ниепле парне кÿрессине те пĕлместпĕр,
Эпир халиччен çÿлти турра пĕлмен,
Ăна лайăх пĕлтернĕшĕн, сана тавăрса
Памалли пирĕн нимĕн те çук, чун анчах:
Вăл та пулин сана парне вырăнне пултăр...

Хальхи вăхăтра ку сăвва сăвă теме те майĕ çук ĕнтĕ. Ăна вырăсла сăмах çаврăнăçĕсемпе çырнă, сăвви йĕркисенче ăнламалла мар сăмахсем нумай тĕл пулаççĕ. Çапах та, чăваш литературин историйĕ çинчен калаçнă чух, çак сăвă çинчен те асăнса хăварни кирлĕ.

1850-мĕш çулсенче чăвашсен пĕрремĕш писателĕ—этнограф Спиридон Михайлов ĕçлеме тытăнать. Унăн чылай статьисем 1850—1861 çулсенче „Казанские губернские ведомости" ятлă хаçатра пичетленеççĕ. Вăл этнографилле статьясем те, калавсем те чылай çырать, чăваш фольклорне пуçтарать. Унăн „Чувашская свадьба" (1852 ç.), „Чувашские разговоры и сказки" (1853 ç.) „Злополучный сын", „Разговор на постоялом дворе", „Хитрая кошка" т. ыт. произведенийĕсене, вулакансем

çеç мар, вырăссен пысăк учёнăйĕсем, академиксем тĕ асăрхаççĕ. Спиридон Михайлов, Чикмери земски суд çумĕнче тăлмач пулса ĕçленĕ чăваш çынни, Хусан кĕпĕрнинчи статистика комитечĕн тата Императорски географи обществин член-сотрудникĕ пулса тăрать, хăйĕн паха ĕçĕсемшĕн вăл кĕмĕл медаль илме те тивĕçлĕ пулать.

С. Михайлов хăйĕн статьисемпе калавĕсене вырăс чĕлхипе çырнă, чăваш фольклорĕнчен илнĕ япаласене те вырăсла çырулăхпах çырса хăварнă. С. Михайлов произведенийĕсене чăваш халăх массийĕ ку таранччен пĕлмест-ха.

И. Я. Яковлев Чĕмпĕрти (Ульяновскри) чăваш шкулне уçсан тата чăваш алфавитне йĕркелесе кăларнă хыççăн, 1880-мĕш çулсем тĕлнелле кăна, чăваш интеллигенчĕсем хушшинче чăваш çырулăхĕ тĕлĕшпе хускану пуçланни сисĕнме пуçлать. Чăвашла „Букварь" тухать. И. Н. Юркин (Юрка Иванĕ) тăван чĕлхепе хаçат кăларасшăн тăрăшса çӳрет. Анчах патша чиновникĕсем ăна хаçат кăларма памаççĕ.

Пĕр хускалнă юхăм малаллах шăвать. Тарăхса çитнĕ Юркин, произведенисене ниçта пичетлеме çук пулсан та, калав хыççăн калав çырать, вĕсене хăй аллипе темиçешер экземплярăн çырса халăх хушшине салатать. Оригиналлă произведенисем çырнипе пĕрлех, ырми-канми ĕçлекен Юркин чăваш фольклорне те пуçтарать.

Царевококшайск (халĕ Йошкар-Ола) хулинче шкул инспекторĕ пулса ĕçленĕ М. Ф. Федоров, „Калевала" евĕрлĕ анлă эпос çырма пуçласа, унăн „Арçури" ятлă сыпăкне çырса хурать. „Арçури" пилĕк-ултă çул хушшинче алçырăвĕсем тăрăх шкулсене çитет, халăх хушшине саланса, фольклор произведенийĕ пек пулса тăрать. Атăл çинче бурлакра ĕçлекен чăвашсем канна вăхăтсенче пĕрне-пĕри Лавраç пиччен, Карчăк Микулин, Энтрин хĕн-хурлă пурăнăçĕ çинчен кала-кала параççĕ. Авторĕ вилсен 4—5 çултан çеç „Арсури" чăвашсен тин кăна пуçланнă литературине кĕрет. (Пĕрремĕш хут вăл 1908 çулта „Сказки и предания чуваш" ятлă кĕнекере пичетленсе тухать. Унта авторĕн ятне кăтартман).

Çак ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче те, Хусанта та вырăсларан куçарнă кĕнекесем пичетленсе тухаççĕ. Вĕсенчен 75 проценчĕ тĕн (религи) çинчен калакан, чиркӳ пурăнăçĕ çинчен вĕрентекен кĕнекесем

шутланаççĕ. Пăт-пат кăна кăларкалана календарьсенчĕ, букварьсенче е сайра-хутран кăларнă уйрăм кĕнекесенче тăван чĕлхепе çырнă сăвăсем, калавсем, юмахсем тухкалаççĕ.

Чăваш литературин пирвайхи калчисем уйрăмăнах вырăссен малтанхи революцийĕ (1905—07 çç.) вăхăтĕнчен пуçласа тин палăрмаллах ÿссе пыма тытăнаççĕ.

1906 çулăн пуçламăшĕнче Хусанта чăвашла хаçат — „Хыпар" тухма тытăнать. Унччен маларах çав хаçата наборлакан типографине чăвашсен поэчĕ-революционерĕ Тайăр Тимкки пырса кĕрет. Редакцире ĕçлеме Чĕмпĕртен М. Ф. Акимов куçса пырать.

Пĕр çулталăк çурă хушшинчех ун страницисенче Тайăр Тимккин çулăмлă сăввисем тата „Пирĕн ялта пур пуян", „Тĕлĕнмелле", „Ялта", „Хальхи пурăнăç", „Тав" пек пур енчен те пулса çитнĕ произведенисем чылай пичетленсе тухаççĕ.

„Хыпар" революциллĕ орган пулман. Çапах та ăна цензура хытă хĕстернĕ. Çапла вара, çак легально тухса тăракан хаçатра та вăл вăхăтра илемлĕ литература произведенийĕсене пичетлесе кăларма питĕ хĕн пулнă. Акă мĕн çырать „Хыпар" хаçат хăйне патша чиновникĕсем хĕсĕрлени çинчен:

„Хаçата тĕрлĕ енчен пин куç пăхать. Унта мĕн тунине, мĕн çырнине, епле çырнине, кам çырнине тĕрлĕ енчен тĕрлĕ çын сыхласа выртать. Хаçата мĕн çырнине пăхакан чиновник (цензор) та, полицейски те, уретник та, пуп та, — пурте хытă астуса тăраççĕ... Хура-халăх начар пурăнăçĕ çинчен тĕрĕс каласа çырнине вăл юратасшăн мар. Çапăлпа та çав япаласем çинчен татса çырсан, вăл ăна та хуратса пăрахать... Çавăнпа епле те пулсан, халăх пурăнăçĕ çинчен хĕсĕне-хĕсĕне те пулин, çырас пулать... Цензор хăйĕн ĕçне пит тăрăшса тăвать.. Цензор ĕçĕпе çапла „Хыпарта" шурă вырăн та, ăнланмалла мар шухăш та, ĕретсĕр сăмахсем те час часах пулаççĕ. („Хыпар" 16-мĕш №, 1906 ç.).

Çак хĕсĕк условисене чăтаймасăр, Тайăр Тимкки вăрттăн типографи организацилеме тытăнать. Вăл хăйĕн произведенийĕсене хăй мĕнле çырнă — çавăн пекех пичетлесе кăларса, халăх хушшине салатма ĕмĕтленет.

Ĕçхалăхĕн пурăнăçĕ чăн та йывăр пулнă вара. Тĕслĕхшĕн акă пĕр документ. „Хыпар" хаçатăн 15-мĕш номерĕнче „Тетеш уесĕнчи чăваш пурăнăçĕ" статьяра çапла çыраççĕ:

„Хальхи çак пĕр-ик çул хушшинче пирĕн хресчен пурăнăçĕ питĕ тăвăрланса çитрĕ. Сывмар çын аран-аран кăна сыпăнкаласа

тăрса, ыран пиян вилĕм кĕтсе тăнă пек, хура халăх та пурăнăçне ыран-паян выçă ларассине кĕтсе тăрса ахлатса кăна сывласа пурăнать... Хăйсем акса тунă тыррине-пуллине тахçанах çисе пĕтернĕ. Выльăх-чĕрлĕх апачĕ те тахçанах пĕтнĕ. Пуян çынсенчен иквиç хак парса, пăтне 25 пус кĕтмелле илсе, хăйсен мăйĕсем çине 20—25 пăтлă чулсем çакса ячĕç.. Нумайĕшĕ тата выльăхсене çурма хакпа сутса ярса, халĕ ĕнтĕ пĕр курка сĕт-турăх курмасăрах типсе хăрса пурăнаççĕ. Çитменнине тата çĕрулми (паранкă, кантук) нумайĕшин пĕтнĕ... Çуртри акас вăхăт çитрĕ. Анчах нумайĕшĕ анисене те тара парса пĕтернĕ, лашисене те сутса янă, вăрлăхĕ те çук...

Улăм çук пирки тата кăçал хутма та пит хĕсĕк килчĕ, çурма анчах хуткаласа пурăнаççĕ. Ак пĕр Архип Алексеев ятлă хресчен пĕтĕм хĕлĕпех 7—8 кунта пĕрре хутса ирттерчĕ. Ачи-пăчисем сивĕ пӳртрех выçлă-тутлă, шăнса-кăвакарса ирттерчĕç. Çавăнпа та калаççĕ çав, хресчен вилличченех ĕçлет те, çапах та виç хăмалăх та тăваймасть. Çапла эпир хамăр ĕмĕре йыттăлă-мачăлла анчах пурăнкаласа ирттеретпĕр".

„Хыпар" хаçатăн 1907 çулхи 5-мĕш номерĕнче Шетмĕсем çапла çырать:

„Пару-илӳ çаплах ыйтаççĕ. Пупĕ ыйтать, кантурĕ ыйтать. Нимĕнпе йӳнеçтерме çук. Чиновниксем васкатаççĕ. Ялти чиллă çынсем пуринчен ытла хĕсеççĕ. 1906 çулта çуркунне куланай пит ыйтрĕç. Çуккисем пĕрле пухăнса 100 тенкĕ кивçен илчĕç. Тенкĕ пуçне 18 пус процент тӳлерĕç".

Çаксенчен çав вăхăтри чăваш хресченĕн пурăнăçĕ епле йывăр пулни питех те аван курăнать ĕнтĕ. Çавăнпа та ун чухне „Хыпар" хаçатра пичетленсе тухнă сăвăсемпе калавсем пурте чăваш хресченĕн пурăнăçĕ çав тери хĕсĕкки çинчен çеç калаççĕ.

Тайăр Тимкки те, Акимов та, «Тăван ялсем—Сергей» те, Юлташ тесе алă пусакан писатель те—пурте çак ыйтусенех хускатаççĕ: çĕр сахал, пурăнăç хĕсĕк, тӳлевсем йывăр...

„Капла пурăнма майĕ çук!" текен кĕвĕ çеç илтĕнет вĕсен творчествинче.

Тайăр Тимкки уççăнах восстани тума чĕнет:

„Çитĕ пире тертленме!
Пурте пĕрле пухăнар.
Тĕрлĕ харам пырссне,
Ĕнсе çинчен пăрахар!

тет вăл „Шухăш" ятлă сăввинче.

«Тăван ялсем—Сергей» те çав шухăш патнех пырса тухать („Ялта" сăввинче).

1905—07 çулсенчи революци хыççăн чăваш литературин классикĕ К. В. Иванов çырма тытăнать. „Вăйли

çук та этемрен!"—тет вăл хăюллăн. К. Ивановăн пĕтĕм творчестви пусмăрти халăха тата чуралăхри чăваш хĕрарăмне ирĕке кăларассишĕн кĕрешме чĕнсе янăрать.

Н. И. Шелепи хайĕн малтанхи сăввинче ун чухнехи пурăнăç йĕркине, патшапа унăн тарçисен—помещиксемпе капиталистсен эксплоатациллĕ йĕркине юн ĕçсе выртакан пысăк çĕлен образĕ урлă кăтартса парать:

Тухса выртнă çĕр çине
Çĕр пысăккĕш пĕр çĕлен.
Çĕлен ури пĕртте çук,
Çĕлен çитмен çĕр те çук;
Çакă çĕрĕн çийĕнче
Çĕлен сăхман çын та çук.

Революци çĕнтерессе поэт çирĕппĕн шанса тăрать:

Сĕлен пĕрре вилĕ-ха,
Ĕмĕрлĕхе пĕтĕ-ха...
Кайăк (ирĕклĕх. – *Сост.*) часрах килинччĕ,
Çĕлене вĕлеринччĕ...

Анчах 1915 çулта пичетлесе кăларнă „Çарăмсанпа Хăнтăрçа“ поэминче Н. И. Шелепи хресчен пурăнăçне идеализацилеме пăхать. Хресченсем унта кунĕн-çĕрĕн, сăвĕн-хĕлĕн савăнса та ташласа пурăнаççĕ. Нимĕнле йывăрлăх та, класс кĕрешĕвĕ те курăнмасть. Т. К. Кириллов çырнă „Тырă пулнă çул“ поэма çак туртăма тата та ытларах тарăнлатать.

Класс кĕрешĕвĕ вăйланнă тапхăрта аталаннă чăваш литературинчех реакци майлă, пуринчен ытла миссионерсен шухăшĕ еннелле çаптаракан произведенисем тухнине те куратпăр. („О боге, творце вселенной, промыслителе и спасителе человека“, „Привет чувашина своему духовному отцу“, „1861 çулхи манифест çинчен хунă юрă“ тата ытти те). Çапах та ĕççыннисене малалла туртакан, революци еннелле йыхăракан произведенисем ытларах пулни çак хрестоматие кĕнĕ произведенисенчен лайăх курăнать.

Совет саманинче сахалтарах пичетленнĕ писательсенчен Т. К. Кириллов творчестви интереслĕ. Вырăссен пĕрремĕш революцийĕ умĕн çырнă „Тырă пулнă çул“ поэмипе ытти хăшпĕр миссионерла произведенисемсĕр пуçне, унăн патриотизмла сăвăсем те пит нумай. Ку чăн иккенне пĕлме Кирилловăн „1812 çулхи вăрçă çинчен хывнă юррисене“ кăна вуласа пăхмалла И. Н. Юркинăн „Урине“ ятлă калавĕ, Т. К. Кирилловăн „Хресчен хайĕн ĕçĕ çинчен хывнă юрăсăм“ поэми чăваш литературинче пĕрремĕш хут ĕç процесне сăнласа параççĕ.

Турхан çырнӑ „Варуççи“ поэма хӑйӗн содержанийӗпе К. В. Иванов çырнӑ „Нарспи“ поэмӑна аса илтерет. Çак икӗ поэма хушшинче форма енчен те пӗрлӗхсем пур

Вырӑс писателӗсен произведенийӗсене чӑвашла куçарас ӗç те 1905—07 çулсенчи революци тапхӑрӗнче кӑна хускалма тытӑннӑ. Уйрӑм кӗнекепе тухнӑ „Нуша“ (Н. Д. Телешов çырнӑ, М. Ф. Акимов куçарнӑ) калав, „Хыпар“ страницисенче пичетленнӗ: „Çурта çунса пӗтрӗ“, Салтыков—Щедринӑн „Мункун каç“, Л. Толстойӑн „Корней Васильев“, Кореньков куçарнӑ И. А. Крылов баçнисем, Короленкӑн „Вут куçӗ“—чаплӑ вырӑс литературин çӳлӗ анлӑшӗнчен чӑваша куранна пирвайхи „вут куçӗсем“ пулаççӗ. Çакӑн хыççӑн вара, пуринчен ытларах 1908—1912 çулсенче, вырӑсларан куçарнӑ япаласем тухма тытӑнаççӗ. Вӗсем хушшинче: К. В. Иванов куçарнӑ „Калашник хуçа çинчен хунӑ юрӑ“, „Пирӗшти“, „Парӑс“, „Хумсемпе çынсем“, „Чулту“, „Тусен тӑррисем“, „Пурӑнӑç курки“, „Тӗрме çынни“ т. ыт. те, Аксаковӑн „Хӗрлӗ чечек“, Андерсенӑн „Акӑшсем“ ятлӑ халлапӗсем; Л. Толстойӑн шкулта вуламалли пӗрремӗшпе иккӗмӗш тата виççӗмӗшпе тӑваттӑмӗш кӗнекисем (вӗсене И. С. Шатаев куçарнӑ), А. С. Пушкинӑн „Полтава“ поэми (Г. К. Тихонов куçарнӑ) т. ыт. те.

Ку хрестоматин тӗллевӗ—вӑтам шкулти вӗренекенсемпе педагогика институтӗнчи студентсене чӑвашсен революцичченхи литературипе анлӑраххӑн паллаштарасси пулса тӑрать. Халиччен хи хрестоматисенче (уйрӑмӑнах 8-мӗш класс валли кӑларнӑ хрестоматире) революцичченхи писательсенчен пурӗ те М. Ф. Федоровпа К. В. Иванов произведенийӗсене кӑна пичетленӗ. Юлашки çулсенче тата тепӗр çӗнӗ ят—Тайӑр Тимкки хутшӑнчӗ. С. Михайлов, И. Н. Юркин, Турхан, Тӑван ялсем Сергей, Ваççа Аниççи, Юлташ т. ыт. чылай писательсен произведенийӗсене вара вӗренекенсем кӑна мар, учительсем хӑйсем те тупса вулама пултарайман. Вырӑн сахал пулнипе ку хрестоматие эпир К. В. Иванов çырнисенчен тата куçарнисенчен хӑшпӗр вакӑрах сӑввисене кӑна кӗртрӗмӗр. Унӑн ытти произведенийӗсене кирек хӑçан та çӑмӑллӑнах тупса вулама пулать.

Писательсен произведенийӗсене суйласа илнӗ чух кӗнекене пухса хатӗрлекенсем вӑл произведени хӑй вӑхӑтӗнче мӗнле вырӑн йышӑнса тӑнине асра тытнӑ. Паянхи куçпа пӑхсан, тен вӑл произведенисенчен хӑш-

пĕрисем кивелнĕ пек е „пиçсех çитмен“ пек туйăнма пултарĕç. Кун пирки эпир В. И. Ленинăн „К характеристике экономического романтизма“ текен статьинче каланă сăмахĕсене асра тытрăмăр. Вăл унта çапла калать: „Исторические заслуги судятся не по тому, что не дали исторические деятели сравнительно с современными требованиями, а по тому, что они дали нового, сравнительно со своими предшественниками“. (Собр. соч., том 2, стр. 51).

Писательсен биографийĕсене çырнă чух эпир вăл писателĕн мĕнле кĕнекесем тухнине те асăнсах хăвартăмăр.

Произведенисем çĕнĕ орфографипе пичетленеççĕ. Таван ялсем Сергей çырнă „Шăпчăк юррине“ кăштах кĕскетнĕ.

Кĕнекене пухса хатĕрлекенсем С. М. Михайлов произведенийĕсене тупма пулăшнăшăн Чăвашсен наукăпа тĕпчев институчĕн директорне П. Г. Григорьев юлташа тав тăваççĕ.

*Хветĕр Уяр.*

## С. М. МИХАЙЛОВ

(1821—1861)

Спиридон Михайлович Михайлов 1821 ç. Чикме уезднe кĕр.кен Юнкăпуç ялĕнче, вăтам хресчен çемьинче çуралнă. С. М. Михайлов ашшĕн -Янтуш Михалккин—5 ывăл та 3 хĕр пулнă. Спиридон 8 çула кайсан, 1829 ç. Чикме хулинчи Михеев хушаматлă чăваш кулци ăна ĕçе вĕретме хăй патне илнĕ. Ун патĕнче тĕрлĕ вак-тĕвек ĕçсем тунă хушăрах Спиридон вĕренме тытăннă. Хуçи вилсен, кантурта ĕçлесе пурăннă. Малтанах хура ĕçсем тунă: кантурне хутма вутă-шанкăсем йăтнă, хутсемпе унта-кунта чупнă т. ыт. те.

1840 ç. С. М. Михайлова Чикме хулинчи земски суд çумĕнче тăлмач пулса ĕçлеме лартнă. Вара вăл мĕн хăй виличченех çав вырăнта ĕçлесе пурăннă.

Спиридон Михайлов кĕнекесем вулама юратнă. Пушă вăхăтсене вăл нĕре те ахаль ирттермен. Çапла тăрăшса, вăл темиçе çул хушшинче Н. М. Карамзин, А. С. Пушкин, М. Ю Лермонтов, Н. В. Гоголь, В. Г. Белинский кĕнекисене вуласа тухнă. Унăн пурăнăçĕ çинчен çыракансем пурте С. М Михайлов шкулсенче мар, хăй тĕллĕн вĕренсех пысăк ученăй пулса кайни çинчен асăнаççĕ.

Судра ĕçленĕ май, С. М. Михайлов халăхăн хĕн-хуртă пурăнăçне сăнанă. Вăл çырма тытăнать. Унăн малтанхи статьи 1852 çулта Хусанта пичетленсе тухать. Ытти статьисем: „О музыке чуваш", „Чувашская свадьба", „Чувашские разговоры и сказки" т. ыт. те „Казанские губернские ведомости" ятлă хаçатра пичетленеççĕ. Хăшпĕр статьисем унăн Мускаври журналсенче те пичетленеççĕ.

С. М. Михайлов вырăссен (Питĕрти) императорски географи обществин тата Хусанти статистика комитечĕн член-сотрудникĕ пулса тăрать, хăйĕн паха ĕçĕсемшĕн Географи обществинчен кĕмĕл медаль илет

С. М. Михайлов статьясемсĕр пуçне калавсем те чылай çырнă. Çак кĕнекере пичетленекен калавĕсенчен пĕринче, „Кил хуçипе калаçни" текеннинче, С. М. Михайлов кантурти тӳре-шарасем—писарьсем, кулаксем, старшинасем, исправниксем—чăваш халăхне мĕнле улталаса, çаратса пурăннине кăтартса парать.

Чăвашсен малтанхи ученăйĕ, писателĕ С. М. Михайлов статьисене те, калавĕсене те вырăсла çырнă.

---

*С. Михайлов*

## ХВАТТЕР ХУÇИПЕ КАЛАÇНИ

Кăçал хĕлле манăн Атăл тăрăшшинчи пĕр кĕпĕрне тăрăх хам ĕçĕмпе иртсе тухмалла пулчĕ. Çавăн чухне эпĕ Атăл хĕррине вырнаçса ларнă пĕр пысăках мар яла кĕрсе çĕр выртса тухрăм. Ку ял çыннисем пурте тенĕ пекех е пулă тытса, е иртен-çӳренсене хваттер ярса

пуранаççĕ. Мана, урампа иртсе пыракансКере, курсассăн, кил хуçисем хайхи, курни-пĕри мана хăйсем патне, кил-çурчĕпе апат-çимĕçĕсене ырла-ырла, хваттере кĕме чĕне пуçларĕç. Мана пуринчен ытла пĕр çĕнĕ çурт кăмăла кайрĕ, вăл тулашĕнчен пăхсан та чипертерех пекчĕ, ăшĕнче те аван пулчĕ: пӳлĕмĕсем таса, ăшă; стенисем çинче йĕри-таврах тĕрлĕ, чылай хитре карттинсем рамкăсем ăшĕнче çакăнса тăраççĕ; кунта тĕрлĕ патша сăнĕ те, иртнĕ вăрçă çапăçăвĕсене кăтартакан ӳкерчĕксем те пурччĕ. Кĕмĕллетсе пĕтернĕ иконсем, стена çинчи часси, сăрланă сĕтел-пукан, сăмавар тата килти ытти чипер ăпăр-тапăр тăрăх шутласан, мана ку кил хуçи чылай тирпейлĕ, йĕркеллĕ çын пек туйăнчĕ. Ăшă та таса пӳлĕмре канса кайма эпĕ хавасах пултăм. Кил хуçи арăмĕ—чылай пуранна хĕрарăм, калаçма ухутаскер, эпĕ хушнипе сăмавар лартма пикенчĕ. Пĕчĕкçеç шухă ачи, çарранскер, пусма кĕпе тăхăнтартнăскер, урайĕнче выляса çӳретчĕ. Чей ĕçнĕ хушăра эпĕ ытахальтен хуçа арăмĕпе калаçма тапратрăм, вăл упăшкасăр пуранине пĕлтĕм. Упăшки хула çынни, мещчен пулнă-мĕн. Упăшки вилсен, унпа пĕрле виçĕ ывăл та виçĕ хĕр тăрса юлнă. Ывăлĕсенчен пĕри, салтака кайса, унтер-офицер пулма та ĕлкĕрнĕ иккен; тепри уйрăлса тухнă; виççĕмĕш-килте хăйпе пĕрле пуранать; анчах эпĕ вĕсем патне хваттере кĕрес умĕн, кӳршисем патне вулăсран арăмĕпе пĕрле клава*) килнĕ май, вăл çавăнта хăнана пек тухса кайнă пулнă.

Хĕрĕсенчен пĕри хăйсен ялнех, хресчене качча кайнă; тепри пĕр салтака качча тухнă пулнă, анчах халĕ çав тери матур, пултаруллă çын пулнăскер, çарта офицер чинĕпе служить тăвать пулать; шухă ачи çав офицер ывăлĕ-мĕн, ашшĕсем ăна кукамăшĕ патне курма килсен вăхăтлăха хăварнă пулнă. Ашшĕ офицер пулнине пĕлсе, ача пĕр май: „Эпĕ те улпут-çке! Эпĕ те улпут!" тесе кăшкăрса савăннă. Кĕçĕн хĕрĕ те—хĕрипраç—клава хăналаннă киле курма кайнă пулнă. Карчăк сăмахлама юратнине кура, эпĕ сăмах майăн вĕсен ял пуранăçĕ çинчен те ыйтса пĕлме шут тытрăм.

— Мĕнле те пулин çĕнĕ хыпар пур-и сирĕн патăрта, асанне? —тесе ыйтатăп карчăкран.

**Карчăк.**—Пулмасăр; пур ĕнтĕ вăл, пур.

---

*) Клава—(голова) пуçлăх.

— Мĕн ара?—тетĕп.

**Карчăк.** — Акă тиексем пирĕн патăрта çамрăксене никрута çырса çӳреççĕ, тет. Çавăнпа нумайĕшĕ хыпăнса ӳкрĕç. Пин çын пуçĕнчен çирĕм çын илмелле, теççĕ, тет.

—Никрутсене пухасси çинчен мĕнле анчăк килсе вĕрсе хăварчĕ вара сире?—тетĕп.

**Карчăк.** — Начальниксем ĕнтĕ, паллах, вулăс клавипе тиексем.

— Суяççĕ вĕсем, асанне; кăçал салтака никама та илмеççĕ, тетĕп. Эпĕ хам аслă пуçлăхсем патĕнче служить туса пурăнатăп, çавăнпа никама та илес çуккине лайăх пĕлетĕп. Кучуҫне, турра шĕкĕр, самана лăпкă тăрать, тетĕп.

**Карчăк.** — Чăн та ара, ачам, кăçал салтака илмĕç-ши вара?—тесе ыйтать ĕненмесĕр.

— Чăн вăл, асанне, улталамастăп; хăть те камран ыйтса пăх, тетĕп.

**Карчăк.** — Çук, ачам, апла мар пуль. Клавапа тиексем кунти хресченсене акăш-макăш хăратса пĕтерчĕç. Мĕн чухлĕ укçа пуçтармарĕç пулĕ вĕсем кунти халăхран, темиçе пин те пулĕ,—тет.

— Мĕн тери айван иккен апла сирĕн çынсем, чипер ыйтса пĕлмесĕрех укçа сĕнеççĕ,—тетĕп.

**Карчăк.** — Хăшпĕрисем хулана та, начальниксем патне çитсе курчĕç те, унта та ыррине илтмен: лешсем те çавнах переççĕ курăнать,—тет.

— Ухмах-мĕн сирĕн мужиксем: вĕсен мошенниксенчен мар, тӳрĕ çынсенчен ыйтса пĕлмелле пулнă, тетĕп. Кăçал, 1859-мĕш çулта, набор пулас çуккине эпĕ лайăх пĕлетĕп, малашне мĕн пуласси вара паллă мар-ха тетĕп.

**Карчăк.** — Çапла ĕнтĕ вăл, ачам, çаплах. Пирĕн клава вара питĕ сыпма юрататъ, арăмĕ те—акă епле чармакланса кайнă: май пур курăнать çав мĕнтен самăрălмашкăн,—тет ылханса.

— Ара, санăн мĕн хăрамалли пур клаваран, асанне; мешчен пуçупа эс ăна пăхăнса тăмастăн вĕт?—тетĕп.

**Карчăк.**—Вăл çаплине çапла та çав, ачам, манăн пĕр кĕрӳ хресчен вĕт, вăл черетре тăрать. Çавăнпа, набор пулсан, унăн шăпа туртмалла пулать,—тет.

— Пурин те укçалла тăрса юлма çук ĕнтĕ, камăн та пулин патшапа тăван çĕршывшăн та тăмалла,—тетĕп эпĕ.

**Карчăк.**—Кĕркунне некрутсене çырса çӳренĕ чухне клава ҫнтан та самаях шăйăрнă пулас, аллă тенке яхăн никак,—тет вăл ӳкĕннĕ пек пулса.

— Ан улталан, тетĕп: карас пулă ан ыйхăлатăр тесе ишсе çӳрет те çăрттан тинĕс шывĕнче. Чылай пулас сирĕн ун йышши ултав?—тесе ыйтатăп карчăкран.

**Карчăк.**—Çитет, тет. Вăрман улпучĕ те ав темĕн чухлĕ вĕшле (пурсуй) йытă усрать. Çав йытăсемпе вара вăл кайăк вырăнне пирĕн сурăхсене тулаттарать,—тет.

— Юрăхсăр ĕç вăл, пуçлăхсене шалăп памалла, тетĕп.

**Карчăк.**—Э, усси пурĕ-пĕр сахал вĕт. Ун çинчен шалăп парсан, вăл вара сана вутăлăх пĕр турат та памасть,—тет.

— Халĕ парать-им вара?—тесе ыйтатăп.

**Карчăк.**—Пире—çук, памасть, хресченсене парать; вĕсем ăна укçа та, сĕлĕ те леçе-леçе параççĕ,—тет.

— Улпут халăхĕ-и кунта сирĕн, ирĕккисем-и?—тесе ыйтатăп.

**Карчăк.**—Пурте ирĕк, чăваш йăхĕ,—тет.

—Чăвашсем шухă халăх мар-им вара?—тетĕп.

**Карчăк**—Ну, тупрăн та шухă çынсене. Ахальтен мар вĕсене—чăваш-йăваш, тенĕ. Укçа вĕсенчен шăйăрмасан, камран шăйăрмалла тата? Кăçал çула тиексем сахал мар калăм пуçтарчĕç вĕсенчен,—тет.

— Мĕншĕн калăм?

**Карчăк.**—Ара, набор пирки суйса. Мĕскĕнсене чисти хăратса пĕтерчĕç те, хăшĕнчен 10 тенкĕ, хăшĕнчен 20, хăшĕнчен 30, хăшĕнчен 50, теприсенчен 100 тенке çитиех сĕвсе илнĕ. Пирĕн клава ломбарла (банка) темиçе пин тенкĕ укçа кайса хывнă тесе ахаль каламаççĕ ĕнтĕ,—тет.

— Кам вара сирĕн клавăр ,çавăн йышшиех чăваш пулĕ вĕт?—тесе ыйтатăп.

**Карчăк.**—Çук çав, ачам, ун йышши чăваш мар, хула мешченĕ пулнăскер; малтан, тиек пулса ĕçленĕ чухне, вăл хресчен йышне çырăннă та, чăваш ялне куçнă, вара клава та пулса тăнă; пурне те вара ĕлĕкхинчен ытла ултала пуçларĕ. Малтан клавасем чăвашчĕ, çынсене каплах лартма пĕлмесчĕç; ăçтан пĕлтĕр чăваш çав тери ултама,—тет.

— Кун йышши клавасем пур-и тата сирĕн?—тетĕп.

**Карчăк.**—Пулмасăр. Юратаççĕ вĕт ун йышши плутсене. Кучух чăвашсем хушшинче пур çĕрте те çавăн

йышши, чӗрӗ ҫынтан тирне сӗвме пултаракан клавасене лартса пӗтернӗ. Мӗскӗн чӑвашсене вӗсенчен пурӑнма ҫук. Усал ӗҫ шухӑшласа кӑларас тӗлӗшӗнчен вӗсем ҫав тери чее. Акӑ, хӑть пирӗн клавана Федор Ивановича илер; клавара вӑл пӗр пилӗк ҫул пурӑнать те акӑ, куппана тухса, вӑрманпа суттума тытӑнать*),—тет.

— Вӑрманпа суттума усӑллӑ-им вара сирӗн?—тетӗп.

**Карчӑк.**— Усӑллӑ пулмасӑр. Хысна вӑрманӗсене купцасем питӗ пӗтереҫҫӗ, вӑрман улпучӗсем вӗсене пӗртте чармаҫҫӗ,—тет.

Манӑн карчӑкпа тата та калаҫма кӑмӑл пурччӗ, ҫыврас киле пуҫларӗ. Ирхине вара, ҫутӑлсанах, Атӑл тӑрӑх малалла анса кайрӑм; клавасем ҫинчен, тиексем ҫинчен, вӑрман улпучӗсем ҫинчен ҫул тӑрӑшшӗпе шухӑшласа пытӑм.

Декабрӗн 12-мӗшӗ, 1857 ҫ.

## ЧЕЕ КУШАК

Эпӗ сире пӗр мыскараллӑ ӗҫ ҫинчен каласа парам.

Пӗр мужикӗн икӗ ӗне пулнӑ. Пӗр ӗни унӑн тем пирки чирлесе ӳкнӗ. Мужик, нумай шухӑшласа тӑмасӑрах, ӗнине аш-какайпа сутӑ тӑвакан патне ҫавӑтса кайнӑ. Чирлӗ ӗнене вунӑ тенке сутнӑ та, килне таврӑнса хут укҫана ҫӳлӗк ҫинче ларакан тӑм чӳлмеке хунӑ. Ирхине арӑмӗ, укҫине упӑшки ӑҫта хунине пӗлменскер, ӗне суса кӗнӗ те, сӗтне хайхи чӳлмеке шавлаттарнӑ.

— Пӗтертӗн укҫана,—тенӗ упӑшки.

Вара вӗсем васкаса сӗтне урӑх ҫӗре пушатнӑ та йӗпеннӗ укҫине хӑйӑ ҫине типме ҫакнӑ.

Ҫаксене паҫӑртанпах сӑнаса ларакан кушак, сӗтлӗ укҫана кап хыпса илнӗ те кар тишнелле тухса вирхӗннӗ. Хуҫисем—ун хыҫҫӑн. Анчах чӑрсӑр кушак аҫи, вӗсем хӑваласа ҫитсе туртса иллеччен, укҫана чӑмласа яма та ӗлкӗрнӗ. Тӗрӗс те тунӑ: ҫапа пӗлмен пушӑ хуҫине хӑйнех пырса тивнӗ. Чирлӗ ӗнине сутса, мужик ҫынсене улталасшӑн пулнӑ та—хӑй улталаннӑ.

1858.

---

*) „Былое и думы" кӗнекере А. И. Герцен ҫапла ҫырать: „Настоящий клад для земской полиции это вотяки, мордва, чуваши: народ жалкий, робкий.. Исправники дают двойной окуп за назначение их в уезды, населенные финнами.

Полиция и чиновники делают невероятные вещи с этими бедняками."

„Былое и думы". 1861 ҫ.

## М. Ф. ФЕДОРОВ

(1848—1904)

Михаил Федорович Федоров 1848 çулта Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хурапха ялĕнче чухăн хресчен çемьинче çуралнă. Çемьи кĕçех тĕрлĕ çĕре саланса пĕтнĕ. Вунултă çула çитсен, М. Ф. Шĕнерпуç шкулне вĕренме кĕнĕ. Унта вăл хут та вĕреннĕ, сторож вырăнĕнче те ĕçленĕ. Ялти шкултан тухсан, М. Ф. Федоров вĕренме Хусана кайнă. 1879 çулхи çуркунне вăл, учительсене хатĕрлекен институтран вĕренсе тухнă та ĕçлеме Шупашкара кайнă. Шупашкар хулинчи училищере М. Ф. вун икĕ çул хушши вырăс чĕлхи тата гимнастика вĕрентсе пурăннă. 1891 çул ăна Царевококшайск (халĕ Йошкар-Ола) хулине куçарнă. М. Ф. унта та ачасене вĕрентнĕ тата инспектор пулса шкулсене пăхса çÿренĕ.

М. Ф. Федоров хăш çулта, ăçта, мĕнле вилнине татăклăн пĕлмеççĕ. Пĕрисем вăл 1904 çулта, теприсем 1905 çулта вилнĕ пулĕ, теççĕ.

„Арçури" балладăна М. Ф. 1890—91 çулсенче çырнă. „Арçури" часах алçырăвĕсем халлĕнех пĕтĕм чăваш хушшине саланнă. Пичетлесе ăна 1908 çулта тин, авторĕ вилсен ик-виçĕ çултан, Чĕмпĕрти Чăваш шкулĕнче тухнă „Сказки и предания чуваш" кĕнекере пичетлесе кăларнă.

---

*М. Ф. Федоров*

## АРÇУРИ

Тухман çын тухсан,
Тăман тухать, тет.

Хĕвел ансан Хĕветĕр
(Эсир ăна пĕлетĕр)
Хĕвне çăкăр чикрĕ те,
Лаша кÿлсе ларчĕ те,
Тухрĕ кайрĕ вăрмана
Хăрăк турат пуçтарма.
Карчăк Микули каймарĕ,
Ăна юлташ пулмарĕ:
Микул турра пуççапма
Ишекелле каймалла, терĕ;
Тÿр кĕллине тÿрлетме
Тиха тытса пусмалла, терĕ.
Арăм сывмар, суя мар,
Хĕл-çăвĕпех хĕн курать, терĕ.
Киремесем килте çук,
Лавраç пичче лава кайнă,
Салтак ачи пама кайнă.

Хĕвел тухăçĕ хĕрелет,
Ыр çанталăк пăсăлать.
Хура пĕлĕтсем чупаççĕ,
Çăва патĕнчен тухаççĕ,
Хăяматалла каяççĕ.
Хура вăрман хумханать,
Хура лаша хартлатать.
— Хура лаша, ан хартлат,
Хурамаран ма хăран?
Акă ĕнтĕ, ачсемĕр,
Аран-аран уткалать:
Ыраш улăм çитерсен
Ыр выльăх та ывăнать.
Турткалаймасть, тухатмĕш,
Чуман лаша пек чупать.
Çуркуннепе çул усал,
Сулахайра сулнăк пур,
Сылтăм енче çырма пур.
Хура утпа иксĕмĕр
Çырма хĕрне çитрĕмĕр.
Тăвар-варĕ—тăв-айкки,
Ăçта пур-ши сĕвекки?
Йĕп чиксе те куç курмасть.
Те арçури, те шуйттан,
Те ыр-усал, те вăр-хурах,
Те çул маяк, тем амак?
Чун шикленет, ăш вăркать,
Пуç тӳпинчен сĕрĕм тухать.
Шĕвик! шăхăрать çын пекех,
Мăкăл-макăл юмахлать,
Шăтăр-шатăр тутарать;
Путь ухмаххи тапранать,
Юмах ярать, юптарать,
Йанăш çулпа чуптарать.
Чике тăрăшшĕ ларттарать.
Акă ĕнтĕ, пăх ĕнтĕ:
Çавра çил пек çаврăнса,
Çĕмĕртсене çĕмĕрсе,
Сикрĕ тухрĕ çырмаран,
Пĕкке хуçрĕ çурмаран,—
Ват çын пекех шур сухаллă,
Качака пек мăйракаллă,

Ури вăрăм, куçĕ чармак,
Урхас-Кушăк вăрманĕнче
Урлă-пирлĕ уткалать,
Урнă йыт пек тулашать:
Вĕрет, сурать, пусмăрлать,
Кăтăкласа вĕлерет.
Лаша кӳлсе ларать те,
Тутар ямшăк пулать те,
Çĕр çĕмĕрсе чуптарать,
Çĕр чĕтретсе кăшкăрать...
— Ах, турă, çырлах, турă, ан пăрах,
Ху этемне ху упрах!
Пире пăхан Пихампар,
Ху йыттуна хăвах чар.
Çултах вилес пулĕ-и-ха,
Киле çитсе тăрасчĕ,
Ыр вилĕмпе вилесчĕ:
Йӳтечченех пурнасчĕ,
Тӳшек çинче вилесчĕ.
Ыр вилĕмпе вилсессĕн,
Кушак çури мар тесе,
Хуллен-хуллен ерипе,
Авалхи çынсен йăлипе
Тирпейлесе пытарĕç.
Пуян вилет—мул юлать,
Ыр çын вилет—ят юлать,
Эпĕ вилсен мĕн юлать?
Хуньăм хĕрĕ хура хĕр,
Хурлăх курма вăл юлать.
Ачам-пăчам пит айван.
Халиччен суха тытайман.
Кам ачашлĕ ачама?
Кам хĕрхенĕ хĕрĕме?
Тăлăх-турат пуличчен,
Хăрăк турат пулас та,
Кĕрхи çилпе вĕçсе ӳкес,
Çурхи шывпа юхса каяс,
Арман пĕвине пĕвенес;

---

Арман патне çитсессĕн
Аран юлчĕ арçури.
Тарăн вара çитсессĕн
Таркăн салтак пулчĕ кайрĕ,

Виснер хирне ҫитсессĕн
Вилнĕ карчăк пулчĕ выртрĕ,
Ҫурма ҫула ҫитсессĕн
Ҫурхи сурăх пулчĕ кайрĕ.
Хайхи-майхи арҫури
Кайран-кая юлчĕ те,
Анчăк ҫури пулчĕ те,
Арман патне ҫитсессĕн
Арман айне кĕрех кайрĕ.

---

Лапка-лапка юр ҫăвать,
Мулкач сикет—йĕр тăвать.
— Хура лаша, ан хартлат:
Эпир ĕнтĕ иксĕмĕр
Ителмесрен иртрĕмĕр,
Чипер уя тухрăмăр;
Ҫул чиперех пулмин те,
Чун шикленми пулчĕ ĕнтĕ.
Чипер уйран иртсессĕн
Пирĕн вăрман пит чипер:
Йăва ўснĕ йăвăҫсем,
Питĕ вăрăм чăрăшсем,
Пăхсан—ҫĕлĕк ўкмелле,
Кассан часах ўкмелле.
Пилĕк юплĕ пилеш пур,
Сенĕк тума пит селĕм;
Хурăн шурта хурама —
Турă ўстернĕ туратсăр,
Турта тума вăл юрать:
Ват юмана ҫил ватнă,
Ҫĕмĕртсене ҫĕмĕрнĕ.
Мĕнтен пулнă арҫури,
Ял хыҫĕнчи—ҫырмари?
Асаттесем астăваҫҫĕ:
Арҫынтанах пулнă, тет,
Энтри ятлă ҫынтан, тет.
Якур пичче ҫулпала
Пушкăрт лаши кўлнĕ те,
Те ҫуркунне, те ҫулла,
Яртлаттарса чуптарнă.
Каҫ пулттипе сиккипе
Ыраш пусси хĕррипе
Ҫавра ҫил пек пынă чух,

Пӗр ӑстарик вӑрманта
Чӗлӗм чӗртме тапратнӑ;
Куҫ витӗрех мар пирки
Пыран ута курмасӑр
Йытӑ вилӗмпе вилнӗ, тет.
Леш ухмаххи пулнӑ, тет.
Мӗн шыраса каҫпала
Сав таранччен ҫӳрес-ши?
Йытӑ урипе утиччен,
Сивӗре шӑнса ҫӳриччен,
Лаша кӳлсе ларас та,
Ним хуйхи те пулас мар;
Ҫитмен пурнӑҫ пирки-ҫке
Ҫын куҫӗнчен пӑхатпӑр,
Ҫиме ҫӑкӑр ҫитмесен
Пӑтавка йӑтса каятпӑр.
Хырӑҫ-марӑҫ памашкӑн
Хушпу саклат хыватпӑр,
Ана тара паратпӑр,
Ыраш калчи сутатпӑр,
Кайран юра еретпӗр,
Хутаҫ ҫакса каятпӑр,
Ыйткаласа ҫӳретпӗр.

---

Энтри кантри—йӗм кантри,
Пушӑт чӗлли, хуп татӑкки:
Ялан ялтан тухсассӑн,
Ҫырма урлӑ каҫсассӑн,
Тапхӑр-тапхӑр тапранать;
Ҫӗнӗ уйӑха кӗрсессӗн
Ҫӗр чӗтретсе кӑшкӑрать.
Хура халӑха хӑратать.

1892.

# И. Н. ЮРКИН

(1863—1943)

Иван Николаевич Юркин 1863 çулта Пăва уездĕнчи Пÿркел ялĕнче çуралнă (халĕ Тутар республики). Ялти шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме кĕнĕ. Ашшĕ-амăшĕсем чухăн пулнă пирки Иван Николаевич унта нумаях вĕренеймест, ăна кăларса ярaççĕ. Вĕренме ĕмĕтленекен çамрăк Хусана куçса, учительсене хатĕрлекен семинарине кĕрет. И. Н. телейĕ кунта та Чĕмпĕрти пекех пулать. Ăна Хусанти семинарирен те часах кăларса яраççĕ. И. Н. ялне таврăнать те темиçе çул хушши хресчен ĕçне ĕçлесе пурăнать.

1882 çулта Юркин Чĕмпĕр уездĕнчи Аслă Турхан приказне ĕçлеме кĕрет, 1886 çул вĕçнелле Чĕмпĕрти Акциз управленине куçать. Унта вара вăл мĕн ватăличченех—40 çул хушши ĕçлесе пурăнать.

И. Н. çамрăклах чăваш халăхĕ хушшинче сăмах вĕççĕн çÿрекен произведенисене: юмахсене, юрăсене, ваттисен сăмахĕсене çырса илме тытăннă. Хăйĕн ĕмĕрĕ тăршшĕнче вăл 60 пин йĕрке ытла тĕрлĕ сăвă-юрăсем, калавсем, пословицăсемпе поговоркăсем çырса илнĕ. И. Н. алçырăвĕсем Мускаври этнографи музейĕнче те, Хусанта та, Шупашкарти тĕпчев институтĕнче те, уйрăм çынсен аллисенче те питĕ нумай.

Фольклор произведенийĕсене пухнисĕр пуçне, И. Н. Юркин оригиналлă произведенисем те, статьясем те пайтах çырнă. Вĕсенчен хăшĕ уйрăм кĕнекен, хăшĕ 1905—06 çулсенче „Хыпар" хаçатра пичетленсе тухнă. Чылайĕшĕ тата алçыру вĕççĕнех халăх хушшине саланса, çухалса пĕтнĕ. Çав çухалнă алçырăвĕсем пирки 1906 çулта И. Н. „Хыпар" хаçатра „Ыйту-шыру" ятлă статья пичетлесе кăларнă. Акă мĕн çырать вăл çак статьяра:

„Ĕлĕк эпĕ кĕнекесем валли чăвашла нумай çырсаттăм, çав çырнă хутсене вăл вăхăтра укçа çук пирки халиччен стаппа çаптараймасăр тăтăм. Эпĕ çапла кĕнекесем валли çырса хăтланнине пĕле-тăран юлташăмсем, тус-йышăмсем, пĕлекен çыннăмсем çав çырнă хутсене вуласа пăхма тесе илсе, пăхăсăн—халиччен пĕрне те мана калле тавăрмарĕç... Вăл çырусем кам-кам патĕнчине эпĕ хам пĕртте пĕлместĕп..." тесе çырать („Хыпар" № 7, 1906 ç). Унта И. Н. çакăн пек произведенисене асăнать: „Лирические произведения (народные) песни" (1888 ç.), „Различие однозначущих слов у низовых и верховых чуваш" (1890 ç.) „Юмахсем", „Ваттисенĕн сăмахĕсем", „Илья паттăр" (1889 ç.), „Этемĕн пырĕ тутă та куçĕсем выçă" (1889 ç.), „Истинное происшествие", „Мул" (1889 ç.), „Чувашские песни..." (1891 ç.), „Песни Чебоксарского уезда", „Чăвашсенĕн тĕнĕ", „Сборник чувашских песен" т. ыт. те.

И. Н. Юркинăн уйрăммăн пичетленсе тухнă кĕнекисем çаксем: „Халлапсем" (Хусан; 1907 ç.), „Шÿтсем" (Хусан, 1907 ç), „Юмахсем" (Хусан, 1907 ç), „Ваттисен сăмахĕсем" (Хусан, 1907 ç), „Урине" (Чĕмпĕр), „Хăраманскер" (Сенгилей, 1917 ç.), „Вĕреннĕ çынсем" (Чĕмпĕр, 1918 ç.). „Хулари кивĕ масар çинче" (Чĕмпĕр, 1918ç .) т. ыт, те.

И. Н. çырнисенчен лайăххăраххисене суйласа илсе халиччен пĕр сборник те кăларман-ха.

*Ив. Юркин*

# ВИЧӖКӖН ШӐЛЛӐ ШӐШИ.

## Хайла

Тӗнчере тӗлӗнмелле: пуян ҫынсенчен ухмаххи нумай пулать, ҫуккисенчен—ӑсли.

Пӗр ялти юрлӑ ҫын пит ӑслӑ пулнӑ. Пухӑва-мӗне тухса калаҫа пуҫласан, ӑнах: эсӗ пӗр япала та пӗлместӗн, ухмах, тесе ҫӑвар та уҫтарман. Унӑнне ҫапла темӗн тӗрлӗ ӑслӑ сӑмахӗсене те пӗри те сума суман пирки, хӑш чухне вӑл тарӑхса вӗсене темӗн тӑвасса ҫитнӗ. Пайтах вӑхӑт иртсен, ҫак ҫук ҫынни, ватӑлмалӑх кунӗнче, телейне хирӗҫ пуйса кайрӗ, тет. Пухӑва тухсан-тусан, хайхине пуянсем хутлӑхне сӗтел хушшине кӗрсе ларма вырӑн та пара пуҫларӗҫ, тет. Пуянӗсем те унпа килӗштерсе калаҫса лара пуҫларӗҫ, тет. Ытла аван ҫапла калаҫса ларнӑ чухне, ҫак ҫӗнӗ пуянӗ, ӗлӗк хайне леш пуянӗсем сума суманнине асне илсен, вӗсенӗн айван ӑсӗсене ыттисене пӗлтересшӗн, хайласа калаҫма тытӑнчӗ, тет: „Итлӗр халӗ, стариксем, кӗҫӗр пирӗн килте тӗлӗнмелле ӗҫ пулчӗ", тесе. Лешсем те—„Епле, мӗнле ӗҫ?" тесе ыйтаҫҫӗ, тет, унӑн куҫӗнчен чӑрр! пӑхса. „Мӗнийӗ-мӗнӗ, кӗҫӗр пирӗн пӗр ҫатмана шӑшисем ҫисе шӑтарнӑ", тет. Хӑй ҫумӗнче ларакан пуянӗсем: „Пулӗ те ҫав, ах, вӑл епле апла, пит вичӗкӗн шӑллӑ пулнӑ пулӗ шӑшийӗ?" тесе тӗлӗне пуҫларӗҫ, тет. Ӗлӗк хӑй вырӑнӗнче алӑк патӗнчерех лараканнисем, мӗскӗнсем, шанмасӑр: „Темӗн, вӑл япала чӑн мар-тӑр, суя-тӑр", тесе лараҫҫӗ, тет. „Чӑн", тесе калать тет ҫӗнӗ пуянӗ, вӗсене шантаран пек пулса. Хӑйпе пӗрле юнашар ларакан пуянӗсем те: „Чӑн пулмасан, кӑлӑхах калаҫмӗччӗ", тесе ӗнентерме тӑрӑшаҫҫӗ, тет. Суя сӑмахне чисти чӑна кӑларсан кӑна, ку ҫӗнӗ пуянӗ, ҫукрах пур пулнӑскер, каллех халӑх енне ҫаврӑнса: „Итлӗр халӗ, ватӑсем, пуянсем, ӗлӗк эпӗ ҫук ҫын чухне, сире темӗн тӗрлӗ тӗрӗсӗпе кала-кала параттӑм, эсир ун чухне манӑн ӑслӑ сӑмахӑмсене сума сумасӑр, шанмасӑр, мана ухмах тесе вӑрҫаттӑр; халӗ эпӗ сирӗн пек пуян пулсан, сирӗнпе пӗрле сӗтел хушшинче калаҫса ларнӑ чухне, суйса каланӑ сӑмахсене те эсир: „Пулӗ те ҫав, ах вӑл епле пит вичӗкӗн шӑллӑ шӑши пулнӑ-ши?" тесе чӑпа кӑларса тӗлӗнсе ларатӑр" тет вӗсенчен кулса.

1906.

## У Р И Н Ĕ

Ларма хĕрĕ Урине, пĕвве çитĕннĕ, вунçичĕ çулхи хĕрача: тап-таса питлĕ-куçлă, хĕрлĕ чĕреллĕ, хурарах кăна куçхаршиллĕ, çавракарах питлĕ, пĕчĕкçĕ сăварлă, тути, пĕчĕкçĕ ача тутисем пек, çӳп-çӳхе илемлĕ туталлă, тикĕс те илемлĕ сăмсаллă. Çитленĕ çӳç çивтисем, алă хурси пек, хулăн та вăрăм. Ытла илемлĕ хура куçĕсем, йăвашшăн кăна, темĕн пек, ытараймасăр пăхса тăраççĕ... Аллисем, пӳрнисем тата шурă кăпăкран тунă пек, тап-таса, хăпарса кăна тăраççĕ; калăн, вăл аллисемпе пирĕн хура халăх ĕçне ĕмĕрĕнче тытса та пăхман-тăр, тесе. Çук, вăл ытти çынсем пекех, пур ĕçе те ĕçленĕ, анчах çамрăк таса ӳчĕ ăна-кăна палăртман. Илемĕ унăн пĕр çавсем кăна мар халĕ: станĕ, пĕвви, çан-çурăмĕ, пуçĕ, алли-хуллисем илемлĕ тенипе илемлĕ çке, пăхсан, пĕтĕмпе ытарса тăранма хал çук. Çине тăхăннă, мĕн таран ырă, пирĕн чăваш тумĕ: улача кĕпи, умне çаккă чĕрçиттийĕ, пуç вĕçне чечен кăна çыхнă чăпар тутăрĕ, урисене тăхăннă чăлт-шурă тăла чăлхисем, сырнă хамăр чăваш çăпатисем—тата уйрăм темĕн тĕрлĕ илемлĕн курăнса тăраççĕ. Кăкăрĕпе мăйĕ çине çаккă шултăра кĕмĕл тенкĕсенчен, талирсенчен тунă тевечĕпе мăйи, янăралсенĕн кăкăрĕсем çине çакнă пек, пĕтĕмпе йăлтăртатса анчах тăраççĕ. Аллисене тăхăннă çĕррисем тата ылттăн та кĕмĕл. Хăшĕ ахах куçлă, хăшĕ мерчен куçлă, хăшĕ çырулла, хăшĕ тĕрĕллĕ; хăшне тата тепле ытла илемлĕ явса тунă. Хăшин çине кăна пăх, пурте темĕн тĕрлĕ ĕлккен.

Çапла Урине пек кăмăла килмелле пит илемлĕ тумланнă хамăр чăваш хĕрĕ çине ĕмĕр пăхса тăрсан та тăранас çук...

Ун пек илемлĕ хĕрипраçа чăнласах та, хамăр чăваш çыннинчен пуçне, урăх çичĕ ютран, тен, шырасанта, тупас çук-и? Пирĕн чăваш хĕрĕ калама та çук ĕнтĕ, чăнласах та илемлĕ тенипе—эй илемлĕ çке!..

Ларма хĕрĕ Урине пĕр тĕсĕпе те тумланнă тумĕсемпе кăна илемлĕ мар халĕ; вăл тата ĕçленĕ ĕçĕпе те çынна ăсран кайиччен тĕлĕнтерет: ĕнтĕ турашăлне васкаса авăрлать-çке!.. Турашăлне турахуппи çине кăртласа çакмассерен, тытăнать часрах васкаса авăрлама: сулахай аллипе турашăлне туртса ĕлкĕреймест, сылтăм аллипе йĕкине пĕр вĕçрен пĕтĕрсе авăрла пуçлать. Çитменнине тата йĕкине икĕ аллипе пит хытă кăна çупса ярать.

Аваралана сĕвемне, варамтарах пултар тесе, хаш чухне тата сылтам аллине пĕр еннелле аяккалла çÿлелле тасса ярать. Йĕки пĕр чаранмасар вар-вар-вар-вар-вар çавранса, аялалла, урайне пĕтĕрĕнсе анса, урайĕнче тата темĕнччен катартаттарса çавранса çÿрет. Хай, унччен те пулмасть, тытанать часрах аваралана çиппине икĕ пÿрни вĕçне чĕркеме; унтан, пÿрнисем çинчен тытанать каллех йĕки çине çамхалама: йĕкине пĕр вĕçĕнчен тытса, тепĕр вĕçĕпе арки çине лартса, сылтам аллипе пĕтĕрсе, çипне çамхаласа пĕтерсен, тытанать татах турахуппи çине çакна турашалĕнчен чĕпĕтсе туртса, хелĕх пек, тип-тикĕс çип аваралама. Турашалĕнчен малтан чи варам сÿсне чĕпĕтсе тытса, туртса пĕтĕрттерет. Çиппи чиперрех тикĕс пултар тесе, хаш чухне тата пÿрни вĕçĕсене, кашт сурса, йĕпетсе илет. Аваралама пуçлана турашалĕ пĕр хĕрринчен пĕте пуçласан, тытанать тепĕр хĕрринчен те чĕпĕтсе туртса аваралама. Турашалĕнчен турахуппи çине аваралама юрахсар чÿпĕкĕ анчах юлсан, ун çине тата çĕнĕ турашалне, вĕтчеççĕ кана картласа çакса ярсан, тытанать ана та çапла часрах васкаса аваралама. „Эх!“ тет, хай ашĕнче, саванса:—„часрах аваралса кĕçĕр çак йĕкеме тултарасчĕ! Куллен çапла ытараймасар аваралсан, эрне хушшинче пĕр хутарлах çип таваттам. Çаварниччен, ту яранма тухиччен, аваралсан, çаван чухлĕ хутарам пулĕччĕ... Çава тухсан, хашне шурататтам, хашне тĕртĕттĕм, пир таваттам. Хашне, пĕветсен, улача кĕпесем таваттам. Кавак кĕпесем те пулĕччĕç, ана та таваттам, кана та таваттам... Хама çураççап-тусан, хашĕнчен парнелĕх таваттам, хашĕнчен хама таханма, хашĕнчен тата упашкам валли кĕпе йĕм туса тахантараттам“, тет те, йĕкине тата хыта, пĕтĕм вайĕпе çупса ярса, саванса, васкаса а арла пуçлать. Турахуппи, вĕренерен тунаскер, хыта туртса, васкаса аваралнаран купас калана пек, катарр, катарр, катарр туса, янараса анчах ларать. Унан янарана аван сассине юратна пек пулса, йĕки те, тепле саванна пек пулса, урайне хыпаланса пĕтĕрĕнсе ансан, урай çинче, тикĕс çĕрте тата хыта катартаттарса, ташласа çÿренĕ пек, шакартатса çÿрет. Вал çапла ытараймасар, ĕç ÿсĕнтĕр тесе, васкаса ыра кана аваралланине куратаруçан, уйрам чун саванса тарать-çке...

Эй катир, Урине! Мĕншĕн кана эпĕ сан пек аваралама пĕлместĕп-ши? Сан пек аваралама пĕлсен, эпĕ те турахуп

йлсе, сана хирӗç ларса, иксӗмӗр пӗр-пӗринчен ӑмӑртмалла, тулли йӗкемӗрсене çупа-çупа ярса, авӑрлӑттӑмӑрçке!..

* * *

Урине лармаран таврӑнсан, тата пӗрер çул ашшӗамӗш килӗнче ӳссен, тата питрех тӗреклӗленсе илемлӗленсе каять. Пӗвве çитӗннӗ ывӑл ачасенӗн ашшӗ-амӑшсем ӑна курсан, темӗн тӗрлӗ сӑхланаççӗ, хӑйсенӗн ывӑлне валли качча илме шухӑшлаççӗ. Каччисем те ӑна, пӗр ятисем кӑна мар, ют ялтисем те куç хываççӗ. Курнӑ чухне унпа пӗр-икӗ ӑша сӑмах кулса калаçса илме тӑрӑшаççӗ; епле те пулин унӑн ӑшӑ кӑмӑлне килсе, юрама хӑтланаççӗ. Пӗвве çитӗннӗ хӗрсенчен чӑнласах та Урине пек илемлӗ хӗр ялта урӑх пӗр хӗр те пулман. Кӳршӗ ялсенче те ун пекки пите, куçа илемли пур тени илтӗнмен...

Пӗре çапла çав Урине кӗвенте йӑтса, витресем çакса, шыв хӗррине, шыв ӑсса килме, шыва каять. Шыв йӑтса таврӑннӑ чухне ӑна хӑйсенӗн ялӗнчи пӗр каччӑ тытӑнать аллинчи çӗççипе пусма. Ку, шыв йӑтса пыракан, малтан ӑна-кӑна шухӑшламанскер, юри хӑратмалла хӑтланать-тӗр, тесе шухӑшласа, унтан питех тармасть. Лешӗ чӑнласах та пусма хӑтланнине курсан, унӑн куçӗсем те урнӑ çыннӑн куçӗсем пеккине курсан, ку хӑраса кӑшкӑраша та пуçлать. Вӗсенчен инçе мар урамра калаçса тӑракан çынсем, кӑшкӑрнӑ сасса илтсен, часах вӗсем патне чупса пырса, кӑна, пусма хӑтланакан каччине, куç умӗнчех Уринене пусма ирӗк памаççӗ. Аллинчи çӗççине часах ирӗксӗр туртса илеççӗ. Пӗлӗсӗр, вӑл вӑхӑтра çав пусма хӑтланнӑ каччийӗн ухмаха ернӗ вӑхӑчӗ пулнӑ. Вӑл ялан Уринене илемлӗрен илме шухӑшласа, ӑшӗнче темӗн пек, ӑна юратса пурӑннӑ. Çураçсантусан, ӑна мана качча памӗç, тесе, шухӑшла, шухӑшла, кайран, мӗскӗн, хӑй ухмаха та ернӗ...

Урине хӑйне çапла хӑйсенӗн ялӗнчи каччӑ, тытса, çӗçӗпе пусма хӑтланнӑран, хӑранипе, кайран пӗтӗмпе чире ӳкет... Ӑна çапла каччӑ тытса çӗçӗпе пусма тытӑннине ытти çынсем илтсен, темӗн тӗрлӗ тӗлӗнеççӗ, ӑсран каяççӗ... „Мӗскӗнӗн, пурӑнас кунӗ пур куран“, тесе пурте ӑна темӗн тӗрлӗ шелleççӗ...

Çав, Уринене, чирӗнчен пӑртак тӳрлене пуçланӑ тенине илтсенех, каччӑ пуррисем, тытӑнаççӗ ӑна евчӗсем

ярса, часрах çураçма. Ашшĕ-амăшĕ ăна малтан чиперте-рех чĕрĕлтĕр, тесе, качча парасшăн пулмаççĕ:—„килте ĕçлекенсем сахал", тесе, тата тепĕрер çул килте тытасшăн пулаççĕ. Пĕри те пĕри çураçа пуçласан, ыттисем те евчĕсем ярса пăхтара пуçласан, пит ыйта пуçланă-ран:—„пăртак тӳрленсен, парăпăр та", тесен, евчисем унĕçемĕн çураçма пыра пуçлаççĕ. Пуянсем темĕн пек ăна хăйсенĕн ывăлне валли çураçса илме тăрăшаççĕ: хулăн укçине мĕн ыйтнине пама пулаççĕ. Ют ялсенчен качча-сем евчĕ çӳрете пуçланине илтсен, хăйсен ялĕнчисем те темĕн пек, ялти ыра хĕре ют яла вĕçерешĕн пулма-сăр, евчисене куллен темиçе тапхăр вĕсем патне утта-раççĕ... Евчисем те мĕн вăйĕ çитнĕ таран, харкам хăй каччине, унăн ашшĕ-амăшне, ытти тăванĕсене темĕн тĕрлĕ мухтаççĕ. Каччисем тĕлĕшĕнчен уйрăм тата:—„вăл пирĕн эрех ĕçмест, чĕлĕм туртмасть, çын ачисем пек, çынсемпе ĕçсе-ӳсĕрĕлсе, çапăçса-туса çӳремест, усал, намăссăр сăмахсем каламасть, хĕрача пек, йăваш. Ун пек ыра çынна ку çулта шырасан та тупас çук", тесе мухтаççĕ.

Хĕрĕн ашшĕпе амăшĕ евчисенĕн ыра сăмахĕсене итлесе тăранаймаççĕ...

Те Уриненĕн качча кайма вăхăт çитнĕрен, те евчисе-нĕн ыра мухтанă сăмахĕсенчен анăранăран, ашшĕпе амĕшĕ Уринене пĕр пит мухтанă çыннăн ывăлне, кӳршĕ яла, çураçса качча параççĕ. Пит вăйлă туй туса илеççĕ. Хулăн укçине те нумай илеççĕ.

Туйра йĕме ларнă хĕр, Урине, хĕр йĕнĕ чухне:—„Ман туя курма мĕн чухлĕ çын пухăннă, эпĕ вилсен те мана курма çапла нумайăн пухăнĕç халĕ", тесе асăнса илет. Вăл çапла асăннине илтсен, туй курма пынă хĕрсем, арăмсем, çамрăк çынсем, ваттисем, вăл мĕншĕн апла асăнать-ши? тесе шарт тĕлĕнеççĕ.

Туй хыçĕнчен ку, Урине, ахаль те чирĕнчен чиперех тӳрленсе çитейменскер, упăшки патĕнче çĕнĕрен чир-лесе ӳкет. Ыррăн пĕр эрне те пурăнаймасть, пур вăйран сулăннине сиссе, хăйне вăл часах ашшĕ-амĕш патне леçтерет. Вĕсенĕн килĕнче татах пĕр эрнене яхăн чирлĕ выртсан, хай çĕнĕ çын, темĕн тĕрлĕ хитре, илемлĕскер, вилсе те каять...

Ашшĕпе амăшĕпе, çемьисем кăна мар, Урине вилнĕ тенине илтсен, пĕтĕм ялĕ тĕлĕнет. Нумайĕшĕ чарăнай-масăр йĕреççĕ... Упăшкине те, хуняшшĕпе хунямăшне

те, пур хӳрӑнтӑшӗсене те:—„ҫӗнӗ кинӗр, ҫӗнӗ ҫыннӑр, Уринӗр, вилчӗ", тесе, хыпар ҫитереҫҫӗ. Вӗсем те, ҫак хыпара илтсен, малтан тепле шанман пек пулса, тӗлӗнеҫҫӗ. Унтан часах лашасем кӳлтерсе вӗсем патне чуптарса та ҫитеҫҫӗ. Вилнӗ ҫынна курма пыракансем пӳрте лӑках тулаҫҫӗ... Хӑшӗ-пӗри Урине вилсе выртнине курсан:—„Пирӗн пек, усалсене, вилме кирлӗччӗ, Уринене, пите-куҫа илемлӗ ҫынна, ҫамрӑкскере, пӑртак пурӑнма кирлӗччӗ", тесе, шеллесе, тӳсеймесӗр йӗреҫҫӗ...

Ют ҫынсем те ҫапла чӑтаймасӑр йӗнине курсан, ӑшшӗпе амӑшӗ те, тӑванӗсем те, упӑшки те, хуняшшӗпе хунямӑшӗ те—пур хурӑнташӗсем те каҫса кайса йӗреҫҫӗ...

Ёнтӗ йӗреҫҫӗ, тӳсме те хал ҫук...

Пӗр вилнӗ ҫынна темӗн тӗрлӗ йӗрсен те куҫҫуллисемпе чӗртес ҫукне пӗлсе, виҫӗ кунтан ӑна масар (ҫӑва) ҫине леҫсе пытараҫҫӗ.

Вайлӑ туйра эрехе пит хытӑ ӗҫнӗ ҫынсенӗн мухмӑрӗсем те ӗретлӗрех тӳрленсе ҫитеймен-ха, хай ытла илемлӗ Уриненӗн пумилккинче тата ҫапла, туйри пек, пит хытӑ ӳсӗрӗличчен эрех ӗҫмелле пулса тӑрать.

1916.

*Юлташ*

# ÇĔНĔ ЮРĂ

Ял. Пӳртсем тăйлăк-тайлăк, хапхисем ишĕлес пек лараççĕ. Пĕретлĕрех пӳртсем те çук. Çынсем пит начар пуранаççĕ.

Çапах... кашни праçник кунĕ: „Айтăр ĕçĕр-çиĕр, выльăр-кулăр", тесе юрлаççĕ.

Халăх, мĕскĕн, çапах ĕçкĕ тăвать. Иртрĕ пилĕк çул. Эпĕ пилĕк çул хушши хулара пурăнтăм. Халĕ килте, пӳрт умĕнче ларатăп. Каç пулчĕ. Хĕвел анать.

Таçта юрă сасси илтĕнет. Ĕлĕк те çак вăхăтсенче ӳсĕр сасăсем илтĕнкелетчĕç. Анчах халĕ ӳсĕр сасă вырăнне тăп-тăрă сасăсем юрлаççĕ.

Вĕсен сăввисем те урăхла. Çĕнĕ юрăсем. Мĕн-мĕн юрланине итлетĕп. Акă вăл юрă сăввисем:

Мĕскĕн халăх юнĕ мĕншĕн юхать?  
Юхать çиме çăкăр ыйтнăшăн.  
Мĕншĕн халĕ пирĕн халăх шавлать,  
Хăй аллине ырлăх илесшĕн.

Мĕншĕн шав тумастăр, кĕр тумастăр,  
Элле улпут ятсене пĕлместре?  
Улпучĕсем улпут ятлă иккен,  
Вĕсен чунĕ чултан та хытă иккен.

Çӳрерĕм, вырăн тупрăм,  
Улпут патне кайрăм ĕçлеме,  
Пĕр-ик уйăх тăрасси укçа ыйтрăм,  
Тытăнчĕ вăл мана хĕнеме.

Айтăр ĕçлер, тăвар, ырлăх курар,  
Çамрăк пуçра вăй-хăват пур чухне,  
Тĕрлĕ ирĕк, çĕре алла илер,  
Тата кăштах вăхăт пур чух.

Чăнах та пилĕк çул хушшинче халăх питĕ нумай улшăннă. Пурнăç улшăнать. Çынсен шухăшĕсем улшăннă, малалла та çапла пулсан, пурнăç чăнах та малалла кайĕ.

Пултăрччĕ.

1905.

## ТАЙĂР ТИМККИ

*(1887—1916)*

Тайăр Тимкки (*Тимофей Семенов*) 1887 çулта Шемек ялĕнче (*халĕ: Буденный районĕ, Тутар АССР*) çуралнă. Унăн ашшĕ ăста платник, тимĕрçĕ, механик пулнă. Вăл таврари пуян хуçасем патĕнче ĕçлесе çÿренĕ, йывăр ĕçре хуçăлса, вăхăтсăрах çĕре кĕнĕ (*1894 ç.*). Тăвата ачапа тăрса юлнă Тимкка амăшĕ пулас поэта усрава панă.

Тимкка вĕренме тăрăшнă. Выçăллă-тутăллă пурăнса, тарçăра ĕçлесе те пулин, вăл ялти шкултан вĕренсе тухнă. 1903 çулта Тайăр Тимкки Кÿрен ятлă ялти двухклассăй шкула кĕнĕ. Пĕр çул çурă вĕренсен ăна, политика тĕлĕшĕпе шанчăксăр тесе, шкултан кăларса янă.

Тайăр Т. кĕнекесем нумай вуланă, пурăнăçри ĕç-пуçсене ăнланса пл е тăрăшнă, хăйĕн шухăшĕсене хут çине ÿкерме пуçланă.

1906 çулта Т. Т. „Хыпар“ хаçата пичетлесе кăларакан типографире рабочи-наборщик пулса ĕçleме тытăнать, революци ĕçне хутшăнать: революциллĕ сăвăсем çырнипе пĕрлех, вăрттăн типографи организацилеме тытăнать. Çак ĕçшĕн ăна арестлесе (1907 ç.) Çĕпĕре каторгăна ярасçĕ.

Каторгăран таврăнсан, Т. Т. ĕçleме Кавказа каять, революциллĕ ĕçсемшĕн каллех тĕрмене лекет. Унтан тухсан, Донбасра шахтăра ĕçleме пуçлать. Кĕçех ăна фронта илсе каяççĕ. Юлашки çырунеТ. Т. 1916 çулăн вĕçĕнче çырнă, теççĕ. Ун хыççăн Т. Т.-чен нимĕнле хыпар-хăнар та пулман. Вăл ăçта, тата мĕнле вилнине ку вăхăтченех пĕлмеççĕ.

Тайăр Тимкки сăввисем юлашки вăхăтра чылай хаçат-журналсенче, кĕнекесенче пичетленнĕ. Уйрăм кĕнекепе тухни те пур. („*Сăвăсемпе калавсем*“, *Шупашкар, 1941 ç. В. А. Долгов* (*Хударсем*) пухса редакциленĕ.)

---

*Тайăр Тимкки*

## ЧАПЛĂ ВИЛĔМ ЮРРИ

Халăх куçĕ умĕнче  
Çук çынсемшĕн вилетпĕр.  
Сыв пул ĕнтĕ, çут тĕнче,  
Юлашкине паратпăр.

Йĕри-тавра халăхсем  
Пире курсан хĕрхенчĕç,  
Анчах вăйлă улпутсем:  
Çакăр!—тесе кăшкăрчĕç.

Ман юлашки сӑмахсем:
„Пуласси ҫине шанса,
Хытӑ тӑрӑр, халӑхсем!
Ан чарӑнӑр хӑраса.

Пирӗн халӗ ҫӗр ҫинче
Ҫырмари пек юн юхать.
Хресчен сахал хирӗнче
Куҫҫуллипе сухалать.

Нумай тӑлӑх ачасем
Ялтан яла ҫӳреҫҫӗ,
Ҫынна тӗл пулсан вӗсем
Ашшӗ ҫинчен ыйтаҫҫӗ.

Эсир, тӑлӑх ачасем,
Аҫӑрсене ан шырӑр.
Вӗсене, ырӑ ҫынсем,
Улпутран ыйтма хушӑр.

Эй, пур нушаллӑ халӑх!
Ҫакна эсир ан манӑр.
Вӑл халь пирӗн вӑхӑтлӑх,
Пулассишӗн тӑрӑшӑр!.."

Каллех вӑйлӑ улпутсем:
—Ҫакӑр вӗҫене!—терӗҫ.
Унта тӑракан ҫынсем
Пуҫне чиксе саланчӗҫ.

1906.

## ШУХӐШ

Хирте, суха хыҫӗнче
Эпӗ нумай ҫӳрерӗм.
Ҫӗрӗн йывӑр ӗҫӗнче
Нихҫан ырлӑх курмарӑм.

Акнӑ тырӑ шӑтмарӗ,
Пысӑк выҫлӑх ҫул килчӗ.
Хӑш ҫул тырӑ пулмарӗ,
Хӑш ҫул пӑрпа ҫӗмӗрчӗ.

Хӗнре, тертре пуранса
Эпӗ выҫӑ ларатӑп.
Ялан хытӑ ӗҫлесе
Вайран кайса ӳкетӗп.

Пирӗн йывӑр ӗҫлени
Мӗншӗн ахаль ҫухалать?
Пирӗн мӗнпур тар тӑкни
Харам пырта саланать...

Йӗри-тавра куҫҫулли,
Йӗри-тавра йынӑшни...
Вӗҫӗмсӗр тӗнче тулли
Вайсӑр халӑх юн тӑкни...

Анчах эпир йынӑшни
Тутӑ ҫынна илтӗнмест.
Эпир вӗри хуйхӑрни
Сивӗ пӳрте ӑшӑтмасть.

Мӗншӗн, мӗскӗн халӑхсем,
Эпир ҫапла тӳсетпӗр?
Мӗншӗн вӗри куҫҫульсем
Ҫӗре ахаль тӑкатпӑр?

Ҫитӗ пире тертленме!
Пурте пӗрле пухӑнар.
Тӗрлӗ харам пырсене
Ӗнсе ҫинчен пӑрахар.

1906.

## ҪӖНӖ ҪУЛ

Килӗр, пӗрле пухӑнса
Ҫӗнӗ шухӑш шухӑшлар.
Ҫӗнӗ ҫулта савӑнса
Кивӗ ӗҫе пӑрахар.

Пирӗн кивӗ йӗркесем
Кунтан урӑх ан пулччӑр.
Халччен пире тытакан
Тимӗр сӑнчӑр таталтӑр.

Пирĕн çĕнĕ шухăшшăн
Нумай ыră çын пĕтрĕ.
Пирĕн хуйха пĕлнĕшĕн
Нумай вĕри юн юхрĕ.

Анчах мĕншĕн тертленсе
Вăхăта халь ирттерер?
Пирĕн пĕрле халь пулас,
Халех ĕçе тытăнас!

Тата пĕр-ик çул иртĕ,
Çынсем аван пурăнĕç;
Пур усала çĕнтерсе
Çынсем чунтан савăнĕç.

1906.

## ÇĂЛĂНĂÇ

Хурлăх курса
Пурăнап.
Тăрсан турра
Кĕлтăвап.
Мана ыră сунан çук.

Мĕн шухăшлас,
Тăванăм?
Мĕскер ĕçлес,
Юлташăм?
Мана саван çыннăм çук.
Ĕçлеме ĕç
Пулсассăн,
Çиме çăкăр
Тупсассăн—
Пире тата мĕн кирлĕ?

Ан хуйхăр-ха,
Мĕскĕн чун.
Мĕншĕн те сана
Ыră çын
Пулăшасса кĕтес мар?

Акă ыран,
Çутăлсан,
Ирпе халăх
Вăрансан,—
Атя, иккĕн ĕç шырар.
Атя, атя
Ĕçлеме,
Кахал пăсать
Этеме...
Выçса вилсен—
Кам йĕрĕ?

1906.

## ПУРĂНĂÇ ÇУТТИ

Инçетре-инçетре, эпир курман-илтмен çĕрсем, тинĕссем, пушă хирсем урлă, ирхине çурăмпус çутти тĕттĕм

çĕрте кăшт паларнă пек, пирĕн пата çĕнĕ пуранăç сутти кăшт çутатса килет.

Хăш чух çав çутă тĕнчене паллах сарăлать, хăш чух пĕр енчен кăшт начарланса тепĕр еннелле куçать.

Çил вĕрет... Хĕвеланăç тинĕсĕн нумай енчен хăрушă хура пĕлĕтсем шăваççĕ...

Хăрушă. . вăйлă çумăр килет... Çăвать... Ах, епле хăрушă!. Çумăр тумламĕсем çĕре ÿкнипе çемçе хура тăпрана шăтара-шăтара кĕреççĕ.

Çумăр çăвать, шавласа шыв юхать. Çĕр çинче тĕрексĕр тăракан япаласем вăйлă шывпа юхса каяççĕ. Çĕр çинче кирлĕ япаласем юлмаççĕ.

Çумăр çăвать. Тĕттĕм. Ăçта... ăçта пирĕн çĕнĕ пуранăç сутти?! Пуранăç суттине тĕттĕм çумăр хупларĕ.

Вăхăт çитет. Çумăр чаранчĕ. Ушкăн-ушкăн çумăр пĕлĕчĕсем, пĕлĕтĕн тĕрлĕ енне сарăлса, пĕртте юлмарĕç. Пĕлĕт таса...

Çĕнĕ пуранăç сутти пĕлĕт çинче малтанхинчен те çутăрах çутăлса тухрĕ. Вăл кăштăн-кăштăн çутăла-çутăла еррипе çÿлелле хăпарать. Акă, кăшт вăхăт иртсен, вăл пĕлĕт çинче çап-çутă çутăлса тăчĕ.

Çĕр çинче нимĕн сасă та çук. Таçта аякра анчах аслати авăтни пек, çын сăмахĕсем илтĕнеççĕ. Вăл сасă çывăхарнăçем çывăхарса килет.

Çĕнĕ пуранăç сутти пĕтĕм тĕнчене çутатса илчĕ. Акă пуранăç сутти хыççăн тĕнчене ăс парса çутатакан тĕрĕслĕх хĕвелĕ килчĕ. Тĕрĕслĕх хĕвелĕпе пуранăç сутти иккĕш пĕрле пулчĕç. Тĕрĕслĕх хĕвелĕ сасăпа калать:

— Килĕр ман патăма, маншăн хурлăх куракансем. Килĕр ман патăма, ман пирки урăр-аллăра сăнчăрласа, суралнă çĕршывăрти чунăра хаклă çынсенчен уйăрса, инçете хурлăх курма янă çынсем... Эсир маншăн нумай асап курмалла пулнă... Эсир маншăн хăвăра-хăвăр шеллемесĕр, сивĕре те, çумăрта та начар тумтирпе чăтса çÿрерĕр. Халиччен маншăн мĕнле асап курнине те манăр!.. Тĕнче пулнăранпа сирĕн юлташăрсем, эсир пыракан çулпа пырса, мĕн шыранине тупас тесе тăкнă юна пурне те пĕр çĕре пухсан, сирĕн юнăра çĕр çĕклесе тăраймĕ. Тăрăр ĕнтĕ, маншăн юн тăкса вилнĕ çынсем, килĕр кунта, пĕр çĕре пухăнса савăнар! Сире, хĕн-хур куракансене, пурне те йăпатăп. Пирĕн вара çĕр çинче халиччен пулман савăнăç пулĕ.

Халиччен йывăр, суя ĕçре пурăнакансем, пурте ман

патăма килĕр. Ĕмĕрхи ĕçĕн хурлăхлă юррине юрласа пурăнакансем те, килĕр. Вăл юрăсене ĕнтĕ пăрахăр эсир! Эсир ĕнтĕ савăнса ман çинчен юрлама тытăнăр*.

Çапла çĕнĕ пурăнăç хĕвелĕ нумайччен каласса тăчĕ. Ун йĕри-тавра тĕнчери мĕнпур çынсем пухăнчĕç. Вĕсен хăшин алли çук, хăшин ури çук, хăшин таçтан-таçтан суранланса пĕтнĕ йĕрсем пур. Вĕсем пурте пĕр савăнăçпа савăнса юрлăççĕ.

Вĕсен савăнăçĕ ĕмĕре пытăр!

Вĕсем савăннă вăхăтра та, хăйсене халиччен хĕсĕрлесе пурăнакансене манман: ăçта вĕсем—пире хĕсĕрлесе тăракансем? Вĕсем халĕ тĕттĕм вăйĕ çуккипе инçетре, пурăнăç çуттинчен куçĕсене аллисемпе хупласа, пуçĕсене чиксе тăраççĕ. Вĕсен тумтирĕсенче, вĕсен хисеп çук пуянлăхĕсенче халĕ пурăнăç çуттине хупласа тăмалăх тĕттĕм хăват çук ĕнтĕ. „Эсир, хĕсĕрлесе пурăнакансем, çĕр çинче телей кураймăр. Кайăр кунтан, шуйттана пăхăннă çынсем, эсир ман çутта курса тăма тивĕççĕр*,— терĕ вĕсене пурăнăç çутти.

Çапла ĕнтĕ хĕн-хур курса пурăнакансем, пурăнăç çутти хушнипе, кайран телей тупĕç, вĕсене хирĕç тăракансем ĕмĕрхи хурлăха кĕрĕç.

1906.

## ÇУТТА ТУХАСЧĔ!

Пĕрре ман патăма юлташ килчĕ те акă мĕн каласа кăтартрĕ:

— Эпĕ пĕчĕкренпех хам пурăнăçа ĕретлĕ астумастăп. Кăшт пĕле пуçласан, эпĕ хам патри япаласем çинчен шухăшлама тытăнтăм. Ман йĕри-тавра сĕм-тĕттĕм, нимĕн те курăнмасть. Çутă кăшт та çук. Эпĕ суккăр-ши е çутă çукран ним те курмастăп-ши, терĕм хама хам. Унтан эпĕ: çынсем пур-и кунта, тесе кăшкăртăм. Инçетре еррипе сасă илтĕнчĕ. Эпĕ каллех: килĕр-ха кунта, ăçта эсир, тесе кăшкăртăм. Ман пата пĕр ватă çынпа çамрăк ача килчĕç. Эпĕ вĕсенчен: епле эсир çакăнта пурăнатăр, çутă çинчен шухăшламастăр-и мĕн?—терĕм.

Ватă çын каларĕ:

— Эпĕ халиччен кунта нимĕн курмасăр пурăнтăм, халĕ çутă çĕре тухсан та усси пулмĕ, тесе шухăшлатăп,— терĕ.

Ача каларӗ:

— Пирӗн аттесем, асаттесем ҫута ҫинчен илтмесӗр пурӑннӑ, эпӗ те вӗсем пекех пурӑнап, ҫиме ҫӑкӑр пулсан, мана нимӗн те кирлӗ мар,—терӗ.

Унтан эпӗ вӗсенчен уйӑрӑлса кайрӑм та, епле тухасши кунтан, тесе шухӑшлама тытӑнтӑм. Шухӑшласа тӑнӑ чухне эпӗ ҫӳлелле пӑхрӑм та, кӑшт ҫуга куртӑм. Ӑҫтан кӗрет-ши вӑл ҫута, вӑл ӑҫтан та пулса шӑтӑкран кӗрет пулӗ, терӗм эпӗ. Вӑл шӑтӑкран тухма ҫук-ши? Унтан эпӗ ҫав ҫута кӗрекен шӑтӑк патне утса кайрӑм. Унта ҫитиччен ман тӗрлӗ тусем урлӑ, шӑтӑксем урлӑ каҫмалла пулчӗ. Нушаланса эпӗ шӑтӑк патне ҫитрӗм. Вӑл шӑтӑкран эпӗ ахалех тухаймарӑм, вӑл шӑтӑк пит пӗчӗккӗччӗ. Ана эпӗ алӑпа тӑрмаласа пысӑклатрӑм та (ман алӑра кӗреҫе тавраш нимӗн те ҫукчӗ) ҫав шӑтӑк витӗр тухрӑм.

Ах, епле тӗлӗнтӗм эпӗ!..

Кӑн-кӑвак таса пӗлӗт, пӗр ҫумӑр пӗлӗчӗ те ҫук. Эпӗ йӗри-тавра пӑхкаласа малалла утрӑм. Ак ман ҫул ҫинче ҫӳлӗ ту урлӑ каҫмалла пулчӗ. Урӑх нихӑш еннелле те ҫул ҫук. Пӗр енче вӑрман, тепӗр енче шыв. Ҫута курма ман ҫав ту урлӑ каҫмалла пулчӗ.

Ту урлӑ каҫнӑ чух, эпӗ темӗн тӗрлӗ асап, темӗн тӗрлӗ хӗн куртӑм. Кӑшт астумасӑр пуссан, ту айне, е шӑтӑка ӳкмелле. Анчах темӗнле йывӑр пулсан та, эпӗ ту урлӑ каҫрӑм та яла кайрӑм.

Ял ҫинче каллех сӗм-тӗттӗм. Нимӗн те курӑнмасть. Ҫынсем те пӗртте курӑнмаҫҫӗ. Анчах хӑшӗ ҫутӑра ҫӳресен те, ыттисене ҫута курма вӗрентиччен, аллисене туя тыттараҫҫӗ!"

Те тӗрӗс, те тӗрӗс мар ҫак юлташ сӑмахӗсем?

1906.

## ТĔЛĔНМЕЛЛЕ!*

Эпĕ тусенчен чул кăлармасан, эпĕ пуртăпа, пăчăкăпа ĕçлемесен, эпĕ тăмран кирпĕч тумасан,—ырă илемлĕ чиркӳ те пулмĕччĕ, патша çурчĕпе тĕрме те лармĕччĕ! Пăхăсăн,—лараççĕ çуртсем: улпутсен, пупсен, хуçасен! Пĕр ман пӳрт анчах темĕскерле: виге—вите мар, мунча—мунча мар.

Тĕлĕнмелле!

Сӳс-кантăрне хам акап, ăна хутап, кăларап, тылла-тылла тĕветĕп, чун тухиччен тĕртетĕп... Сурăх çăмне хам касап, таптаратăп, авăрлатăп, тĕрлĕ тăла тăватăп. Пăхăсăн,—тумланнă улпутсем, пупсем, хуçасем! Куç-пуç чалхăрать... Пĕр эпĕ анчах чавса çĕтĕк кĕпепе, çĕтĕк-çатăк сăхманпа, вĕлтĕр-вĕлтĕр çӳретĕп.

Тĕлĕнмелле!..

Эпĕ ан сухалам, ан акам. Пурăнĕччĕç-ха антăхса! Хура халăх пулмасан, кăнса выртӑччĕç выçăхса! Пăхăсăн,—пурăнаççĕ улпутсем, хуçасем, пупсем! Хырăмĕсене ярапанă! Пĕр эпĕ анчах, халсăрскер, чирлетĕп, вилетĕп,—выçăхса.

Тĕлĕнмелле!..

1906.

---

*) Авторĕ паллӑ мар. Хăшпĕр çынсем шухăшланă тăрăх, ăна Тайăр Тимкки çырнă.

*Пухса хатĕрлекенсем.*

## Н. И. ПОЛОРУССОВ-ШЕЛЕПИ

(*1881—1945*)

Николай Иванович Полоруссов-Шелепи 1881 çулта Тутар республикинче, Аксу районĕнчи Çĕнĕ Ӳсел ятлă ялта çуралнă. Ашшĕ унăн вăтам хресчен пулнă—„Ялак Макçăм Иванĕ" тенĕ ăна ялтисем. Ялак арăмне "Шелепи" тесе чĕннĕ. Анчах мĕнле çурма вырăс (*Полоруссов*) теме пуçланă-ха? Кун пирки поэт хăй çапла каласа хăварнă: „Атте, чăваш эрнекунне пăрахсă, вырсарникуна уявлама тытăннă. Çавăнпа вара „çурмавырăс" тухсă кайнă".

Ашшĕ ăна 1891 çулта Мăкшăял пуçламĕш земски шкулне вĕренме леçнĕ. Çав шкулта 4 çул вĕренсе тухнă хыççăн, Н. И. малалла вĕренме каяйман.

Пулас поэта 1903—1905 çулсенче А. К. Кузьмин учительпе паллашни питĕ усăллă пулнă. Ун çинчен хăйĕн асаилĕвĕнче Кузьмин çапла çырать:

„Çулласенче эпĕ вĕренме е Хусана е Чĕмпĕре куçаттăм. Çавăнпа та эпĕ революцилле шухăшсемпе паллашса, вĕсене яла илсе таврăнаттăм. Çав шухăшсене Н. И питĕ хапăллатчĕ, вĕсем ăна революциенне туртрĕç, вăл халăх асапĕ çинчен вăйлă шухăшлатчĕ. Çав вăхăтра вăл хăйĕн чи лайăх, чи чаплă „Çĕлен" ятлă сăввине çырчĕ. Эпĕ—„Çĕленĕн" пирвайхи вулаканĕ, редакторĕ, критикĕ".

„Çĕлен" сăвă 1907 çулта „Хыпар" хаçатра (*Хусанта*) пичетленнĕ. Ăна унчухне, ятне улăштарса, „Тав" ятпа пичетлесе кăларнă.

1907 çулта Н. И. Çĕпĕре кайса, чугун çул çинче, Красноярскпа Ачинск хушшинче, тайгари Кемчуг станцинче ремонт ĕçĕнче рабочи пулса ĕçленĕ, тепĕр çулне Красноярска куçса, ылттăн кăларттаракан Соловьев хуçа патĕнче ĕçленĕ, 1910 çулта пĕтĕм кипăышĕпех Çĕпĕре куçнă. Унта хресчен ĕçĕпе пурăннă.

Поэт çул çинче полицисем епле çынсене хĕстернисене, хĕненисене курнă. Çавсем çинчен вăл икĕ сăвă çырса, вĕсене тутарсен Хусанти „Мухпир" тата Уфари „Вазххат хасистессе" хаçачĕсенче ç птарнă.

1914 çулта Н. И. Çĕпĕртен хăй ялне таврăннă, кăштах ялта учитель пулса ĕçленĕ, 1916 çулта ăна салтака илнĕ, анчах сывлăхĕ тĕреклех пулман пирки 3 уйăхранах киле янă. Яла таврăнсан, Н. И. ялта пĕр хушă писарь пулса ĕçленĕ.

1912—1913 çулсенче Н. И. „Васянка" „Çарăмсанпа Хăнтăрçа", „Кĕçтентинополь хулине туни çинчен чăваш ваттисем калаçни" поэмăсем çырнă, вĕсем 1915-мĕш çулта уйрăм кенекепе Хусанта пичетленсе тухнă.

Октябрьти социализмлă революцие поэт пысăк хаваслăхпа йышăннă. Ялта тата хăйсен вулăсĕнче совет ĕçне хутшăнса ĕçленĕ, халăх ăна Чистай уезд исполкомĕн членне суйланă, 1918 çулта Н. И. Шелепи комбедра ĕçленĕ..

Революци хыççăн Шелепин кĕнеке хыççăн кĕнеке тухма тытăнать, унăн чапĕ тăван халăх хушшинче сарăлать.

1931 çулта Н. И. ăнăççăр операци хыççăн суккăрланса ларать, çапах сăвăсем çырма пăрахмасть, çĕнĕрен çĕнĕ произведенисем шухăшласа хурса, вĕсене урăх çынна каласа çыртарса пырать.

1936 çулта Чăваш республикин правительстви ăна чăваш халăх поэчĕн ятне пачĕ. 1938 çулта СССР Верховный Совет Президиумĕ „Знак почета" орденпа наградăларĕ.

Н. И. Шелепи Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче çырнă сăввисенче этемлĕх тăшманне—юнлă нимĕç фашисчĕсене пĕтĕм чунтан курайманлăхĕпе ылханчĕ, халăхсене ирĕке кăларакан Хĕрлĕ Çара, аслă совет халăхĕпе аслă Сталина пĕтĕм чун хавалĕпе мухтарĕ.

Н. И. Полоруссов-Шелепи 1945 çулти январĕн 12-мĕшĕнче, йывăр чирлесе выртнă хыççăн, вилчĕ.

---

## *Н. И. Шелепи*

### Т А В

Çутçанталăк, çут тĕнче
Çуна-çуна çутăлсан,
Ерипеле сивĕнсе
Тинĕспеле çĕр пулсан,—

Тухса выртнă çĕр çине
Çĕр пысăккĕш пĕр çĕлен.
Çĕлен ури пĕртте çук,
Çĕлен çитмен çĕр те çук;

Çакă çĕрĕн çийĕнче
Çĕлен сăхман çын та çук.
Çутă хĕвел çутти пек
Вĕçсе çӳрет пĕр кайăк.

Пуçне çĕклет çав çĕлен
Кайăк çине пăхмашкăн;
Çĕлен сăнни çитес çук
Çав кайăка сăхмашкăн.

Çĕлен çине пăхать кайăк
Хайĕн çĕр пин куçĕпе,
Пĕтĕ халь пĕрре çĕлен
Ĕмĕрлĕхе пуçĕпе.

Çĕлен чĕтресе выртать
Çав кайăкран хăраса;
Кайăк çиçĕм пек çӳрет
Чăнлăх çутти шыраса.

Кайăк çутти кансĕррипе
Çĕлен çĕре кĕринччĕ,
Çав кайăкран хăранипе
Çĕлен çĕрте çĕринччĕ.

Кайăк çӳлтен çĕре ансан,
Çĕлен куçне уçаймĕ;
Çак кайăкран хăранипе
Выранĕнчен куçаймĕ.

Кайăк чĕрни пин пулчĕ,
Çĕлен чĕрни çук пулчĕ.
Çĕрпе шывăн пичĕ çине
Мулшăн тăкнă юн тулчĕ.

Кайăк часрах килинччĕ,
Чăн-чăнлăха пĕлтерсе
Пире тĕлĕнтеринччĕ.

. . . . . . . . . . . . . .

Юнпа куççуль нумай юхнă
Çĕлен çĕрте выртнăран.
Çĕлен ӳчĕ юн юхтарать
Кайăк анса сăхнăран.

Çĕлен пĕрре вилĕ-ха,
Ĕмĕрлĕхе пĕтĕ-ха.
Çĕлен халĕ çĕр çинче
Кунĕн-çĕрĕн юн ĕçет.

Кайăк çĕрĕн вĕçне-хĕрне
Ылттăн çунатпа вĕçет.

1907.

## ÇАРĂМСАНПА ХĂНТĂРÇА

### I. Çарăмсан

Çарăмсана кам ăмсанмĕ,—
Ӳнăн чаплă улăхне!
Тем чул парать ырлăхне
Çарăмсан çинчи халăхне.

Улахĕнчен килес килмест,
Çĕршывĕсем типсессĕн;
Ырлахĕсем пĕлĕнеççĕ*
Çимĕк кунсем çитсессĕн.

Симĕс пустав халат пек,
Ешĕл тумтир тăхăнать.
Ырлăхĕсем тĕрлĕрен
Çарăмсан тăрăх пухăнать.

Чечексемпе илемленет,
Пур чĕрĕ чун киленет,
Пĕтĕм çĕршыв илемĕ
Çимĕк çитсен пĕлĕнет.

Хĕвелпеле вăй выляççĕ
Çарăмсанра пуллисем,
Чечексемпе савăнаççĕ
Улăхсенче кўллисем.

Кайăксем те савăнаççĕ
Пĕр-пĕринпе пĕрлешсе.
Çарăмсан çинче ыр кураççĕ
Тĕрлĕ халăх мирлешсе.

Хур-кăвакалсем савăнаççĕ
Чĕпписемпеле,
Ишсе-чăмса çăвăнаççĕ
Çарăмсан шывĕпе.

Ывăл-хĕрсем ыталанса
Вăйăсем выляççĕ,
Семçе сассисемпеле
Йăвашшăн кулаççĕ.

Шăрантараççĕ юррисене
Улăхесенче,
Йăпатаççĕ пĕрне-пĕри
Çамрăклăхĕнче.

Чечек пăхса тĕр тăваççĕ
Сарă хĕрĕсем,
Хĕвелпеле ялтăраççĕ
Кĕмĕл çĕррисем.

---

*) Пĕлĕнеççĕ—сисĕнеççĕ, çын вĕсене пĕлекен пулать.

Çăвăнаççĕ, тасалаççĕ
Çарăмсан шывĕпе,
Анса хăпарса киленеççĕ
Çӳлĕ тăвĕпе.

Çарăмсанăн тăршшĕпех
Чечек ӳсет тĕрлĕрен,
Пурте вĕсем пулаççĕ
Тĕнче илем кирлĕрен.

Ăçтан килчĕ ку ырлăх
Пĕтĕм Çарăмсан тăрăшне?
Çил хумхатать тинĕс пек
Пĕкĕ çӳллĕш ырашне.

Курăк çинче сывлăмĕсем
Çĕмĕрт сапакисем пек,—
Хĕртсе хĕвел пăхнă кун та
Кăнтăрласăр типмеççĕ.

Лăс пек çăвать çăмрисем
Тырра-пулла ӳстерме...
Пур чĕрчуна ĕçтерме,
Çарансене ешĕрме.

Лăпкă, ăшă çилĕсем
Лекет пите çу пекех,
Çарăмсанăн ырлăхĕ
Пуриншĕн те ту пекех.

Тĕтре çӳрет час-часах,
Кăмписене кăларать,
Çимĕк кунсем çитсессĕн
Пур ырлăхсем пăларать.

Çамрăкĕсем улăха
Уяв тума тухаççĕ,
Савăннипе пĕр-пĕрне
Ăшă куçпа пăхаççĕ.

Алла-аллăн тытăнса,
Сике-сике юрлаççĕ,
Тĕрлĕрен вăй выляса
Кăмăлсене ырлаççĕ.

Пӗрне-пӗри ҫталаса
Пыл ӗҫмелле выляҫҫӗ.
Вайӑпалах ҫимӗк кунсем
Хыҫалалла юлаҫҫӗ.

Шур кӗписем ҫиййӗнче—
Тӗррийӗсем чечек пек;
Ҫамрӑк сассисемпеле
Чӗвӗлтетеҫ чӗкеҫ пек.

Куҫран-куҫа пӑхаҫҫӗ,
Пуҫӗсене уҳаҫҫӗ.
Вайӑйисене курасшӑн
Ваттисем те тухаҫҫӗ.

Тухъя-хушпу айӗнче—
Хӗрарӑмсен пуҫӗсем;
Вӗсен ҫинчен каймаҫҫӗ
Каччисенӗн куҫӗсем.

Ӑҫтан тупса ҫитереҫҫӗ
Юрӑсемпе сӑвӑсем!
Пӗлӗт пекех курӑнаҫҫӗ
Ҫарӑмсанӑн тӑвӗсем.

Каччисенӗн кӗписем те
Арки вӗҫсем чӗнтӗрлӗ.
Эх, ҫимӗкӗн илемӗсем
Курӑнаҫҫӗ пин тӗрлӗ!

Пӗрне-пӗри чуптӑваҫҫӗ
Ҫемҫе тутисемпеле,
Темӗн тӗрлех савӑнаҫҫӗ
Ҫимӗк кунӗсемпеле!

Ӑсатаҫҫӗ уявне
Ватти-вӗтти мӗнӗпех,
Асӑнаҫҫӗ хӗрхенсе
Иртсе кайнӑ кунсене.

Ялсем тавра ҫаврӑнаҫҫӗ
Харӑс утса юрласа,
Вайя тухман хӗрсене
Тӑрӑхласа хурласа.

Шăнкăрав пек сасскисем
Янра юлать ял çине,
Пушмак-атă йĕрĕсем
Тăрса юлать çул çине.

Иртрĕ уяв ĕмĕрĕ,
Час çаврăнмĕ каялла,
Улăхсенчен çамрăксем
Саланчĕçĕ ялалла.

Ах, мăнтарăн уявĕ
Çулталăксăр таврăнмĕ,
Нумай кунсем иртмесĕр
Çĕрĕн тавра çаврăнмĕ!

Вылянтарчĕ вăййипе,
Илештерчĕ пĕр-пĕрне,
Халĕ ĕнтĕ астăвĕç
Пурте савса хăй хирне.

Пуçтарăнса кайĕçĕ
Пуртă йăтса вăрмана,
Еррипеле утĕçĕ
Çавасемпе çырмана.

Ушкăн-ушкăн кайĕçĕ
Çырла-çĕмĕрт татмашкăн;
Çĕнĕ милкĕ çыхĕçĕ
Çанçурăмне çумашкăн.

Çуртыррисем çийĕнчен
Пукрисене суйлĕçĕ,
Пурте хăй тырпуллине
Тасатмашкăн уйлĕçĕ.

Улăхсенче, варсенче
Утăсене çулĕçĕ,
Пăри-тулă çийĕнчен
Пиçенсене çăлĕçĕ.

Еррипе ĕçле-ĕçлех
Тăнтăнланĕç* аллисем.

---

*) Çирĕпленĕç.

Тӗмӗн тума ваттисем
Тӗреклӗ пулнӑ авалсем.

Хӑва хушшийӗсенче
Хурлӑхансем хуралӗҫ.
Ятне пӗлсе пӗтерес ҫук—
Хурт-кӑпшанкӑ ҫуралӗҫ.

Ҫерҫи пуҫ пек ҫырлисем
Куракпала явӑнӗҫ,
Савӑчӗсем ҫине пӑхса
Ачисем те савӑнӗҫ.

Ҫӗмӗрт сапакисем пулӗҫ
Тухья ярапийӗ пек,
Палансемпе чиесем
Мерчен сапакийӗ пек.

Шӑналӑксем карӗҫӗ
Шӑна-пӑван кӗресрен,
Пурте савӑнса ӗҫлӗҫӗ
Уйри тырри хӗвӗнсен.

Пахчисенче ӳсӗҫӗ
Ҫимӗҫӗсем тӗрлӗрен,
Пурте вӗсем пулнӑ-мӗн
Пуранӑҫа кирлӗрен.

Сысна ҫурисем некех
Хӑярӗсем ӳсӗҫӗ,
Сарӑ ҫу пек саралса
Тынӗсем те пиҫӗҫӗ.

Тӑрна куҫ пек шывӗсем
Куҫа шартса ярӗҫӗ,
Ҫарӑмсанӑн улӑхсем
Хисепсӗр ырлӑх парӗҫӗ.

Тыррисемпе пуллисем
Тулса тӑрӗҫ тусана*,
Ӗнисем те сӗтпе пӗрле
Тумлатаҫҫӗ ҫусене.

*) Пӳлмене.

Ялёсем те хула пек:
Ҫӳре-ҫӳре ывăнăн,
Епле кăмăл ан савăнтăр
Ҫарăмсан ҫинчи ывăлăн?

Ярмăрккипе пасарсенче
Пата пекех ҫын вёрет,—
Вырăс, тутар, чăваш, мăкшă
Пёр тăван пекех ҫӳрет.

Вуншар чуллă арманёсем
Аслати пек кёрлеҫҫё,
Ҫарăмсанăн ырлăхёпе
Хуйхисем те сирёлеҫҫё.

## II. Хăнтăрҫа

Ҫарăмсанпа юнашар,
Ҫавăн пекех илемлё,
Кукăр-макăр кукрăлса,
Нумай ялсен хушшипе

Юхать тата Хăнтăрҫа
Кёленче пек ҫуталса,
Нӳхрепсене тулаҫҫё
Куракёсем ҫу пулса.

Пахчисенче улмапа
Арпуссем те пиҫеҫҫё,
Еҫкисенче сăрисем
Кăпăкланса йӳҫеҫҫё,

Юхать Самар еннелле.
Аннăҫемён сарăлать.
Хăвалăхра хăмлисем
Ёне чёччи пек сарăлать.

Ҫак икё шыв тăрăшёнче,
Нумай ялсем хушшинче,
Чие ёшни тёлёнче
Чиешне* те савăнать.

---

*) Ял ячё.

Чиркӳ тӑрри тӑстанах
Йӑлтӑртатса курӑнать;
Чӑвашсемпе вырӑссем
Чиешнерте пурӑнать.

Ҫарӑмсана урлӑ каҫать
Чиешненӗн хӗрӗсем,
Хӑнтӑрҫи хӗрне те ҫитет
Ҫавӑ ялӑн ҫӗрӗсем.

Усрав вӑрман ту ҫинче
Тӗрлӗ курӑк ӳстерет,
Сывлӑх паракан шывне
Ҫарӑмсанӗ ӗҫтерет.

Улӑхӗсен утипе
Выльӑхӗсем выляҫҫӗ.
Тӗрлӗ тырӑ-пулӑпа
Ирӗк хирсем тулаҫҫӗ.

Чиешненӗн ырлӑхпе
Ачисем те выляҫҫӗ,
Аслӑ урам варринче
Савӑнаҫҫӗ, кулаҫҫӗ.

Вырӑс, чӑваш ачисем
Пӗрлешеҫҫӗ ерипе.
Ырлӑхӗсем нумайран,
Чиешненӗн хӗррипе,

Ҫарӑмсанӑн шывӗ пек,
Юхса иртет пурӑнӑҫ.
Хӑнтӑрҫанӑн кукри пек,
Темиҫене пӑрӑнӑҫ.

Иртет ырӑ кунӗсем,
Час ҫухалан тӗтӗм пек,
Ырлӑхӗсем пулсассӑн,
Чӑвашсем те этем пек,

Ҫӗре лекнӗ Ҫарӑмсанӑн
Сурӑхӗсен хӳрисем...
Хуран хӑрӑм пек хура
Ҫӗрӗсемпе хирӗсем.

Ыр учĕсем кĕçенеççĕ
Ута-сĕлĕ çинĕрен,
Юррисене калараççĕ
Праçниксерен çĕнĕрен.

Хĕлĕпеле турттараççĕ
Улăхсенчен утăсем.
Ачисене тĕрек парать
Ашла-çула пăтăсем.

Хунĕ-хунемĕшсем те
Савăнаççĕ кĕрÿшсемпе,
Хулăмсене илеççĕ
Хĕрĕсемшĕн çĕрĕшсемпе.

Йăвăç пÿртсен вырăнне
Кирпĕчĕрен лартаççĕ,
Пÿрт-çурт çинчи улăмне
Тимĕрпелен тартаççĕ.

Тĕрлĕ тырă капансемпе
Анкартисем тулаççĕ,
Çарăмсанăн ырлăхпе
Пурте тутă пулаççĕ.

Çарăмсанпа Хăнтăрçа
Пĕтермеççĕ çунтарса,
Шăвараççĕ халăхсене
Ырлăхпе савăнтарса.

Кăнтăрлана пăхаççĕ,
Атăла тухаççĕ,
Чул хуласен патĕнчен
Хвалын тинĕсе юхаççĕ.

Хусан, 1915.

## М. Ф. АКИМОВ

(*1884—1914*)

Михаил Федорович Акимов 1884 çулта Тутар республикинче, Пăва уездне кĕрекен Таяпара, чухăн хресчен çемьинче çуралнă. М. Ф. çемьи кĕтӳ кĕтсе тăранса пурăннă. Пулас писатель ача чухне хăй те кĕтӳ кĕтнĕ.

Кăнна Кушки ялĕнчи двухкласснăй шкултан тухсан, М. Ф. 1902 çулта Чĕмпĕрти Чăваш шкулне вĕренме кĕнĕ. 1905 çулта, вĕренекенсен забастовкине хутшăннăшăн, М. Ф—ча, К. В. Ивановпа пĕрлех, шкултан кăларса янă.

1906 çулта М. Ф. Акимов Хусана „Хыпар" хаçат редакцине ĕçлеме куçать, пулса иртекен лару-тăрусем çинчен халăха ăнлантарса статьясем çырать, хăй укçипе кĕнекесем çаптарса кăларать. „Хыпар" хаçата хупсан (1907 çул), М. Ф. Акимов Чĕмпĕре куçса суд органĕсенче ĕçленĕ.

Пĕчĕк чух тата вĕреннĕ çулсенче выçăллă-тутăллă пурăнни хăйĕннех тăвать: 1914 çулта М. Ф. Акимов çамрăклах туберкулез чирĕпе вилсе кайнă.

„Хыпарта" унăн çакăн пек илемлĕ произведенисем пичетленнĕ: „Шӳт туни" (1906 çул, № 23), „Ялти пурăнăç" (1907 çул, № 18).

М. Ф. Акимов произведенийĕсем Октябрьти социализмлă аслă революци хыççăн темиçе хут та пичетленсе тухнă.

---

*М. Ф. Акимов*

## ШӲТ ТУНИ

### Халлап

Пĕр хресченĕн кăçал çураки тунă чухне лаши вилнĕ. Хресченĕн лаша илме укçи çук. Хай хресчен унта-кунта пăхкалать, пуçне те хыçкалать, хуйхăрса та пăхать, пуртарах çынсенчен те ыйткаласа пăхать—укçа е лаша ниçтан та тупаймасть. Ĕç çийĕ. Çынсем сухалаççĕ. Кунăн ани ахалех тăсăлса выртать.

Хай кăшт шухăшласан, ку ăçта каймаллине тупать. Вĕсенчен инçех те мар пĕр пуян улпут пурăнать мĕн. Хресчен калаçма пĕлет. Вăл вĕренкеленĕ те пулнă; пурăнăç хыттине те курнă. Улпут патне пырать те калать:

— Манăн нуша килчĕ. Лаша ӳксе вилчĕ. Тархасшăн мана пĕр 50 тенкĕ укçа парччĕ,—тет.

Улпучĕ хытăскер пулнă. Вăл хресчене калать:

— Мĕнле укçа? Ăна ăçтан илсе парам эпĕ сана? Манăн укçа çук,—тет.

— Епле çук? Эсĕ улпут вĕт. Эсĕ уйăхне темиçе çĕр тенкĕ илсе тăрататăн.

— Укçине мана нумай ĕçленĕшĕн параççĕ.

— Мĕн ĕçленĕшĕн?..

Улпут çиленнипе хĕрелсе каять. Вăл кăшкăрса ярать:

— Эсĕ мĕнпит манран эпĕ мĕн ĕçленине ыйтса çӳрен? Эсĕ кам? Эсĕ хресчен, эпĕ тăхăршар сехет ĕçлетĕп! Çапах та укçа уйăхне виççĕр тенкĕ анчах параççĕ? Эсĕ мĕн ĕçлетĕн? Хĕл кунĕнче нимĕн ĕçлемесĕр кăмака çинче кăна выртатăн!

— Ыра çын, хытă ан шавла. Эпĕ сана пĕр сăмах калам ха. Эсĕ хăна: „Эпĕ улпут", тен. Сана улпут кам турĕ? Тура турĕ-им?

— Тура турĕ тесе каламастăп. Хам тăрăшнипе пултăм.

— Апла пулсан, эсĕ çак ху таврари çĕре те ху тăрăшнипе тупрăн пулĕ? Кунта халĕ санăн 800 теçеттин. Мĕн калăн-ши çак тĕлĕшпе?

— Эсĕ ăна санран илнĕ тетĕн-им? Эпир ăна чăнах та хамăр вăйпа тупнă. Пире ăна патшасем вăрçăсенче мухтава тухнăшăн панă.

— Вăрçăсенче эсир мĕнле мухтава тухрăр? Эсир пăшал йăтса çӳрерĕр-и? Тăшмана хирĕç хĕç йăтса тухрăр-и? Çук. Эсир вăрçăсенче нимĕн те туман. Халĕ те сирĕн пек улпутсем вăрçăсенче нимĕн тумасăрах мухтава тухаççĕ. Вĕсем ĕç тăвас вырăнне нумайрах вăрлама тăрăшаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем пуйсан хăйсем мухтава тухассине таса пĕлсе тăраççĕ. Сирĕн Куропаткин мĕн ĕçпе мухтава тухрĕ? Стессĕле пĕтĕм тĕнче мухтарĕ? Вĕсем укçа нумай вăрларĕç. Çавăнпа мухтава тухрĕç пулмалла! Эсир патшасем çумĕнче пурăнса ĕлĕк те çаплах еултавпа,е пусмăрпа хресчен çĕрне хăвăр çавăрса илнĕ. Эсир хăçан вăрçрăр? Вăрçăсенче кам юнĕ тăкăнать? Унта пирĕн юн юхать!..

— Ан çухăр! Тухса кай кунтан! Эсĕ, нимĕн пĕлмен çĕр хурчĕ, çапах манпа калаçма çӳрен тата!..

— Эсĕ мана нимĕн пĕлмен çын тесе вăрçан. Эпир пĕлменнипе кам айăплă? Кунта эсир айăплă. Эсир хăвăр ачăрсем валли, терлĕ йăнăрал ачисем валли гимназисем, реальнăй училищĕсем турăр. Вĕсене пурăнма таса, пысăк çуртсем туса патăр. Хăвăр кăна тĕнчере çынсем пулса пурăнатăр. Пире вĕренме ялсенче пĕчĕк шкул та тума чаратăр. Эсир пире вĕренмен тесе ан айăплăр. Эпир вĕренменнин айăпĕ сирте. Пĕтĕм халăх укçине пуçта-

ратӑр. Ҫапах та пире кӑшт вӗренме хушатӑр. Хырӑм выҫӑ пулсан, камӑн вӗренес килӗ? Малтан пире тӑрантарӑр, унтан тин вӗрентесси ҫинчен калаҫӑр.

— Сана кам выҫӑ пурӑнма хушать? Ӗҫле. Пурлӑхна эрех ӗҫсе ан пӗтер.

— Сире апла калаҫма намӑс. Эсир эрех ӗҫместӗр-им? Эсир ялан ӗҫ кутӗнче-им? Эсир тӗнчере пӗр кахалсем. Эсир эрех ӗҫсе укҫа пуринчен те ытларах пӗтеретӗр. Хӑвӑр укҫӑра пӗтерсен тататӑр. Анчах эсир харам укҫана, эпир тар юхтарса тупнӑ укҫана пӗтеретӗр...

Хресчен тата та нумай калама хатӗр мӗн, анчах улпучӗ, ҫиленсе ҫитнӗскер, ӑна тӗрткелесех кӑларса янӑ.

Хресченӗ те ҫиленмесӗрех юлман. Ӗлӗк вӑл хӑй ӑшӗнчи мӗнпур шухӑша нихӑҫан та каламан пулнӑ. Малашне вӑл улпут патӗнче каланӑ сӑмахсене халӑха калама пуҫланӑ. Халӑх вӑл мӗн каланине питӗ тӑнланӑ. Вӑл вӗт ӗлӗк те ӑслӑ ҫын вырӑнӗнче пулнӑ; урампа иртсе кайнӑ чух ялйышсем: „Ав ӑслӑ Симун каять", тесе юлнӑ...

Пайтах вӑхӑт иртрӗ, ака вӑхӑчӗ те ҫитрӗ. Симун та хӑй анине сухалаттарчӗ. Пурӑнӑҫӗ те тӳлекленсе каяс пек пулчӗ...

Анчах...анчах, улпутпа калаҫни ик-виҫ эрне иртсен, пӗрре ҫӗр варринче Симун ҫурчӗ умӗнче виҫӗ лашаллӑ ӑлав пырса чарӑнчӗ. Ӑлав ҫинчен виҫӗ ҫутӑ тумтирлӗ ҫынсем анчӗҫ те Симун пичче пӳртне кӗчӗҫ.

Кунта вӗсем нумаях тӑмарӗҫ. Час тухрӗҫ. Лав ҫине ларса пит хытӑ хула еннелле чуптарчӗҫ.

Кӗҫӗртен вара пирӗн Симун пичче курӑнми пулчӗ. Унӑн халӗ килте арӑмӗпе икӗ ачи ҫеҫ пурӑнаҫҫӗ. Ашшӗне ӑҫта илсе кайнине пӗлмеҫҫӗ.

Ку чӑнах та халлап. Ӑна чӑн текен ҫын—суя сӑмах калать.

1906.

## ЯЛТИ ПУРӐНӐҪ

### Пьеса сыпӑкӗ

Пӗчӗкҫӗ начар пӳрт. Ҫӗмрӗк чӳрече куҫӗсене ҫӗтӗк сӑкман чиксе хунӑ. Ҫанталӑк ирсӗр, кайранхи кӗркунне. Юпӑнса ҫавать.

Пӳртре: Хветӗр, 60 ҫулхи старик; унӑн арӑмӗ Пӑлаки, 45 ҫулта; Хветӗр ачи—Юманка, 12 ҫулта; Ухунька—ял старости, 40 ҫулхи ҫын.

Сӗтел ҫинче пӗр пӑлуштух эрех ларать. Пӑлаки сӑмавар лартма хатӗрленет.

**Хветӗр** (*эрех черккине тултарса*). Ухунька, эс ҫав ӗҫе туса пар ӗнтӗ пире. Илейместӗп вӗт укҫана. Пӗр ҫул

хурал тăтăм, пĕр пус алла кĕмест. Ху пĕлетĕн, асапсăр пулнă ĕç мар.

**Пăлаки.** Ăна халăхĕ те шухăшласа пĕлмелле ĕнтĕ. Çавăнта çулталăк хушшинче çумăрĕ те пулнă-тăр, тăманĕ те пулнă-тăр, чăлхи-çăпати те, тумтирĕ те пĕтнĕ пулĕ. Тĕкĕннĕ енне, тен, халăхĕ те мăшкăлать-и ĕнтĕ? Укçа тӳлетпĕр тесе мăшкăласа, лашине сутса ячĕç. Хурала килĕшнĕ чух 30 тенкĕ укçа, тата лаша та хамăра юлмалла килĕшнĕччĕ! Шалçи тултăрах ку Тимĕр Петĕрин. Вăл ĕмĕрех сутник пулса ларăп тет пулĕ...

**Хветĕр.** Е, Пăлаки, ытла калаçмасан та юрĕ: ак, Ухунька тăрăшсан, илĕпĕр-ха. Ан пăрах ĕнтĕ эсĕ те, Ухунька. Хур турĕç вĕт кăçал мана çав укçапа. Тавсие, Ухунька! (*Эрех ĕçет*).

**Ухунька** (*староста*). Тĕрĕсне калан, Хветĕр тете: калаçнинчен, вăрçнинчен нимĕн те тухас çук. Ыррăн кăна, хамăр кăна калаçса ĕçсе-çиер те, вара малалла мĕн тумаллине курăпăр. Алла алă çăвать, алă пите çăвать, теççĕ. Тĕрĕс вĕт, инке? (*Арçынсем эрех ĕçеççĕ. Пăлаки сĕтел çине сăмавар лартать, чей куркисем хатĕрлет*).

**Пăлаки.** Тĕрĕс çав, тĕрĕс пулĕ...

**Юманка** (*тĕпелте кĕнеке вулать, ыран валли урок хатĕрлет; хутран—кĕнеке çине пăхмасăр калать*). Иосифа тăванĕсем Египета сутсан... Иосифа тăванĕсем Египет хуçине сутсан... сутсан...

**Ухунька.** Ку сирĕн çыруçă пуласшăн-и мĕн?

**Хветĕр.** Çапла тетпĕр те-ха, мĕн пулĕ. Вĕренсе кăшт ăн илейи?

**Пăлаки.** Шуйттан ĕни, каллех тухса кайрĕ! (*Çиленсе кăшкăрать*). Юманка! Мĕн ларан тата эс? Кахал, курмастăн-и мĕн, ĕне урама тухса кайнине! Кунĕн-çĕрĕн кĕнекӳ çинче ларайман! Кус часрах! (*Çурăмĕнчен чышма тытăнать. Юманка чупса тухса каять*).

**Хветĕр.** Ерипенрех пулсан та юрĕ-çке, пĕртен-пĕр ачана та апла тăватăн.

**Пăлаки.** Йĕр ĕнтĕ, санăнах ачу. Ăшĕ йăтăнса анĕ-им ачăвăн? Вăл кӳпме аван пĕлет вĕт!

**Хветĕр.** Юрĕ-çке ĕнтĕ, ылханмасан та.

**Пăлаки.** Асту, ачуна ылханаççĕ, йĕр!

**Хветĕр.** Çак шуйттан тараканĕсене курмăттăм пĕр! (*Сĕтел çинчен тараканa çапса ӳкерет*).

**Ухунька.** Пирĕн те нумай-ха вĕсем. Тепле пĕтерес

анчах. (*Кăшт чĕнмесĕр лараççĕ. Чей хатĕр. Хветĕр куркасене тултарса лартать. Унтах эрех тултарать*).

**Хветĕр.** Тата пĕрерĕшне сыпар пулĕ.

(*Эрех ĕçеççĕ. Пăлаки ку вăхăтра ялан тĕпелте савăт-сапа тирпейлет*).

**Ухунька.** Кăшт çыртмалли пулсан аван пулĕччĕ те, инке!

**Хветĕр.** Пăлаки, пирĕн çав шăрттанласкер пур марччи?

(*Пăлаки тула тухса кайса шăрттан илсе кĕрет. Çиеççĕ, ĕçеççĕ*).

**Хветĕр.** Ухунька, тата асăнтарам-ха сана. Эсĕ пире çав укçана епле те пулсан илсе парсам ĕнтĕ.

**Ухунька.** Эй, Хветĕр тете, ăна мĕн асăнтармалли пур! Саншăн, Хветĕр тете, темĕн тума та хатĕр. Эпĕ мĕншĕн староста? Çавăнпа вĕт! Пиртен асли кам пур унта? Ĕçе хамăр епле тăвас тенĕ—çапла тăватпăр!

**Хветĕр.** Вăл çавă ĕнтĕ.

**Ухунька.** Ху пĕлетĕн, Хветĕр тете. Эпĕ çĕнĕ çултан вара кăна старостăна лартăм, çапах та çын умĕнче намăса юлнă ĕçĕм çук. Кунта та сана суйса намăслă пулас килмест. Эпир ăна тума пĕлĕпĕр. Ак кĕрхи куланай пуçтарăпăр та, çав куланай укçинчен тӳрех тивĕçлине парăпăр.

**Хветĕр.** Пит те тавтапуçчĕ те сана çапла пулсан.

**Ухунька.** Хветĕр тете, паçăрах каларăм: алă алла çăвать, алă пите çăвать, теççĕ.

**Хветĕр.** Пĕр-пĕринпе пурăннине мĕнле калан ĕнтĕ? Малашне те çапла пурăнмалла пултăрччĕ. (*Эрех тултарать*). Ĕçер-ха эппин тата. (*Ĕçеççĕ*). Пăлаки, кунта тĕпĕнчен сăрăхтара пуçларăмăр, тата кăшт тупаймăна?

**Пăлаки** Ăçтан тупас тата ман? Çук вĕт ĕнтĕ урăх.

**Хветĕр.** Якку кĕрӳ патне каçса пăх-ха. Унăн пĕрер çур кĕленче пулми?

**Пăлаки.** Çын патне çӳре тата, саншăн çынсем хатĕрлесех хунă пулĕ.

**Хветĕр.** Кирлĕшĕн-çке ĕнтĕ, ĕçшĕн: çыншăн мар—хамăршăн.

**Ухунька.** Е, инке, манщăн кăна кайса кил-ха ĕнтĕ. Хветĕр тете каларăшле, хăвăршăн вĕт, çыншăн мар.

(*Пăлаки тухса каять. Кăшт тăрсан, килсе кĕрет те, сĕтел çине çур кĕленче эрех лартать, унтан савăт-сапа пуçтарма тапратать*).

**Ухунька.** Епле инке матур! Кайса килни те сисĕнмерĕ,

**Пăлаки.** Ĕçе кăна туса парăр, ăна çăмăл кайса килĕпĕр.

**Ухунька.** Инке, ăна-кăна пĕртте ан калаç. Ĕçĕ пулать... Эпĕ тусан пулать. Вăй—камра? Вăй—пирте вĕт... Ну, Хветĕр тете, сыпар пулĕ пур чухне! (*Ĕçеççĕ. Юманка хăшăлтатса чупса кĕрет те хавхаланса илет*).

**Юманка.** Атте, анне! Леш вĕçрен шăнкăравпа, парпа чуптарса кĕчĕç... кăлавасем пулмалла!..

**Ухунька.** Э-э-э, çитрĕ пулĕ кăлава пумушникĕ Петр Иванччă: килмеллеччĕ çав вăл... Апла пулсан каям, сыв пулăр ха эппин пĕр вăхăта...

**Хветĕр** (*çул курки тыттарса*). Айăп туса ан кай ĕнтĕ, Ухунька. Пире ан пăрах.

**Ухунька** (*ĕçсен*). Сыв пул-ха, Хветĕр тете, манас марччĕ. Мансан ĕç йĕрки юрăхсăр вара вăл. (*Тухса каять*).

**Пăлаки** (*Юманка енне пăхса*). Ял йытти, ăçта çĕтсе çӳрерĕн эсĕ ĕне хăвалама кайсан? Сан аякку пĕрчине ватайман мĕн-ха кăштах!

**Юманка.** Эпĕ Петрухха патне кĕнеке вулама кайрăм.

**Пăлаки.** Ак кăшт мăшлатса тăр-ха, турчăка илсе ăшаличчен. Ан часрах тĕпсакайне картахви илме! (*Юманка тĕпсакайне анать Пăлаки—вак тĕвек ĕç тукалина хутран*). Çĕр ĕç—алă-ура çыхланать, ларса канма вăхăт та çук. Вĕсем пĕри—тăравми пыра тăрантарма кĕрĕшнĕ, тепри—ял тăрăх чупасран пушă мар!..

**Хветĕр.** Вара, çынна кăшт йăпатмасăр пулмасть ĕнтĕ. Хамăр илейместпĕр вĕт-ха çапах!

**Пăлаки** Ан калаçса тăр ман умра! Пулмасть санран, пулмасть. Кĕтсе çӳре Ухунькунтан, çав эрех лакăмĕнчен! (*Хветĕр тухса каять*). Эсĕ тĕпсакайĕнче çывăратăн-и мĕн? Тух часрах!

1907.

## Г. А. КОРЕНЬКОВ

(1884 ç. çуралнă)

Гавриил Алексеевич Кореньков 1884 ç. Тĕрлемес ялĕнче (Куславкка рэйонĕ, Чăваш АССР) вăтам хресчен çемьинче çуралнă. 1892—1895 çулсенче ялти шкулта вĕреннĕ. 1903 çулта Чĕмпĕрти (халĕ Ульяновск) Чăваш шкулĕнче вĕренсе тухса, хăйсен ялнех учитĕле кĕнĕ. Ку шкулта ĕнтĕ вăл пĕр вĕçĕмренех 42 çул хушши ĕçлесе пурăнать.

Г. А. Кореньков активлă учительсенчен пĕри. Хăйĕн паха ĕçĕсемшĕн вăл Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕнчен Хисеплĕх грамоти илнĕ.

Кореньков Чĕмпĕрти Чăваш шкулĕнче вĕреннĕ чухнех литературăпа интересленме пуçланă. 1906 çулта унăн „Хыпар“ хаçатра „Хальхи пурăнăç“, „Вĕренме чĕнни“, „Ашшĕ пилĕ“ ятлă сăвăсем пичетленсе тухнă. Çав çулсенчех вырăссен чаплă юптаруçин И. А. Крыловăн баçнисене куçарма тытăннă.

1930 çулсенче Г. А. Кореньков пуçламĕш шкулсенче вĕренмелли учебниксем çырнă.

---

*Г. Кореньков*

## ХАЛЬХИ ПУРĂНĂÇ

Ачисем те пĕчиккĕ ун,
Упăшки те тĕрмере.
Çанăх, кĕрпе кашни кун
Пĕтсе пырать пŷлмере.

Унăн мĕнпур шанчăкĕ
Уйри тырă çинчеччĕ,
Анчах ани татăкĕ
Ытла, ытла хĕсĕнчĕ.

Ансăрне те ансăр вăл,
Хыттине те хытă вăл.
Акнă тырри ўсмерĕ,
Пŷлме тĕпне кĕмерĕ.

Ани çинчен кĕнине
Çисе ярса пырать вăл;
Макаçейрен илнине
Куланая сутать вăл.

Малаллине асанса
Куççулĕпе йĕрет вăл.
Нимĕн тума аптраса
Ыйткаласа çӳрет вăл.

Пуян çынсем чей ĕçеç...
Унăн выçă ачисем
Сивĕ шывпа кӳпĕнеç...
Эх, мĕскĕнсем, мĕскĕнсем!

Эсир мĕнчул йĕретĕр,—
Сирĕн йĕни шутра мар.
Эсир мĕнчул ĕçлетĕр—
Çапах эсир тутă мар.

Сире çынсем çапсан та—
Эсир ăна чăтмалла.
Сире мăшкăл тусан та—
Сирĕн шăла çыртмалла.

Мулли* сире, выльăх пек:
„Эй, эй!" тесе çеç калать;
Алăк панчи шăпăр пек,
Хăй аллинче вылятать.

Хăçан пĕтĕм этемсем
Пĕр тан пулса çитĕç-ши?
Хăçан хутаç çакнисем
Ăна майран хывĕç-ши?

Хăçан халăх çутăлса
Çĕн пурнăçа кĕрĕ-ши?
Хăçан пĕр пек саванса
Уйра пĕр пек ĕçлĕç-ши?

1906.

---

*) Пуянни.

*Ваçça Аниççи*

## ЯЛТА

Ялта лăпкă, пит лăпкă...
Йытăсем те вĕрмеççĕ.
Вĕсем начар, вĕсем типшĕм,
Вĕрме хватсем çитмеççĕ.

Пĕр тĕттĕм, начар пӳртре
Ача макăрни илтĕнет...
Вăл начар, шурса кайнă,
Шăммисем кăна юлнă.

Амăшĕ унăн чирлĕ,
Вырăн çинчен тăраймасть;
Ашшĕ унăн тĕрмере,—
Çут ирĕке тухаймасть.

Ачисем макăраççĕ,
Вĕсем çиме ыйтаççĕ,
Ним тăвайман майĕпе
Пӳрнисене ĕмеççĕ.

1907.

## Й.

* * *

Пирĕн ялта пур пуян,
Ячĕ унăн Микихвĕр,
Хăй вăл юрăхсăр куштан,
Эсир ăна пĕлместĕр,
Эпир аван пĕлетпĕр,

— Чу-чу! Микихвĕр,
Ăçта каян, Микихвĕр?
— Вулăс пуху пур теççĕ,
Старшинана кĕресчĕ.

— Е халăх хумасан?
— Вуна четвĕрт ĕçтерĕп.
— Чу-чу, Микихвĕр,
Ăçта каян, Микихвĕр?

— Прихут пуху пур, теççĕ,
Старостăна кĕр, теççĕ.
— Е халăх хумасан?
— Эп кĕмесен, кам кĕтĕр?

— Чу-чу! Микихвĕр,
Ăçта каян, Микихвĕр?
— Çука çиме параççĕ,
Пĕçерме хамăн илесчĕ.

— Е халăх памасан?
— Лекĕр паратъ-ха мана.

1907.

*Я. В. Турхан.*

## ВАРУÇÇИ

Кĕркуннехи кунсенче,
Çĕр вăрăма кайсассăн,
Мирук пичче пÿртĕнче
Улах ларнă мĕн хĕрсем.
Хĕрлĕ хĕрсем хушшинче
Чи илемли—Варуççи;
Çут тĕнчере пĕр тĕнче...
Пĕрре çула варринче
Хĕрлĕ хĕрсем пухăнса
Мирук пÿрчĕ умĕнче
Çĕрĕпеле янăратса
Вăй-кĕввисем каланă,
Варуççине хурланă:
„Эй, Варуççи, Варуççи,
„Эпир ĕлĕк юратсан
„Эсĕ пиртен кулаттăн;
„Кĕвĕç пиртен, Варуççи—
„Ванюк сана юратать,
„Ыталаса чуптăвать"...
Кĕрхи кунсем çитсессĕн,
Çурçĕр иртсе кайсассăн,
Вăрăм шывĕ* хĕрринче,
Шап-шар уйăх çуттинче
Çын мĕлки пек курăнать,
Гетре çинче палăрать.
Сиввĕн вĕрет сивĕ çил,—
(Унтан эсĕ сасă ил)—
Сивĕ çил вĕрнĕ майĕпе
Çав çын калать чĕлхипе:
Атте-анне çуратрĕ,
Атте-анне чун пачĕ,
Чун пачĕ те ÿт пачĕ,

---

*) Вырăсла—Урема. Шыв ячĕ.

Анчах пăхма пĕлмерĕ.
Ӳсессине ӳсрĕм те,
Хĕрарăм сăнне илтĕм те,
Мана телей пулмарĕ:
Сар çулçă пек сарăхрăм,
Хĕн-хур курса хуралтăм.
Хĕнпе ӳссе хĕр пултăм,
Вунçич çула тултартăм.
Килте хытă ĕçлеттĕм,
Ĕç айне ӳксе вилеттĕм,
Анчах атте-аннерен
Ăшă сăмах илтмерĕм.
Турă хушнă йĕркипе,
Васук ачи юратрĕ,
Чăвашсенĕн йăлипе
Вăл хăтана çын ячĕ.
Атте, ыйтсан, памарĕ,
Анне мая каймарĕ;
Иккĕш пĕр канаш пулчĕç,
Çапла каласа чарчĕçĕ:
„Ача-пăча хыççăн çӳресе
„Шыва кайса ан вилер,
„Ача-пăчана ӳстерсе
„Çурта сиен ан кӳрер;
„Çирĕм çула çиттĕр-ха,
„Çурта усă кӳтĕр-ха;
„Васукĕ те çук ĕнтĕ,
„Ачин мĕскер пур ĕнтĕ?
„Васук хăтан кил-çуртне
„Ырă çын пырса кĕрес çук;
„Эпир кайса кĕрсен те,
„Унта йĕрки пулас çук.—
— Çапла канаш турĕçĕ,
Ачин ĕмĕтне татрĕçĕ.
Ют пулсассăн пĕр ĕçчĕ,
Тăван ачине хур турĕç,
Хытă чĕрине юрарĕç,
Ачин пурăнăçне пĕтерчĕç".

Ашшĕ-амăшĕ Ванюка
Урăх хĕре çураçрĕç,
Ирĕксĕрлесе çураçрĕç...
Хуйхă çирĕ Ванюка...
Халĕ кинне хĕнеççĕ...

Вилнĕ Ванюкшăн йĕреççĕ:
„Эй, аттемçĕм-аннемçĕм,
Мана çуратнă пĕр чунçăм!
Сыв пулăр та пур пулăр,
Пуянлăхпа савăнăр,
Пурте ман пек ан пулăр,
Ачăра тек ан асăнăр.
Эсир мана курас çук,
Пуян çынна парас çук,
Унăн ĕçкине ĕçес çук,
Эпĕ тек сире курас çук...
Ах, çанталăк, çут тĕнче,
Эсĕ хуралса килетĕн,—
Вăрăм шывĕ хĕрринче
Эсĕ, чунăм, пĕтетĕн...
Манăн чĕрем çунать-çке,
Вĕри çилпе пĕтет çке..."
Тепĕр кунне каç пулсан,
Шывран хĕр вилли кăларсан,
Кантур килнĕ, суд тунă,
Ялти çынсене пуçтарнă,
Тĕплесе ыйтса хут çырнă,
Çавă ялтах сывăрнă...

1906.

*Тӑван ялсем Сергей*)*

## ШӐПЧӐК ЮРРИ

Ах, тӗрмере тӗттӗм-ҫке...
Сывлама та пит пӑчӑ;
Ҫан-ҫурӑм та шӑнать-ҫке,
Пӗтӗм чуна хӑрушӑ...

Ҫемҫе тӳшек вырӑнне
Йӗпе улӑм сараҫҫӗ:
Тутлӑ ҫимӗҫ вырӑнне
Шывпа ҫӑкӑр параҫҫӗ.

Эх, аллӑмсем, урамсем!
Эсир тимӗр аллинче.
Ах, чунӑмҫӑм, айван чун,
Ҫунан тӗрме вутӗнче.

Эп ҫакӑнтах пӗтеп пуль,
Киле ҫитсе ӳкес ҫук;
Ак тӗрмере вӑтӑр ҫул...
Ачамсене курас ҫук...

Ыр ачамсем, пепкемсем
Эп таврӑнасса кӗтетре? ,
Тӑванӑмсем, тантӑшсем,
Эп чӗррине пӗлетре?..

Эп, чунӑмсем, вилмен-ха,
Сывлӑш пур-ха кӑкӑрта.
Анчах сире курмашкӑн
Парӗ-и-ха вӑл мана...

Пирӗн тӗрме пит ҫӳлӗ;
Чӳречисем тимӗрлӗ;
Вӗҫен кайӑксем вӗҫеҫҫӗ,
Чӳрече патӗнчен иртеҫҫӗ.

*) Биографийӗ паллӑ мар.

„Ăмăрткайăк, ăçта каян?
Чĕрече çине лар халĕ,
Ирĕкри сынсен пурнăçне
Юр юрласа пар халĕ...“

„Чĕречĕ çине лармастăп,
Сан чĕречĕ пит кĕçĕн;
Юр юрласа памастăп,
Çын пурнăçне пĕлместĕп“.

„Акăш, акăш, ăçта вĕçен?
Чĕрече çине лар халĕ;
Ирĕкри сынсен пурнăçне
Юр юрласа пар халĕ...“

„Юр юрласа памастăп,
Эпĕ шывра çӳретĕп:
Этемсенĕн пурнăçне
Çавăнпа эп пĕлместĕп“.

„Çерçи, çерçи, ăçта вĕçен?
Чĕрече çине лар халĕ;
Ĕлĕкхи сынсен пурнăçне
Юр юрласа пар халĕ!“...

„Чĕлĕк-чĕлĕк! Вăхăт çук!
Иван пичче арманта
Тăкса яна ырашне,
Çавна çиме каяп-ха!“

Сасартăках çавăн чух
Вĕçсе пырать пĕр кайăк,
Пĕр чĕнмесĕр-тумасăр
Чĕрече çине ларать.

„Ах, чунăмçăм, шăпчăкăм!
Эсĕ аван пурнатни?
Этемсенĕн пурнăçне
Юр юрласа кăтартатни?“

„Эпĕ юрă юрлăп-ха;
Этемсенĕн пурнăçне,
Сана, ырă айвана,
Веç каласа парăп-ха..,

Енер ирех, çурăмпуçпе,
Эп карăм сирĕн пата;
Лартăм шĕшкĕ йывăç çине,
Тытăнтăм юрă юрлама.
Сирĕн пÿртре çывратчĕç,
Чÿречисене уçнăччĕ.
Санăн кĕçĕн ывăлу
Хăй ыйхинчен вăранчĕ те:
„Атте ăçта?"—терĕ те—
Йĕчĕ ячĕ куççульпех..."

„Юрла, шăпчăкăм, юрла!
Юрла, чунăмçĕм, юрла!..
Сан сассуна илтем-ха;
Ачасем çинчен пĕлем-ха;
Вĕсем маншăн йĕреççĕ пуль,
Эп те вĕсемшĕн йĕреп-çке...
Юрла, шăпчăкăм, юрла!
Юрла, чунăмçăм, юрла..."
„Эпĕ татах юрлăп-ха,
Сана, ырă тăвана,
Веç каласа парăп-ха...

Сана пурте кĕтеççĕ,
Саншăн пурте йĕреççĕ.
Пурте сана саваççĕ,
Сана курасшăн ăвăнаççĕ.
Анчах, тăванăм, эс ан йĕр.
Эсĕ айăпсăррине
Пурте вĕсем пĕлеççĕ.
Сана хупнă тĕрмерен
Каллех вĕсем кăларĕç.
Çакă вилĕм-тимĕртен
Сана вĕсем хăтарĕç.
Эсĕ тухăн ирĕке,
Тухăн таса сывлăша,
Сана кĕтекен ачусем
Сана курса хĕпĕртĕç,
Сана кĕтекен чунусем
Ытласа чуптăвĕç.

1907.

# ЯЛТА

Акӑ иртрӗ пайтах ҫул.
Ҫулпа иртсе пынӑ чух
Выртса канса ҫимешкӗн
Кӗтӗм эпӗ пӗр яла.
Пӳрчӗ кивӗ, ҫӗрӗшнӗ,
Асанне пек чалӑшнӑ.
Мӗнпур сакки, урайне
Урлӑ-пирлӗ ҫӳп-ҫапӑ
Тулса ларнӑ тӑп-тулли...
Тӑрӑшакан эрешмен
Хӑйӗн вӑрӑм ҫиппипе
Пӳртӗн кӗтессисене
Каркаласа пӗтернӗ.
Сывлӑш пӑчӑ, хӑйӑ шӑрши;
Авӑрлакан ӳсӗрет;
Ачи хытӑ макӑрать,
Хӑйӗн чирлӗ сассипе
Ӗҫлекене пит чарать.
Ан йӗр, ача, хыт ан йӗр!
Аннӳсене пит ан чар...
Сан сассӑна илтеҫҫӗ,
Сана вӗсем шеллеҫҫӗ.
Халӗ сана йывӑрне
Пурте вӗсем пӗлеҫҫӗ.
Эсӗ чирлӗ пулсан та,
Сана тытма вӑхӑт ҫук.
Ан йӗр, ача, хыт ан йӗр!
Аннӳсене пит ан чар...
Эсӗ халӗ пӗлместӗн,
Пӗр-ик ҫултанах сисӗн:
Ӗҫе чарӑнса тусан,
Хресчен выҫӑхсах вилет:
Унӑн ҫӗрӗ пит сахал,
Пару-илӳ пит пысӑк.
Ан йӗр, ача, хыт ан йӗр!
Аннӳсене пит ан чар...
Пару-илӳ тӳлесен,
Хӑйсем выҫӑ юлсан та,
„Ыр ҫын" хисепне кӗрӗҫ.
Тӳлесе татаймасан,

Тӗрме чурисем пулӗҫ...
Ан йӗр, ача, хыт ан йӗр!
Ӗҫлемешкӗн пит ан чар...
Сана йывӑр, эс чирлӗ,
Ҫапах пӑртак тӳс халӗ.
Чипер ӳссе ҫитсессӗн,
Ырӑ, ӑслӑ ҫын пулса,
Ҫемйӳсемшӗн тӑрӑшса,
Тӗплӗрехкӗн шухӑшла:
Пирӗн хресчен юрлине,
Ҫимеллисем ҫуккине—
Кам айӑплӑ, кам тӗрӗс,—
Шухӑшласа пӗтерсен,
Вӑл тӗрӗсех пулсассӑн,
Вӑйна пӗртте ан шелле,
Хӑвӑн ӗҫне ху мелле.

1907.

## ХУРА ХАЛĂХ

Çуркунне. Çутă кăвак
Пĕлĕтрен хĕвел хĕртет;
Çуттипе шурă юра
Чуптуса ирĕлтерет.
Пур енчен те çырмасем
Шавласа, шăнкăртатса,
Выляса йăлтăртатса,
Хĕвеле хирĕç кулса,
Чупаççĕ сиккипеле
Аната, амĕш патне;*
Амăшне—хулăн пăра
Çĕмĕрсе таткаласа
Хĕллехи тыткăнлăхран
Хăтăлмашкăн пулăшма,
Амĕшпе инçе çула
Шавласа та кĕрлесе
Харăс тапранса кайма
Васканă пек туйăнать.
Пур тĕрлĕ вĕçен-кайăк
Çуркуннешĕн савăнать.
Çерçисем хĕвел питне
Пухăннă та пĕр-пĕрне
Пĕрмаях чĕвĕлтетсе
Хăйсен савăнăçĕ çинчен
Каласа кăтартаççĕ.
Тăри те, хирте, çӳлтен
Тĕнчери çуркуннехи
Мĕнпур илеме курса,
Ытараймасăр, ăна
Мухтаса юрă юрлать.
  Эс анчах, хура халăх,
Тĕнчери пур чĕрĕ чун
Савăнакан вăхăтра
Тамăкри пек пурăнан!
Пăрахăç тăлăх ача,
Ачасем выляна чух,
Ачасем савăнна чух,
Пăранса аяккалла
Хурланса, йĕрсе тăрать, —
Эс те çав ача пекех.
Икĕ куç сана тĕнчен
Илемне курма паман,
Куççулли тăкма панă.
Чĕрӳне савăнма мар,
Хуйхăрса çунма панă;
Савăнас шухăш сан çук,
Шухăшу сан пĕрмаях
Пĕр татăк çăкăр çинче.
Тăсăлса ӳкичченех
Ĕçлессе ху ĕçлетĕн,
Çапах та тирпейлĕрех
Кил-çурт та тăваймастăн,
Тутă та пулаймастăн!
  Пӳртӳ—улăм тăраллă,
Ишĕлес пек тайăлнă;
Хăш куçне кипке карнă,
Виçĕ-пĕчĕк чӳречеллĕ
Аслаçу лартнă пӳртӳ
Утмăлти карчăк пекех.
Пӳрт-алăкне уçса
Çил-тăвăл, йыт-качăка
Кĕресрен анчах тунă
Хӳш пек пăлтăрна куран.
Çуклă-пурлă япала,
Пукравчен тырă хума
Мунча пек кĕлечĕ пур.
Малалла—тайлăк ампар
Витĕр куранса ларать;

---

*) Ку поэмăна кам çырни паллă мар.

Ун айне пĕр кĕтессе
Кăрманлă çуна лартнă.
Кĕтессе, ампар çумне,
Вĕрлĕк хапхаллă çатан,
Пĕчĕккĕ, лутра карта
Аслăкла витсе тунă.
Карта хапхи патĕнче,
Хĕргекен хĕвел çинче,
Халь ӳкес пек лашупа
Хеç пекех юлнă ĕнӳ—
Пуянран сутăн илнĕ
Çинчĕк улăм чăмлаççĕ.
Картишне ытти енчен
Çил тайнă çатан пӳлнĕ.
Çатану урлă пăхать:
Пахчăвăн леш вĕçĕнче
Анкарти пушă выртать;
Пĕр йĕтем юпи анчах,
Тăлăх пек, тайлăк ларать.
Алăксенче пĕшкĕнсе,
Сан пӳртне курма кĕреп.
Сывлама та çук пăчă.
Хăш куçне кипке карнă
Виç çĕмрĕк чӳречерен
Пĕринчен хĕвел çутти
Урайне кĕрсе ӳкет;
Хĕвелĕн çав çуттинче
Явăнсах тусан çӳрет.
Урайне пылчăк хытнă.
Хăмисем хушшисене
Тĕлĕпе саплăк çапнă.
Кăмаки мăкăрăлнă.
Икĕ сак кĕтессинче
Пĕр ури хуçăк сĕтел,
Пĕчĕккĕ кивĕ тенкел.
Сак çине, пĕр кĕтессе,
Çĕтĕк-çурăксем çине,
Пăрахнă икĕ çӳхе
Хуралнă питлĕ минтер.
Пăтаран алăк патне
Таткаланнă пĕр кĕрĕк,
Ик сăкман, çурăк чаппан,
Ҫаларса ывăтмалли
Пĕр çĕлĕк çакса хунă.
Эй, асап курман çынсем!
Çакăн пек пӳртре эсир
Выльăхăра та усрамăр.
Халăха анчах эсир,
Выльăхран кая хурса,
Витерен начар пӳрте
Питĕрсе хупса лартрăр!..
Кăмака çинче карчăк
Сĕтĕк-çурăк айĕнче
Йынăшса чирпе выртать.
Килхуçийĕ тĕпелте
Çăпата туса ларать.
Улача кĕпе-йĕмпе,
Уринче çĕтĕк тăла.
Чĕркуççийĕ хушшине
Хĕстернĕ çăпатине,
Малалла пуçне чикнĕ.
Хĕрĕхе те хăй çитмен.
Çӳç-сухалĕ шуралать.
Пит çăмартисем путнă.
Сăмси çех тăрса юлнă.
Курпунĕ пысăк тухнă:
Шăммисем саланасран
Тирĕ çеç тытса тăрать.
Çывлăшне çавăраймасăр
Час-часах хăй ӳсĕрет,
Ӳсĕрсе çăра сурчăк
Урайне сурса таптать.
Кĕтесре, алăк панче,
Кил хуçийĕн арăмĕ
Шурă пир тĕртсе ларать.
Пуçĕсенче тĕссĕр явлăк,
Çийĕнче çĕтĕк кĕпе;
Пĕркеленнĕ, шăмăллă...
Йывăр ĕç тарĕ тухнă.
Ун панче, хуп сăпкара,
Кипкесенĕн айĕнче
Кăкăр ачийĕ выртать.
Турăшсен кĕтессинче,
Ашшĕнчен-амăшĕнчен
Аякка уйăрăлса,
Икĕ пӳрнине хыпса,

Тиллĕкри хĕр, çăкăршăн
Пин йĕме чарăннăскер,
Сарăрах çÿç хушшинчен
Типеймен куççуль витĕр
Ик хĕрлĕ куçĕпеле
Хуйхăрса пăхса тăрать.
Питĕнче тумлам юн çук,
Тутисем кăвакарнă,
Майĕнче—шăнăр паллă,
Хулă пек алли-ури;
Пĕчĕк тăл-пĕвĕ çине
Çĕтĕлнĕ кĕпе çакнă.
Çил вĕрмен, хĕвел курман
Тин шăтнă сарă чечек
Сарăлма пуçличченех
Çав хĕр пек типме пуçлать!
Хĕр, выçça чăтаймасăр,
Кăшт тăрсан „çăкăр" тесе,
Хурланса йĕрсе ячĕ...
Хĕр енне пуçне пăрса,
Шаккаса шĕшлипеле,
Кăшкăрса ашшĕ ячĕ:
„Ан ула, выçă кашкăр!
Калана пĕрре сана,
Кăнтăрла çийĕн, тесе!
Ак, илĕп те чăпăркка!.."
Хĕр йĕме чарăнаймасть,
Хĕр тата хытă йĕрет...
Калăплă çăпатине
Пăрахрĕ те хĕр ашшĕ
Урисем çине тăчĕ.
„Чарăнмастăн-и-ха эс?!"—
Терĕ те чăпăрккине
Пăтаран ярса илчĕ,
Чăпăркка аврипеле
Шаккаса, ача патне
Çывхарса тата хытă
Пуçларĕ ак кăшкăрма:
„Чарăн!.. Чарăн!.. унсăрăн
Паçăрхин пек кастарăп!.."
Кăмака çинчи карчăк
Çав шава чăтаймарĕ:
„Еррипе!.. Пуç çурăлать!..
Ах!.. Часрах вилесчĕ-çке!..
Эй асап!..—терĕ. Хай хĕр
Ашшĕнчен хăранипе
Чарăнчĕ ирĕксĕрех,
Ик çинçе пӳрнисене
Çăварне татах хыпрĕ;
Тăлăх пек, пӳрт кĕтесне
Хытăрах хăй çыпçăнчĕ,
Тытăнчĕ кăнтăрлахи
Апата чунтан кĕтме!..
Хĕр ашшĕ чăпăрккине
Чĕнмесĕр çакса хучĕ,
Ахлатса çăпатине
Еррипе ярса илчĕ,
Пĕр сăмах та чĕнмесĕр
Тытăнчĕ каллех тирме...
Сасăпа кăкăр ачи
Вăранса йĕрсе ячĕ;
Амăшĕ сиксе тăчĕ,
Сăпкана ярса тытса,
Хăй хĕрне вăрçа-вăрçа
Сулламашкăн тытăнчĕ.
„Ня... ня...ня!.. Çывăракан
Ачана, мур, вăратрĕ!
Чирлесе вилсем часрах!
Пурĕпĕр выçă вилĕн!
Хăна та канлĕ пулĕ,
Ытлашши пыр та чакĕ!..
Ултăшĕ çапла выçах
Кăшкăрса, йĕрсе вилчĕç!..."
Ку тĕлте хĕр амăшĕ,
Ачине сулла-сулла,
Тытăнчĕ пĕр аллипе
Ик куçне шăлкалама...
Выçă хĕр куç айĕнчен,
Кĕтесрен тапранмасăр,
Ик çинçе пӳрнисене
Çăвартан кăлармасăр,
Йĕрекен амĕш çине
Тытăнчĕ пĕрмай пăхма.
Килхуçийĕ вăраммăн
Сывласа ячĕ; пуçне
Çĕклемесĕр хăвăртрах

Шак-шак! тытанчӗ тирме...
Пӗчӗкҫӗ ачи йӗрет...
Амӑшӗ куҫӗсене
Чарӑнчӗ шӑлкалама:
„Ня... ня... ня... ҫӑкӑр!...
ҫӑкӑр!...
Халӗ те кун каҫиччен
Виҫ-тӑвата хут ҫиен!
Ав, эпир аҫупала
Ирпе каҫ анчах тутӑ!..
Ня... ня... ня... Ав халӗ те
Вырмалла пачӑшкаран
Илнӗ вунӑ пӑт тырра
Час ҫисе пӗтертӗмӗр!
Сӗтелти ҫур ҫӑкӑртан
Ытлашши пӗрчӗ те ҫук!..
Ня... ня... ня... Ку мӗн тата
Сулласан та ҫывӑрмасть?!
Ӗҫлеме вӑхӑт памасть!
Ҫак пире пӗтерсессӗн
Ҫын валли тӗртесшӗнччӗ...
Кил, эппин, кӑшт ҫитерем!
Пӗр вӑрансассӑн вара
Ҫывӑрттарасси асап!..
Ай-уй... мӗскӗнӗн епле
Ҫиесси хытӑ килнӗ!
Пӗчӗкҫӗ аллисемпе
Чӗччӗме ярса тытрӗ,
Васкаса, чӗтӗресе
Ҫӑварне часрах хыпрӗ!..
Эх, ку ҫук пурӑнаҫӗ!
Ҫак вӑрӑм кун хушшинче
Ҫирӗм хут ӗмет пулӗ,
Ҫапах та тӑранаймасть!..
Хӑр типӗ ҫӑкӑр ҫисе
Кӑкӑрӑм типсе ларчӗ...
Парӑттӑм ӗмчӗк туса—
Ҫук укҫа сахӑр илме!“...
Арӑмин сӑмахӗсем
Килхуҫиӗн чӗрине
Ҫӗҫӗ пек хырнӑ пулас:
Чӑтаймасӑр вӑраммӑн,
Ассӑн сывласа ярса
Арӑмне часрах пӳлчӗ:
„Мӗн тума пултарӑпӑр?!
Ҫӗр сахал; ҫук тырруна
Куланай пама сутан;
Нумайрах акас тесен,—
Ҫӗр илме пӗр пус та ҫук...
Ӗҫлесе укҫа тӑвас—
Ӗҫ тупма ӑҫта ҫӳрен?
Кӗркунне ав хулана
Ӗҫлеме кайрӑмӑр та,
Каялла таврӑнтӑмӑр—
Вунӑ пус ахаль пӗтрӗ...
Тырӑ турттарма пӗри
Тытасшӑнчӗ те... лашу
Хайне те чух сӗтӗрет.
Лашупа, турттарма мар,
Тыррӑна та акаймӑн.
Пуяна ак ҫӑпата
Ик мӑшӑр кунне тӑвап—
Мӑшӑрне икӗ пуса.
Ҫакӑн пек ӗҫ хӑш чухне
Тупӑнать... анчах унпа
Нушана тӳрлетеймӗн...
Салтакран Петӗр килсен
Сывлӑш ҫавӑрӑпӑр-и?..“
Эй, мӗскӗн хура халӑх!
Сывӑрмасӑр тар тӑкса
Ӳстернӗ тыррупалан,
Шӑммӑна-шакка ватса
Кӑшт тупнӑ укҫупала—
Ыттисем пурӑнаҫҫӗ;
Ху выҫӑ ларнӑ чухне—
Сурт тулли хӑна пухса
Ӗҫкӗ-ҫикӗ тӑваҫҫӗ.

1907.

## К. В. ИВАНОВ

(1890—1915)

Чăваш литературин классикĕ Константин Васильевич Иванов 1890 çулта Пушкăрт республикинче, Белебей уездĕнчи Слакпуç ятлă ялта çуралнă. Унăн ашшĕ-амăшĕсем пуян хресченсем пулнă. Пуçламĕш шкултан вĕренсе тухсан К. В. 1903 çулта Чĕмпĕрти (Ульяновск) Чăваш шкулне вĕренме кĕнĕ. Вĕренекенсен забастовкине хутшăннăшăн 1907 çулта ăна шкултан кăларса янă.

Малалла вĕренес ĕмĕтпе вăл Бирскпа Благовещенскри семинарисене çитсе пăхнă, анчах „бунтовщика" вĕренме ниçта та йышăнман.

1907 çулхи кĕркунне К. В. Чĕмпĕре таврăннă, вырăсларан чăвашла куçарас ĕçлĕшпе тăрăшса ĕçлеме тытăннă. Ку çулсенче вăл оригиналлă произведенисем: „Тимĕр тылă", „Икĕ хĕр", „Тăлăх арăм" тата чаплă „Нарспи" поэмăна çырса пĕтернĕ.

Унăн произведенийĕсем чи малтанхи хут 1908 çулта „Сказки и предания чуваш" ятлă кĕнеке пичетленсе тухнă.

1909 çулта Иванов учитĕле кĕме экзамен тытнă, çапах ун чухнехи пуçлăхсем ăна вырăн паман. Вара Иванов, пĕр хĕл килтех ирттернĕ хыççăн, каллех Чĕмпĕре куçнă. Унта Чăваш шкулĕ çумĕнчи двухклассăнăй училищере чистописанипе рисовани учителĕ пулса ĕçлеме тытăннă. Çав хушăрах вырăсла кĕнекесене чăвашла куçарас тĕлĕшпе лăш канмасăрах ĕçленĕ. Çакăнта вара унăн ачаранпах начар сывлăхĕ татах та ытларах япăхнă: туберкулезпа катар чирĕсем ăна парăнтарсах çитернĕ.

1915 çулта вăл вилнĕ.

*К. В. Иванов*

### ВАТĂ ВĂРМАН ШУХĂШĔ

Асап килсен, хĕн килсен
Шухăшласа ларатăп:
Çамрăк вăхăт, ыр вăхăт,
Аçта эсĕ çухалтăн?
Çамрăк кунсем, ыр кунсем
Иртсе кайрĕç тĕлĕк пек.
Асап, хĕн-хур халĕ пур,
Килчĕç хура пĕлĕт пек.

### САПКА ЮРРИ

Çывăр, ачам, çывăрах!
Ыйху тутлă пултарах!
Сана пăхма илтĕм эп

Амăрткайăк, çил, хĕвел.
Амăрт вĕçрĕ килелле,
Хĕвел анчĕ ту айне,
Виçĕ каçран çилĕ те
Вĕçрĕ амăшĕ патне.
Çилтен ыйтать амăшĕ:
„Ăçта эсĕ пултăн-ши?
Çалтăрсемпе вăрçрăн-и?
Е хумсене çапрăн-и?
—Тинĕс хумне çапмарăм,
Çалтăрсене тивмерĕм,
Эпĕ ача сыхларăм,—
Ун сăпкине сиктертĕм.

---

## (*Кольцовран*)

Сивĕ çил вĕрет,
Хаяр çил вĕрет;
Пĕлĕчĕ шăвать,
Хуп-хура пĕлĕт.
Курăнмасть унта
Çутă кун çутти,
Курăнмасть унта
Çут хĕвел çутти.
Сĕм-тĕттĕм çĕрте,
Тĕтресем витĕр,
Хура каç анчах
Хуралса тăрать.
Çакăн пек вăхăт,
Çак усал вăхăт
Пĕр-пĕччен çынна
Чĕрине хĕсет.

---

## ШУЙТТАН ЧУРИ

### (*Трагеди сыпăкĕсем*)

**Ш ă л л ĕ:**

Апла пулсан, кай кунтан.
Эпĕ сана тăван мар!
Тăшман çынна нихçан та
Памăп тура панине,

Пиччĕшĕ:

Вĕлеретĕп! Парсан пар!

Шăллĕ:

Вĕлер, чуну çитейсен.

Вată юман хыçĕнчен
Шуйттан татах хĕтĕртет.

Шуйттан:

Ил укçине, ил туртса!
Ылттăн-кĕмĕл çап çута
Хутаç тулли ялтăрать,
Ил укçине—вăл санăн!

Ухмах çыннăн куçĕсем
Йăлтăр-ялтăр çунаççĕ.
Хутаç çине пăхнă та,
Хутаç патне туртăнать.
Анчах шăллĕ укçине
Айне хурса ларнă мĕн.
Ик аллинче ик çĕçĕ
Йăлтăртатса тăраççĕ.

Шăллĕ:

Вилсен вилĕп, чĕрĕлле
Памăп тура парнине.

Вата юман хыçĕнчен
Шуйттан татах хĕтĕртет.

Шуйттан:

Ил, ил, ухмах, мĕн тата
Каллĕ-маллĕ пусатăн?

Акă тăр-тăр чĕтресе
Санă çŷле çĕкленчĕ,
Анчах чунĕ çитмесĕр
Татах аяла анчĕ.
Вата юман хыçĕнчен
Шуйттан татах хĕтĕртрĕ,
Сăнă татах çŷлелле
Яр улăхса карĕ те,

Пиччӗш хӑйӗн шӑллӗне
Чиксе хучӗ укҫашӑн.
Ҫӳлтен кӗр-кӗр аслати
Кӗрлет, вӗркет хаяррӑн,
Хура пӗлӗт куҫхарши
Тата хыта пӗрӗннӗ.
Ухмах этем шӑллӗне
Сӑнапала чиксенех
Илчӗ укҫа хутаҫне,
Ташша ячӗ савӑнса.

Пиччӗшӗ:

Мана мӗн пит кирлӗччӗ?
Укҫа, укҫа—акӑ вӑл!
Укҫа пулсан—мул та пур,
Унтан урӑх мӗн кирлӗ?
Ылттӑн-кӗмӗл манӑн вӑл,
Ялти пуян эпӗ вӑл!
Кайӑп киле ыранах,
Ҫитӗп киле васченех,
Ылттӑн-кӗмӗл ҫурт лартӑп,
Выльӑх тытӑп пинӗпе.
Ирттерӗп ҫав пурнӑҫа
Савӑнса ҫеҫ, кулса ҫеҫ.
Текех канӑҫсӑр ҫынсем
Вӑрҫӑсенче ҫӳреччӗр.
Мана тата мӗн ҫитмен?
Манӑн акӑ пурте пур:
Ылттӑн-кӗмӗл манӑн вӑл,
Ялти пуян эпӗ вӑл,
Укҫа пулсан—мул та пур,
Унтан урӑх мӗн кирлӗ!

Шуйттан юман хыҫӗнчен
Сиксе тухрӗ ахӑрса;
Этем хыҫҫӑн шуйттан та
Ташша ячӗ савӑнса.
Ухмах ҫынна курӑнми
Е ыталать аллипе,
Е чуптӑвать тутипе...
„...Шуйттан чури“ теейсе
Этем укҫа хутаҫне
Хӑрах алӑпа йӑтнӑ.
Тепӗр аллинчи хӗҫпе

Шаккать укҫа хутаҫне,
Хутаҫ ӑшӗнчи укҫи
Шанкӑртатать илӗртсе,
Ылттӑн-кӗмӗл кӗввипе
Ҫын такмаклать ташласа.

**Пиччӗшӗ:**

Мӗншӗн кунта кӑлӑхах
Манӑн пуҫа ҫухатас?

Этем ҫапла шухӑшлать
Тарса кайма хӑтланса.
Ҫӳлтен, ҫӳлтен ҫавӑнтах
Темле сасӑ илтӗнет:
— Мӗскӗн этем, мӗн туран?
Куҫна уҫса пӑх, мӗскӗн,
Ухмах ӗҫӳ ҫинелле.
Тӑпра ҫине ҫавӑнтах
Этем карӗ йӑванса,
Ӑвӗ тухса кайнипе
Ури анчӗ хуҫӑлса.
Сасартӑках ҫил тухать,
Тусса кӗрлесе каять,
Пӗтӗм ҫӗре кисретсе
Аҫа шартлатса ҫапать.
Шуйттан юман хыҫӗнче
Ахӑлтатать хӑрушшӑн,
Ӑнсӑр этем патнелле
Аллисене вӑл тӑсать,
Ирсӗр, ҫӑварне карса,
Ахӑлтатать савӑнса.

Ӑнсӑр этем, вилнӗ пек,
Кӑвакарса кайнӑ хай,
Шуйттан ӑна пӑхать те
Ахӑлтатать хӑрушшӑн,
Тӗнче тӗпне хускатса
Ҫут тӗнчене ишес пек,
Аслӑ тӑват кӗтеслӗ
Ҫут тӗнчене илес пек...

Чул ҫумӗнче пӗр этем
Пуҫне ҫӗклет йынӑшса.

Шăллĕ:

Асапланса выртатăп,
Сăна тухрĕ витĕрех
Кăкăрăма шăтарса.
Мана хамăн айăпшăн
Турă асап ячĕ пуль.
Эй, турăçăм, пиччем те
Ку асапа курминччĕ,
Усал ĕçне тăвиччен
Унăн ăсне çутатсам;
Тăвансемшĕн çапăçма
Тасат унăн кăмăлне;
Вăрçă хушшине кӳртсе
Вĕрилентер чĕрине,
Тăвансемшĕн çапăçса
Тасатсамччĕ айăпне.
Вăл та çаплах, ман пекех,
Шуйттан чури пулминччĕ.
Пиччем, пиччем! Эсĕ те
Суккăр ан юл ман пекех...
Куçна уçса пăх, пиччем,
Мĕнле эпир çынсемччĕ!?
Укçашăнах çунгăмăр.
Ылттăн-кĕмĕлшĕн çунса,
Çынна тĕрлĕ хĕстерсе,
Çынна йĕртсе-макăртса
Пуçтартăмăр пуянлăх.
Пуçтартăмăр пуянлăх
Хамăр ырă курасшăн,
Анчах пухнă мулпала
Эпир тăранмарăмăр.
Вăрçă тухрĕ... Вăрçăра
Вилнисене çаратса
Укçа тупма, пуçтарма
Эпир вăрçа килтĕмĕр,
Анне ячĕ ӳлесе
Пирĕн шухăша сиссе,
Урайĕнче йăваланчĕ
Мĕскĕн анне ман умра:
— Ан кай, ачам, ан кайсам,
Хăвăн пуçна пĕтерĕн,
Ан ухмахлан укçашăн,

Мĕн пурри те çитĕ-çкĕ...
Анчах пирĕн чĕресем
Хускалмарĕç çапах та.
Арăм ячĕ ӳлесе
Тăлăх юласне сиссе:
— Ан кай, ан кай, пĕтетĕн,
Чуну ӳкĕ тамăка...
Анчах эпĕ ăна та
Итлемерĕм çапах та.
Ман шухăшра укçа çеç
Йалтăртатса тăратчĕ.
Хăрамасăр-тумасăр
Тухрăмăр та килтĕмĕр.
Анне юлчĕ ылханса,
Арăм юлчĕ макăрса.
Анчах çӳлтен, эй, турă!
Эсĕ пире сăнанă.
Хамăн усал шухăшшăн
Эсĕ мана тавăртăн:
Вăрçа кĕнĕ-кĕменех
Сăнă чикрĕç кăкăра;
Ăнсăр пулса, йăванса
Юлтăм эпĕ хир варне
Пĕр пĕчченех çакăнта.
Хамăн айăпа курса,
Ирсĕр ĕçĕме пĕлсе
Пашăрханса çунмашкăн,
Пĕр пĕччене выçăхса
Асапланса вилмешкĕн
Тискер пушă хир варне,
Туррăм, мана пăрахрăн.
Ирсĕр чунлă усала
Тивĕçлипе тавăртăн...
Вăйăм пĕтрĕ, ӳт сивĕ,
Чĕрем ăшне хурт çиет.
Эй, турă! Айăпăмшăн
Чунтан-вартан йăлăнса
Санран çăлнăç ыйтатăп!
Сĕм пĕлĕтсем юхаççĕ
Çут тĕнчене хуплас пек.
Тамăк тĕпĕ уçăлать
Ман чунăма çăтас пек.
Шуйттан тухать тамăкран

Ман чунӑма илесшӗн.
Вилӗм, вилӗм килет, ав,
Тӑсать хӑйӗн аллине.
Тамӑк ҫунать ман айра,
Ав, шуйттансем килеҫҫӗ.
Эй, турӑҫӑм, ҫӑл мана,
Пӗтме ан пар чунӑма!..

Вӑйӗ пӗтсе ҫитнипе
Унӑн чӗлхи чарӑнчӗ.
Куҫӗсемпе анчах вӑл
Ҫӳле пӑхса кӗл тӑвать,
Татах вӑйне пуҫтарса:
Эй, турӑҫӑм, терӗ те
Ӑнсӑр пулчӗ ҫавӑнтах
Вайран-халран кайнипе.

Тӗттӗмленчӗ, каҫ пулчӗ,
Ҫил-тӑвӑл та лӑпланчӗ,
Пӗчӗк ушкӑн ҫар килет
Вилнисене пуҫтарма.
Вилнисене пуҫтарчӗҫ,
Шӑтӑк чавма тытӑнчӗҫ.
Сӑнасемпе, хӗҫсемпе
Аслӑ шӑтӑк тӑваҫҫӗ.
Улӑп-юман айӗнче,
Аслӑ чулӑн ҫумӗнче
Вилнисене юрӑпа
Шӑтӑк ӑшне антарчӗҫ.
Ӗречӗпе вырттарса
Виҫҫӗ ӳксе пуҫҫапрӗҫ,
Ура ҫине тӑчӗҫ те
Виҫӗ хутчен пуҫ тайрӗҫ,
Тӑпра ыран ярӑпӑр,
Чӳкне ыран чӳклӗпӗр,
Тесе вӗсем уттарчӗҫ,
Тӗттӗм ҫӗрте ҫухалчӗҫ.

---

## ИКӖ ХӖР

Хайӗн аслӑ хӗрӗнчен
Ашшӗ ыйтать: мӗн мӑнтӑр?
—Пирӗн атте килӗнчи -

Кăвак лаша пит мăнтăр.
— Ăслă каларăн, хĕрĕм.
Унтан ыйтатать: мĕн тутлă?
— Пирĕн атте килĕнчи
Вĕллери пыл пит тутлă.
— Ăслă каларăн, хĕрĕм.
Татах ыйтать: мĕн çемçе?
— Пирĕн атте килĕнчи
Тӳшек-минтер пит çемçе.
— Ăслă каларăн, хĕрĕм,
Хисеп турăн аçуна,
Ĕнтĕ сана çакăншăн
Çур мулăма паратăп.

* * *

Унтан кĕçĕн хĕрĕнчен
Ашшĕ ыйтать: мĕн мăнтăр?
— Çут тĕнчере çĕр мăнтăр,
Унтан мăнтăр нимĕн те çук.
— Санра пархатар сахал.
Унтан ыйтать: мĕн тутлă?
— Ыйхă тутлă, тĕнчере
Унтан тутли нимĕн те çук.
— Санра пархатар сахал.
Татах ыйтать: мĕн çемçе?
— Алă çемçе, тĕнчере
Унтан çемçи нимĕн те çук.
— Санра пархатар сахал,
Эсĕ манăн хĕрĕм мар!
Ашшĕ вара ку хĕрне
Хăваласа ячĕ, тет.

1908.

## ТАРАС КИРИЛЛОВ

(1880—1920)

Тарас Кириллович Кириллов хальхи Чăваш республикинчи Красноармейски районĕ кĕрскен Çеçмер ятлă ялта, 1880-мĕш çулта çуралнă. Унăн ашшĕ вăтам хресчен пулнă. Тарас малтан Мăн Шетмĕри (çав районах) земски училищĕре, унтан Иш кри (Ишлей районĕ) двухкласснăй шкултa вĕреннĕ.

Пĕлекенсем каланă тăрăх, Тарас Кириллович шкулсенче питĕ аван вĕреннĕ. Двухкласснăй шкула пĕтерне хыççăн, хăй тĕллĕн хатĕрленсе Хусанти „Инородческая учительская семинария" текен шкула кĕнĕ. Унта вĕреннĕ чухне Н. В. Никольский профессорпа паллашнă. Никольский ăна, лайăх вĕренекенскере, пур енчен те пулăшса тăнă (каярахпа вăл Никольский йăмăкне качча илнĕ). Семинарире вĕренсе тухсан, Тарас Кириллов Етĕрне хулинчи пĕр приходски шкулта учительре ĕçленĕ. Унтан Шăхасана куçнă, каярахран, экзамен тытса, пупа тухнă. Литература тĕлĕшĕпе Т. К Кириллов Шăхасанта 1901—1902-мĕш çулсенче ĕçлеме пуçăннă. Хăйĕн вăрăмах мар пурнăçĕнче Т. Кириллов ултă пĕчĕк кĕнеке—сăвă кĕнекисем—çырса кăларнă (малтанхи кĕнеки —„Тырă пулнă çул" поэма—1905 çулта тухнă.)

Тарас Кириллов çырнă тĕрлĕрен япаласем хушшинче хресченĕн йывăр пурнăçĕ çинчен тата тăван çĕршыва юратасси çинчен калакан патриотла сăвăсем те сахал мар.

Ку хрестоматире унăн хăшпĕр чи лайăх сăввисемпе поэма сыпăкĕсене илсе пичетлетпĕр

Тарас Кириллов Сăр шывĕ хĕрринче ларакан Лысая гора ятлă посёлокра (Горький облаçĕнчи Воротынск районĕ) учительре пурăннă чух, 1920 çулта вилнĕ. Пытарасса ăна Васильсурск хулин масарне пытарнă.

---

***Т. К. Кирилов***

## 1812 ÇУЛХИ ВĂРÇĂ ÇИНЧЕН ХЫВНĂ ЮРĂСЕМ

I.

Вăрçа кĕнĕ ват салтак
Ĕлĕк мĕн-мĕн пулнине
Юрла-юрла асăнать,
Асăнать те макăрать.
Паттăр пулнă салтакăн
Çӳллĕ кăкăрĕ çинче
Йĕркипеле медальсем,
Йăлтăр-çутă хĕреçсем.

Унăн вăрăм юррине
Ялти вата-вĕтĕсем
Ушкăнĕпе пухăнса
Пуçа тайса итлеççĕ.
«... Француз халăхин патши
Çĕр çывăрмасть, çар пухать:
Ваттине те хĕрхенмест,
Яшшине те шеллемест.

Çĕр хĕрринчи сĕм вăрман,
Витĕр тухми сĕм вăрман,—
Кăн-кăвак çанталăка
Ĕмĕлкипе хуратать.

Ах, вăрман мар, ним те мар,
Француз çарсен ĕмĕлки
Çӳле витĕрех ӳкет,
Унпа пĕлĕт хуралать.

Турă çырлах, ан пăрах:
Халăхăма вăй парах,
Тăшман вăйне чакарах,
Пирĕн вăя хăпартах!

Улăхри текерлесем
Çурхи тырра акнă чух
Хресчен пуçĕ тĕлĕнче
Явкаланса вĕçеççĕ.

Текерле мар, ним те мар,—
Ютран килнĕ утлă çар
Лашасемпе таптатса
Пирĕн çие тăрăнать.

Француз çарĕ малтанах
Пире майсăр тапăнать,
Пирех çĕнтерсе пырать,
Пирех ытла макăртать.

Смулен хули—шур хула,
Хула тавра уй хура,
Çунăк ялсем хуп-хура,
Çĕр вĕри, тӳсмест ура.

Унта-кунта уйсенче —
Хамăр халăх çар çынни
Юнĕпе çĕр шăварать.
Юнпа-мĕн пур çитĕнни?

Юнпа шӳнĕ çĕр çинче,
Смулен хули пахчинче
Тăшман ачисем валли
Шăтрĕç вара çырласем.

Француз салтакĕсене
Хамăр вăйпа çĕннĕрен
„Çырла“ тесе юптарса
Хамăр вăя юрлатăп.

Вăл çырлана çиекен
Француз тăлăх арăмин
Пĕртен-пĕр ул пулин те,
Урăх пĕтрĕ çимелли.

Кунĕн-çĕрĕн çĕр чĕтрет,
Бородинта илтĕнет—
Француз çици çурăлать,
Вĕсен ним те чăтаймасть.

Уй тӳпинчи вăрмана
Кассăн-кассăн уйăрнă,
Уйăрсан касса янă:
Уйĕпех вăрман выртать.

Ах, вăрман мар, çар выртать:
Чун тухайман салтаксем
Йăшталанни курăнать,
Чĕп-чĕрĕ юн пăсланать...

Бородино—аслă уй,
Аслă уйра юрлама
Пырса тăнă паттăрсем:
Мăн çăварлă тупăсем,—

Çĕр чĕтретсе юрлаççĕ,
Курма пынă французсем
Ура утса ташлаççĕ,
Ташăпалах вилеççĕ...

II.

Француз тумтир йĕтĕнрен,
Йĕтĕнрен те пусаран;
Пирĕн енчен çил вĕрсен
Сивĕ тытать кăкăртан.

Кĕр сиввийĕ пуçлансан,
Француз ĕсĕре пуçлать,
Çан-çурăмне сив çапать,
Унтан ӳпки те шыçать.

Пирĕн аслă çĕршывра
Халь те сурăх пит нумай;
Пирĕн çийри кĕрĕксем
Тĕклĕ сурăх тирсенчен.

Çĕр шартлатса шăнна чух
Пирĕн çийри кĕрĕкпе
Улпут хăй те шăнас çук;
Уншăн пулсан хуйхă çук.

Акăĕнтĕ тăшмансем,
Улăхри текерлесем,
Хĕл сиввине кĕрсессĕн
Тин тапранчĕç ăшшалла.

Ют кайăка усрама
Пирĕн улăх ытла мар,
Хăш çĕртен вĕçсе килтĕр,
Унталлах кайса пĕтĕр.

Хамăр çĕр хамăр алра.
Мĕншĕн парас тăшмана?
Хамăр аслă çĕршывра
Хамăр ларар хуçара!

Ĕлĕк-авал тутарсем,*)
Французсем пек тапăнса,
Пире ирĕксĕрленĕ,
Ик-виç çĕр çул йĕртернĕ.

Сибирь ятлă çĕр урлă
Тăшмансем куçса килнĕ,
Çул çинче мĕн тĕл пулнă,
Вĕлернĕ, тытса çурнă.

Сап-сар тырăллă уйсем
Тутарсемпе таптаннă,
Çамрăк арăмсем, хĕрсем
Тăшман мăшкăлĕ пулнă.

Ун чухнехи варçăра,
Авалхи саманара,
Этем тăкнă юнпала
Шыв юнланнă çырмара:

Хура тăшман усалли
Хуласене хуйхăртнă,
Яла-йыша салатнă,
Ирсĕр тĕне тыттарнă.

Хамăр çĕр хамăр алра.
Мĕншĕн парас тутара?
Хамăр аслă çĕршывра
Эпир хамăр хуçара!

Российăра çу каçсан
Аманчĕç текерлесем,
Кĕр вĕçейми пулчĕç те
Мускав вăрманне юлчĕç.

Ака питех май килчĕ:
Пур енчен те ялсенчен
Ют кайăксене тытма
Çынсем хытă пикенчĕç.

Ытлах тарса пĕтиччен
Йăлтах тытса пĕтерчĕç.
Вара хамăр çĕршывра
Хамăр хуçа юлтăмăр.

Хĕвел тухми пуличчен,
Çутçанталăк пĕтиччен—
Тĕрĕс-тĕкел Патшалăх!
Сыв пултăр хура-халăх!

1911.

## ЛЬВОВПА ПЕРЕМЫШЛЬ ХУЛИСЕНЕ ИЛНИ ÇИНЧЕН ХЫВНĂ ЮРĂ

Вăрçă вучĕ вăйлă çунчĕ
Шăтăртатттарса.
Тупăсем çĕр чĕтĕретрĕç
Кĕмсĕртеттерсе...

---

*) Тутар-монголсем.

Австрияна кĕтĕмĕр
Аслă çул уçса.
Львов хулине илтĕмĕр
Паттăррăн кĕрсе!

Львов хулине иличчен,
Люблин патĕнче,
Нимĕççене икĕ енчен
Вăйĕ чакиччен
Пĕр çĕререх пухрăмăр
Çывăхран курма.
Курсан, шухăш тытрăмăр
Çавăрса илме.

Вăрçă вучĕ вăйла çунчĕ
Шатăртаттарса,
Тĕтĕм-сĕрĕм, тупă тарĕ
Çутта хуратса

Çил-тăвăл пек вăйла-тăчĕ,
Чуна хăратса.
Вут витĕрех кайрăмăр
Юрă юрласа.

Перемышль патĕнче
Пирĕн тăшмансем
Шухăш тытрĕç хирĕç тăма
Чуна хытарса,—

Эпир хыттăн вут хĕмĕпе
Хĕртме тапратсан,
Вĕсем вара тӳсеймерĕç—
Парăнчĕç пире.

Нимĕç чунне чĕтĕретрĕ
Пирĕн вăйлă ят,
Çак ăнпа ак хăватланчĕ
Пирĕн аслă ят,

„Русь“ патшалăх чаплăланчĕ
Пĕтĕм тĕнчере,
Ĕмĕр пытăр ӳнăн чапĕ,—
Халăха: урра!..

1915.

## ХРЕСЧЕН ХĂЙĔН ĔÇĔ ÇИНЧЕН ХЫВНĂ ЮРĂСЕМ

### Сыпăксем.

III.

Калча тĕлĕнче юрлаççĕ
Çӳлте таса тăррисем,
Чунăма савăнтараççĕ
Юратмалла кайăксем.

Ăшă вылять калча тăрăх,
Шыв çинчи пек хум каять.
Ним пахи çук маншăн урăх:
Куçран ытла чун пăхать.

Ыраш, сĕлĕ—уй илемĕ,
Хĕвел йăлтăр пăхнă кун.
Тĕнчере пĕр çын тӳсеймĕ:
Уй курасси килĕ ун.

Симĕс тырпа витĕннĕ уй
Хушшипе, ав, çул выртать.
Авланакан çын тунă туй,
Пăх-ха, янтратса каять.

VIII.

Ыраш вырса эрне иртрĕ,
Пĕр кун та ахаль ларман.
Тата урпа пулса çитрĕ,
Ăна пуçтарма ан ман.

Урпа аксан,—утмăл талăк
Хушшинче пулса çитет.
Пулса çитсен—виçĕ талăк
Хушшинче çĕре ӳкет.

Ыраш уйне ҫӗмел тулчӗ,
Пуйса кайрӗҫ анасем.
Ҫур-тырри те шап-шур
пулчӗ,
Пулса ҫитрӗҫ сӗлӗсем.
Кӑвак, хитре хӗрлӗ тӗслӗ
Кӗпесемпе хресченсем;
Пӑхӑр ӗнтӗ, пурте ӗҫлӗ:
Йӑлкӑшаҫҫӗ ҫурласем!

IX.

Кӑвак лаша, чунӑм пахи,
Эс манпа пӗрле ӗҫре.
Эс сыв пулсан, ыраш аки
Туса хурӑпӑр пӗрле.

Ачам пӑчам сӗлӗ выртӑр
Амӑшӗ ҫумне тӑрса.
Кӑвак лашам, эпир кайпӑр,
Ыраш акмалла пулса.

Ыраш акма уяр пулчӗ,
Тусан чуна пӗҫерчӗ.
Хресченӗн йывӑр ӗҫӗ
Вӗри юнпа шӑранчӗ.

Ӗҫленӗ чух пӗр сисместӗн
Вӑхӑт иртсе пынине.
Вырса пӗтерсен кӳретӗн
Тырруна анкартине.

Сат-картинче* улма пиҫрӗ
Ача-пӑча кӑмӑлне.
Мӑн ҫын ҫиме праҫник ҫитрӗ,
Кайрӑм—ҫирӗм тутлине.

Шукля ҫинче, пас тытнӑ пек,
Хӑмла ларать усӑнса.
Йӗпе кунра, ирпек, каҫпек,
Шӑхӑрса татса хурса.

---

*) Пахчара.

XIV.

Пурне ҫине хурса сыврӑм
Минсем* ҫӑкӑр ҫинине:
Кил-йыш йышлӑ, пӳрчӗ—
тӑвӑр,
Уйра хӗсрӗҫ анине.

Парӑм-сарӑм татас тесе
Тӳшек-ҫытар та сутса,
Михӗсем тӗпне силлесе
Мӗн пур тырра авӑртса.

Пурнӑҫ пурӑнма пит йывӑр:
Мӗнле пурнас, кун курас?
Ҫукшӑн тӗнче те пит тӑвӑр,
Мӗскер туса аслатас?

Укҫа мӗн туса тупас-ши,
Пирӗн тавра савӑт ҫук.
Кам патне тарҫа каяс-ши,—
Тарҫинче те тӳсме ҫук.

Йӗри-тавра ал ҫухрӑм кай—
Ӗҫе кӗртекен пур-и?
Апла пулсан, хулана кай—
Сана кӗтекен пур-и?

XV.

Алри ача макӑрмасӑр
Амӑшӗ тӑрантармасть.
Мӑн ҫын алла ӗҫ тытмасӑр
Пӳрт-ҫурт нихҫан ӑшӑнмасть.

Хӗрӗх пуслӑх пушӑт илтӗм,
Услам** нумай илӗп-ши?
Ҫӑпатасем йатса килтӗм,
Пасар хуҫи пулӑп-ши?

Ҫӑка пушӑт ҫӑпати пур,
Пирӗн ураран каймасть,

---

* Сын ячӗ.
** Тупӑш.

Ир пĕрре сыр, каç салтса
хур,
Вăхăт иртни палăрмасть.

Ай, мăнтарăн пурăнăçĕ,
Услам тума кăмăл çук.
Хут вĕренмен, тĕнче кул-
чĕ,—
Эпир ырă курас çук.

XVI.

Çынсем ĕç тума вĕренчĕç—
Вырăс хушшине кайса,
Вырăссемпеле пĕрлешрĕç
Пĕр кăмăлтан пурăнса.
Шакка-шакка сунтал тиртĕм
Мăн каска пуçĕ вĕçне,
Хулари пек укçа илтĕм:
Пĕлтĕм тимĕрçĕ ĕçне.

Вăльттин-вăльттин урапийĕн
Тĕнĕллисем тимĕртен,
Кăльтăр-кăльтăр кăстăрчăкĕн
Кӳпчек вĕçĕсемйĕсрен.

1912.

## ПУЛĂШĂР

(Аманнă салтак чĕнсе калани.)

Чĕкеç кайăк пурăнать,
Юрă юрлать, савăнать,
Çуллен чĕпĕ кăларать,
Хăй йăвине юрататъ.
Анчах унăн та тăшман
Пĕреçех мар, темиçе:
Хурчăкапа тăмана,
Ула куракпа çăхан—
Кайăк юнне тăкасран
Нихăçан чарăнас çук.
Тăшмансем тапăнасран
Сыхă тăма кирлине
Вĕçен-кайăк та пĕлет,
Тĕрĕс пурăнас килет.
Чĕкеç йăвисем тĕлне
Хурчăка вĕçсе килсен,
Пĕтĕм ялти чĕкеçсем
Килсе кĕнĕ тăшманне
Хăвалаççĕ пур енчен
Чун савнă ял-йышăмсем,
Эсир—манăн тăвансем!
Эпĕ сире юратса
Сирĕн ята çĕртмерĕм.
Ял-йыш ячĕшĕн тăрса
Пуçăма шеллемерĕм:
Вăйлă вăрçăра пулса
Аран вилесрен юлтăм.
Салтаксене хĕрхенсе
Эсир те пит тимлерĕр.
Вăйăр çитнĕ таранччен
Укçа-тенкĕ пухса та,
Пир-ар касса парса та
Эсир пысăк ĕç турăр.
Çар халăхĕ хушшинче
Эпĕ те пăшал петĕм:
„Вилĕм—тăшмана!", терĕм.
Вăрçа кĕнĕ паллăсем—
Акă ман суранăмсем,—
Хăвăрăн куç умĕнче.
Пулăшăр ĕнтĕ мана,
Хурлăх курнă салтака.
Тискер тăшман виллисем
Халь куçăмран каймаççĕ:
Хытса çитмен юнĕсем
Тайлăм çĕре юхаççĕ.
Тăмшмансене çĕмĕрсе
Вăй-хăватăм юлмарĕ.
Тупă сасси итлесе
Кăкăр-çурăм, ăш-чикĕм
Кунĕн-çĕрĕн чĕтрерĕ.
Пур хуйха аса илсен,
Кунăн çутти хуралать,

Ăшăм-чиккĕм çаврăнать.
Тăшман персе чикесрен
Харсăрлăхăм сыхларĕ.
Тăшман суниш пулмарĕ:
Манăн вилĕм çитмерĕ;
Сусăрлантăм, вилмерĕм.
Хĕрхенсемĕр эсир те
Хурлăх куран салтака!
Ĕлĕк эпĕ сывăччĕ,
Пур ĕçе тăваттăмччĕ,
Хама хам усраттăмччĕ.
Тăшман усалли пирки
Эпĕ ĕçлейми пултăм.
Пулăшăр ĕнтĕ мана,
Çука юлнă салтака.
Ача-пăчам çарамас.
„Мĕнле усрас-ши?" тесе
Пуçăмран шухăш каймасть.
Ачамсем сывă пулсан,
Самана лăпкă тăрсан,
Эпĕ хăват хураттăм,
Пурăнма пултараттăм:
Ачамăмсем ĕçлĕччĕç,
Мана пăхса усрĕччĕç.
Ача-пăча ӳстерме
Турă пиллетĕр анчах.
Халĕ йывăр пулсан та,
Ӳлĕмрен çăмал пултăр.
Хĕвел тухăçĕпеле
Хĕвеланăç хушшинче
Хамăр çĕршыв çиййĕнче
Канлĕхпе телей пултăр,
Ачи-пăчи, халăхĕ
Йăвари пек савăнтăр.
Хальччен ырă халăхĕ
Ĕмĕр телейлĕ пултăр.
Тăшман кулли пуласран,
Асли хыпар ярсанах
Халăх ывăль-салтаксем
Тăшмана хирĕç тухчăр;
Киле юлнă çынсемшĕн,
Ваттипе çамрăксемшĕн—
Пур пĕрле тăвансемшĕн
Тĕреклĕ пулса тăччăр.
Паттăр чапĕ пурăнтăр.
Пирĕн чап ан çухалтăр.
Эпир, хальхи салтаксем,
Хамăр ята пăсман пек.
Ӳлĕмрен те паттăрсем,
Российăри салтаксем,
Пирĕн ăспа пурăнччăр:
Тăшман айне ан пулччăр.
Хăвăр ăспа шухăшлăр:
Çар халăхĕ пулмасан,
Никам хирĕç тăмасан,
Тăшмансем сире хальччен
Вĕлерсе пĕтерĕччĕç,
Пӳрт-çурт тулли ачăрсем,
Йăвари кайăксем пек,
Туха-туха ӳкĕччĕç;
Йĕри-тавра çуртăрсем
Çуна-çуна кайĕччĕç.
Пулăшăр салтаксене—
Халăх тĕрекĕсене!
Хурлăх нумай тӳсрĕмĕр,
Çитмен çĕре çитрĕмĕр,
Хĕл сиввине пăхмасăр
Аслă уйра тăтăмăр.
Кунĕн çĕрĕн канмасăр
Тăшмана çĕмĕртĕмĕр.
Хĕлле ытах сивĕ-çке!
Сурансем шăнаççĕ-çке!
Çурçĕр енчен çил вĕрет,
Çĕр çумĕнчен юр вĕçет.
Шăнса çитнĕ çĕр сикет.
Пĕлĕт çинчи хĕвел те—
Виç-хăлхаллăн, хĕрелет.
Салтак çапах та тӳсет,
Вăл сире аса илет.
Пулăшсамăр салтака!
Тăшман куçа курăнсан,
Куçкаланма пуçласан,
Çар халăхĕ кар! тăрать.
Аслинчен приказ тухать.
Пур халăх харăс перет,
Тăшман çĕре йăванать,

Шап-шура юр юнланать.
Тăшман тарнине курса
Çар халăхĕ савăнать,
Аçа сасси пек „урра“
Ман чуна савăнтарать.
Пулăшăр салтаксене,—
Тăван çĕрĕмĕр çине
Тăшман килсе кĕресрен
Çăлса тăракансене!
Вăрçа кайнă салтаксен
Киле юлнă ачисем,
Ашшĕсене асăнса,
Куççулĕпе макăрса
Амăшсенчен ыйтаççĕ:
„Анне, анне, каллаччĕ,
Атте ăçта кайрĕ-ши,
Хăçан киле килĕ-ши?
Анне, мĕншĕн йĕретĕн,
Пире ачашланă чух
Куçна шăлса илетĕн?
Анне, анне, каласам,
Атте ăçта кайрĕ-ши?“
—„Ай, айван ачамăмсем,
Йăва çинчи чĕпĕсем!
Ашăм çунать.. хĕрхенĕр...
Эсир халь мĕн пĕлетĕр!
Аçăр кайрĕ,—те килĕ,
Те кайнă çĕртех вилĕ...
Ай, чунăм, ай, айван чун,
Курайăн-ши ырă кун?
Ăшчик пӳлĕнсе тăрать,
Мĕн туса лăпланам-ши?
Чĕкеç чĕппи—ачамсем,
Сире кам хĕрхенĕ-ши?
Сире хĕрхенекене
Вилечченех асăнăп,
Кураймана ылханăп.
Чĕре тавра вут çунать.
Хăçанччен ку пырĕ-ши?
Хуйхă-суйхă пĕр енчен,
Çиме çукки çийĕнчен.
Салтак арăмĕ тесе
Çиме çăкăр те парĕç,
Те айăпласа тăрĕç?
Тăлăх тархасланине
Халăх хăлхи илтĕ-ши?
Ачамăмсем ӳсиччен
Пулăшакан пулĕ-ши?
Ял йыш умне тăрăттăм,
Куççулĕпе калăттăм:
Ыра çынсем, ял-йышсем,
Тăлăхсене пулăшăр!“

1904.

*Я. Иовлев, Т. Кириллов*

## ТĂРĂШАКАН ЫРĂ КУРАТЬ

*(Малтанхи пайĕ.)*

Вуник çула çитсессĕн,
Пĕвĕме вăй кĕрсессĕн,
Каяс терĕм хулана
Тарçă ятне илтмешкĕн,
Тул кулачи çимешкĕн.
Хула çулĕ пит вăрăм.
Хальччен хулана кайман.
Шухăшларăм, ăс илтĕм,
Хула ăçтине пĕлтĕм.
Вата çынсем каларĕç:
„Хула çитме çывăх мар,
Ал çухрăмран кая мар.
Хурăн çулпа каймалла,
Вăрман урлă kaçмалла.
Эсĕ, Ваçли, çитес çук,
Ачаскерех каяс çук",—
Тесе мана каларĕç.
Пирĕн аттепе анне
Çити-çитми пурнăçпа
Тата хăрăк сывлăхпа
Ытах асапланаççĕ,
Уксак-суккăр лараççĕ.
Шухăшларăм, макăртăм.
Эпĕ хулана кайсан,
Камсем пăхĕç аттене,
Кам хĕрхенĕ аннене?
Анне тахçанах куççăр,
Атте тата урасăр.
Атте-анне начаршăн
Кил-çурт ларать япăхса.
Шухăшларăм пуç тавра,
Тухса кайрăм пахчана.
Атте-анне сывă мар,
Сывă мар çын ĕçлеймест,
Карта-хура çавăрма
Ниçтан та вăй çитеймест.
Пирĕн пахча пит япăх,
Ыр çын пырса ан та пăх.
Ним шухăшла пĕлмесĕр,
Утрăм ним те чĕнмесĕр,
Пăхса илтĕм малалла,
Каяс тенĕ çулпала.
Пуян çынсен ачисем
Тумланаççĕ пит аван:
Хура тумтир, шур тумтир
Пăхма аван аякран.
Шухăшларăм; хурлантăм,
Тумтир çукшăн вăтантăм.
Ӳпне ӳкрĕм çĕр çине,
Ӳпкелешсе макăртăм,
Сутăн илмен куç-çулне
Тăкрăм чĕр курăк çине.
Хĕвел пăхать, ăшăтать,
Ыр çын тавраш савăнать.
Манăн мĕскĕн аттенĕн
Пахчи-йĕрки майĕ çук,
Ларса канма йывăç çук.
Ĕмĕр ларать пĕр йывăç:
Ятлă-шывлă йывăççи—
Атте лартнă улмуççи.
Шулчи ларать сип-симĕс,
Улми ларать шап-шурă.
Сак ĕмĕрхи улмуççи,
Ĕмĕр хурлăх курнăскер,
Тутлă çимĕç тăваймасть,
Этем ăшне пусармасть.
Мĕншĕн апла тесессĕн,
Ытах пĕлес килсессĕн,—

Пулнă вăрман улмуççи,
Йÿçĕ-хулма йываççи.
Улмисем паха марскер,
Çынсене юрăхсăрскер,
Çынсем çисе савăнман,
Çавăнпа та шăварман,
Карта-хура çавăрман.
Ăсăм-пуçăм шухăшлать:
Улмуççи пек пулас мар,
Ăс илмесĕр ларас мар,
Каяс пĕррех хулана—
Хуçа патне „хăнана".
Çавăн-хĕлĕн е çăхан,
Е курак, е тăмана
Улмуççие сыхлаççĕ,
Ун çинчен таталмаççĕ.
Пирĕн сала пит асла.
Çынсем сысна усраççĕ:
Ирпе-каçпа сыснисем,
Ытти тĕрлĕ выльăхсем
Ун патĕнчен каймаççĕ,
Улмасем хăвармаççĕ.
Тата тискер сыснисем
Çинипех те юрĕччĕ,
Çисенех тапратаççĕ
Тымаррине кăлармa,
Вăйсăр йываçа хăртма;
Вăрçа-вăрçа чаваççĕ,
Сăмсисене чармаççĕ.
Хамăр начар пиркишĕн
Шухăшларăм, макăртăм.
Пире, йăваш-начара,
Кам херхенĕ салара?
Йывăр шухăша кайса,
Начарришĕн кулянса,
Ик-виç сехет шăрăхра
Лартăм пулĕ антăраса.
Тем хĕвелпе пиçиччен,
Ăшăрхаса лариччӗн,
Каяс, терĕм, сулхăма,
Анчах вăйăм çук утма.
Виç кун çимен кĕлеткем—
Хирти шанна чечек пек.
Чуна усракан чĕрем—
Халех чунсăр пулас пек.
Тарса утма вăйăм çук.
Çынна калас, çын илтмест,
Çын хуйхине çын пĕлмест.
Каплах вилме йĕрке çук:
Шăм-шак йывăр пулсан та,
Чун лăпланас çуккипе,
Татăм, утрăм килелле;
Пуçра шухăш кĕтÿпе:
Чунăм хула еннелле.
Килхушшине кĕтĕм те—
Атте-анне лараççĕ
Хутаç-çăкри вакласа,
Вĕттĕн-вĕттĕн тураса;
Тăр шывпала йĕпетсе
Тăварсăрах çиеççĕ.
Анне мана каларĕ:
„Килсе çисем, ывăлăм.
Каç пулчĕ, хĕвел анчĕ;
Ту айккине пытанчĕ.
Хальччен çăкăр пулмарĕ.
Çуллахи кун, вăрăм кун,
Выççипех иртсе кайрĕ.
Паян çăкăр çиессе
Чунăм пĕртте сунмарĕ..."
Эпĕ вара каларăм:
„Манăн çиес шухăш мар.
Сире калас сăмах пур.
Атте, мана ирĕк пар,
Анне, мана пиллĕх пар,—
Каяс тетĕп хулана.
Сире йывăр пулин те,
Пиллĕр мана иксĕр те".
Урăх кала пĕлмесĕр,
Чун хурланнă майĕпе
Хутаç-çăкри илтĕм те
Çĕре ÿкрĕм, пуççапрăм.
Ват çынсене макăртрăм.
Çуллахи вăрăм кунра
Çынсем виç хут çиеççĕ,
Тата чей те ĕçеççĕ.
Эпĕ ĕнтĕ выççипех,

Пĕчик татăк çинипех
Каçпа выртрăм сыврăрма.
Ăшăм-чиккĕм пушă та—
Ыйăх та çук, пит кансĕр.
Çиес килет йĕркесĕр.
Тĕлĕрсе çеç каятăп,
Ырă тĕлĕк куратăп:
Пĕр-май çăкăр çиетĕп,
Чарăнмасăр çиетĕп,
Тăранма та пĕлместĕп,
Тĕлĕкрине сисместĕп.
Çаплах ирпе тăтăм та,—
Эпĕ пĕртте тутă мар.
Хула каяс сăмаха
Каллех каласа патăм,
Куççулĕпех макăртăм.
Атте кайма пиллерĕ.
Анне мана, пуçăмран
Шăла-шăла, каларĕ:
„Ай, ывăлăм, ывăлăм,
Пĕвĕм йатна кĕлеткӳ,
Ӳпке-пĕвер ывăлăм!
Сана тура усратăр,
Чир-чĕр, хаяр куççенчен
Çӳлти турă сыхлатăр.
Çӳренĕ чух сыхлă пул,
Çын умĕнче чĕрĕ пул,
Çын хыçĕнче тĕрĕс пул.
Астаракансем пулĕç,
Кулакансем тупăнĕç—
Тăшман вăйĕ ан çиттĕр,
Усал куçĕ ан ӳктĕр.
Çӳрес çулусем урлă
Кушак-йытă ан каçтăр:
Инкек-синкек ан тухтăр.
Калле-малле шухăшна
Çынна тӳрех ан кала.
Ырра курса ан хапсăн,
Чипер, тесе, ан савăн.
Лайăх çӳре савăнса
Турă панă хăватпа.
Аçу-аннӳне манса
Ан кай, вара, пăсăлса.
Эпир выçă ларнăшăн
Вăйран-туха ĕçлесе
Кĕлеткӳне ан çĕмĕр.
Çурхи чечек тухнă пек,
Тин пуçланать сан ĕмĕр.
Ан ман вара, ывăлăм:
Эсĕ халĕ çавăн пек".
Атте-анне калаçи,
Вĕсем мана пиллени
Çĕр çинчи пурнăçăмра
Яланах ман асăмра...
Чунăм кӳтнĕ майĕпе
Тухрăм кайрăм урама,
Тантăш-юлташа курма.
Хула каяс шухăшпа
Утса тухрăм урампа...
Ăсăм-пуçăм лăплансан,
Тантăшсене ал парсан,
Кайрăм вара тăвалла.
Хула çулĕ унталла...

1912.

## ÇУРТА ÇУНСА ПĔТРĔ.*

Хĕвел анса лара пуçларĕ.

Хĕвеланăç енчи илемлĕ, витĕр куранакан çӳхе пĕлĕтсем хĕрелнĕçемĕн хĕрелсе пыраççĕ; юлашкинчен, хăмачă пек, çĕрле вутă çуннă чух пĕлĕт çине ӳкекен çутă пек, хĕрлĕ пулса каяççĕ.

Çӳлерех, тĕттĕм витĕр, тата çӳхе пĕлĕтсем палăраççĕ; вĕсен айĕнче чĕкеçсем тата ытти кайăксем хура çиçĕм пек явкаланса вĕçсе çӳреççĕ.

Çанталăк питĕ тӳлек... Çӳлтен кайăк сассисем илтĕнеççĕ—вĕсем те паянхи кун юлашки хут юрлаççĕ; çывăхрах, кантăк айĕнче, кăвакарчăн сасси илтĕнет. Тĕлĕнмелле! Çак кайăк сассисем пĕртте сасă пек туйăнмаççĕ, çанталак çапах пĕр сасăсăр, тӳлек пек туйăнать.

Пур çĕрте те лăпкă, лăпкă пурне те çĕнтерчĕ. Тĕрме умĕнчен юхса выртакан шывран та, тепĕр енчи хуларан та пĕр сасă та илтĕнмест.

Çав хула çине пăхсан, темĕскерле пек туйăнать: çынсем куранмаççĕ, пĕр сасă та илтĕнмест: çуртсем урлă куранакан ушкăн завод трубисенчен те кăвак тĕтĕм тухни куранмасть... Сан умăнта темĕн пысăккĕш, тем пек вăйлă çын, ĕмĕр тăмалла мар çывăрса кайса выртнă пекех туйăнать...

Унăн чĕри пĕртте тапмасть; вăл ĕлĕкхи суранĕсем ыратнине туймасть, унăн ĕнтĕ усаллăхра та, ырăлăхра та ĕç те çук.

Çанталăк тĕттĕмленнĕçемĕн тĕттĕмленсе пырать. Хĕвел тахçанах анса ларнă, унăн юлашки çутти анчах хĕвеланăç енчи пĕлĕтсене хĕретет.

Çывăракан вăйлă çын айхăран вăранчĕ.

Хулара хăйă çута пуçларĕç. Кантăксем витĕр хумханакан шыв çине çутăсем ӳкеççĕ. Темиçе тĕлте электричество хунарĕсем те çутрĕç. Вăл хунарсем, тĕттĕм витĕр курас тесе, шăтарас пек пăхакан пысăк куçсем пек туйăнаççĕ... Халĕ те пĕр саса та çук, çапах та чун пăр-

*) Вырăсларан куçарнă. Кам куçарни паллă мар.

так лапланса кайрĕ, мĕншĕн тесен вăл пĕччен пурăннипе анчах тăванса çитет, халĕ—пĕччен мар, леш енче курăнакан çутăсем унта çынсем пуррине пĕлтереççĕ, чун вĕсене курать, вĕсемпе пĕрле...

Тĕрмере, тахăш енчен, тăхăр сехет çапни илтĕнчĕ. Вăл сасă, чиркÿ патне вилĕ йăтса пынă чух çапакан чан сасси пек, салхуллă илтĕнчĕ. Кунта, тĕрмере, унти пек мар, кунта яланах пит лăпкă, пĕр кĕрленĕ сасă та çук, пит тискер. Кунта пурте пĕр майлă, пурте асаплаваççĕ. Шухăшласан: çак тĕрме мĕн чухлĕ çынна асап кÿрет!..

Ах, хăçан тухас-ши ирĕке?

Çаксене шухăшланă вăхăтра, вăл сасартăк чĕтресе кайнă.

„Ах, çак халĕ çунакан çурта манăн пĕркун илнĕ пилĕк кĕрепенкĕ çуртасенчен юлашки-çке", тесе шухăшласа илнĕ вăл.

Ёненмесĕр вăл шкап патне пырса çуртасем чĕркенĕ хута тытса пăхнă: хут ăшĕнче чăнахах пĕр çурта та пулман. Çакна курсан, унăн чĕри сиксе тухас пек хытă тапа пуçланă, урисем чĕтресе кайнă, вăй пĕтсе çитнĕ: вăл ÿкесрен çтена çумне пырса таяннă.

Тĕрмере асапланакан çынсене темле шухăш та килсе кĕрет; юлашки хут çурта илнĕ чухне Кириллов ак мĕн шухăшланă:

„Çак çуртасем çунса пĕтсен, мана ирĕке кăлараççĕ", тенĕ вăл хăйне хăй. Шухăшланă хыççăнах, хăй шухăшĕнчен хăй тĕлĕнсе, кулса янă. Путакан çын улăм пĕрчинчен те пулсан тытса çăлăнас, тет. Çавăн пекех тĕрмери çын та, ирĕк пит паха пирки, ирĕке тухасшăн улăм пĕрчинчен те тытма хатĕр.

Кириллов çак шухăшран кулнă, çапах та хăй шухăшланине пит ĕненесшĕн пулнă. Вăл çав шухăшне епле те пулин манасшăн тăрăшнă, анчах манса çитсенех пит асаплана пуçланă; хăйĕн çинчен: „эпĕ çак тĕнчере пуринчен телейсĕрри пулĕ", тесе пăшăрханнă. Вара каллех çав шухăша аса илсе, хăйне хăй йăпатнă.

Юлашкинчен, пĕрехмай шухăшланипе, вăл çав шухăша чăна хурса ĕнене пуçланă, ĕненмесĕр пурăнма та пултарайман. Кам та пулсан ăна: „çав шухăш чăн мар", тесе калас пулсан, вăл ăна ăсран кайнă çын вырăнне хума хатĕр пулнă.

Çавăнпа та вăл хăй аллинчи çурта хучĕ пушшине курсан, шухăшне аса илнĕ те, ирĕке тухас кун çывăхарса

çитнине ĕненсе, тата телей ытла кĕтмен çĕртен çитнипе, чĕтресе вăйран сулăнса кайнă.

„Ака ĕнтĕ вăхăт çитсе килчĕ, тепĕр виçĕ кунран ирĕке тухатăп: тимĕр алăк уçăлса кайĕ, тĕрмене пăхакан кĕрĕ те: „ĕнтĕ хăвăр япаларсене пуçтарăр, сире ирĕке кăларма хушрĕç“, тейĕ. Кунтан тухсан, тӳрех вокзала кайăп, вагон çине ларăп Тепĕр икĕ кунран килте пулăп, темиçе уйăх тĕрмере, темиçе уйăх пĕччен пурăннă хыççăн, юлашкинчен, каллех хам тăван-хурăнташăмсем хушшинче пулăп... Ах, аттепе анне, мана курсан, епле савăнĕç! Ах, кил илемми! Сĕтел çинче самовар вĕресе, илемлĕ пăс кăларса ларать; ун çине пăхсан, чун савăнать.

Пахчара шăпчăк, шăнкрав пек уçă сассипе, хавасланса юрă юрлать; уçа чӳрече витĕр пахчаран пӳрте тутлă шăрăш кĕрет! “

Çапла шухăшласа кайса, Кириллов хăйĕн ĕлĕкхи пурăнăçне те аса иле пуçланă:

Вал хăй пурăнакан кил çурчĕ, ашшĕ пурăнакан аслă пӳлĕмĕ çинчен аса илнĕ: пĕчĕккĕ чух, каç пула пуçласанах, вăл çав пӳлĕме кĕме хăранă; ӳссе çитсен, Кириллов çав пӳлĕмре каç-каç, йăмăкĕ кĕсле каланине итлесе, тахçанчен ларма юратнă.

Шухăша кайнипе, Кириллов тĕрме çинчен, хăй асапĕ çинчен пĕтĕмпех манса кайнă. Вăл пĕр кĕсле сасси анчах илтнĕ. Ăна пăртак тăрсанах хăйĕн çĕршывне, йăмăкне, хăй каççерен ларма юратакан пӳлĕмне курас пек туйăннă. .

Тĕрмере пĕр енчен шакканă сасă илтĕннĕ. Кириллов айхăран вăраннă пек пулнă: вăл татах тĕрме çинчен, хăйĕн пӳлĕмĕ çинчен аса илнĕ.

Çурта тĕттĕмĕн çунса ларнă, унăн çутти кĕтессене лайăххăн çутатса та тăрайман.

Çурта çунса пĕтрĕ... Кириллов тĕрмерех... Тухас тесен те кăлармаççĕ... Çĕçĕ те... кантăра тавраш те алăра çук...

1906.

## АСӐРХАТТАРНИСЕМ

**С. М. МИХАЙЛОВ.**

*„Хваттер хуҫипе калаҫни“* („Разговор на постоялом дворе“) тата *„Чее кушак“* („Хитрая кошка“). Иккӗшне те вырӑсла ҫырнӑ. Вӗсене автор „Российӑри Императорски географи обществине“ тӑратнӑ пулнӑ. Алҫырӑвӗсем халь Ленинградра, СССР Наукӑсен Академийӗн пӗтӗм Союзри географи обществин алҫыру фондӗнче, упранаҫҫӗ. Калавсем халиччен ниҫта та пичетленмен.

**М. Ф. ФЕДОРОВ.**

*„Арҫури“*—пӗрремӗш хут „Сказки и предания чуваш“ ятлӑ кӗнекере 1908 ҫулта (Чӗмпӗр хулинче) пичетленсе тухнӑ (112—114 стр.). Ҫав кӗнекенех 1921 ҫулта Хусанта иккӗмӗш изданипе кӑларнӑ. 1919 ҫулта „Арҫури“ „Шурӑмпуҫ“ журналӑн 2-мӗш номерӗнче пичетленнӗ. Виҫӗ изданире те автор ятне кӑтартман.

**И. Н. ЮРКИН.**

*„Вичӗкӗн шӑллӑ шӑши“*—пӗрремӗш хут „Хыпар“ хаҫатӑн 1906 ҫулхи 8-мӗш номерӗнче пичетленнӗ.

*„Урине“*—Чӗмпӗрте 1917 ҫулта уйрӑм кӗнекен пичетленсе тухнӑ.

**ТАЙӐР ТИМККИ.**

*„Чаплӑ вилӗм юрри“*—1906 ҫулта „Хыпар“ хаҫатӑн 23-мӗш номерӗнче пичетленнӗ. Т. Т. тесе алӑ пуснӑ.

*„Шухӑш“*—1906 ҫулта „Хыпарӑн“ 46 номерӗнче тухнӑ.

*„Ҫӗнӗ ҫул“*—1907 ҫулта „Хыпар“ хаҫатӑн 1-мӗш номерӗнче пичетленнӗ. Т. Т. тесе алӑ пуснӑ.

*„Ҫӑлӑнӑҫ“*—„Хыпар“ 1906 ҫ. № 19.

*„Пурӑнӑҫ ҫутти“*—„Хыпар“ № 20, 1906 ҫ.

*„Ҫутта тухасчӗ“*—„Хыпар“ № 2, 1906 ҫ. Т. С—в тесе алӑ пуснӑ.

*„Тӗлӗнмелле“*—„Хыпар“ № 25, 1906 ҫ. Ку произведение В. А. Долгов (Хударсем) Тайӑр Тимкки ҫырнӑ пулӗ тесе шутлать (Тайӑр Тимкки. Сӑвӑсемпе калавсем. Шупашкар. 1944 ҫ. Умсӑмах).

**Н. И. ШЕЛЕПИ.**

*„Тав“*—пӗрремӗш хут 1907 ҫулта „Хыпар“ хаҫатӑн 12-мӗш номерӗнче пичетленнӗ. Николай Полорусов тесе алӑ пуснӑ. Сӑввӑн автор панӑ ячӗ—„Ҫӗлен“ пулнӑ.

*„Ҫарӑмсанпа Хӑнтӑрҫа“*—пӗрремӗш хут 1914 ҫулта Хусанта уйрӑм кӗнекен тухнӑ. Ку хрестоматие кӗскетсе кӗртнӗ.

**М. А. АКИМОВ.**

*„Шӳт туни“*—пӗрремӗш хут 1906 ҫулта „Хыпар“ хаҫатӑн 23-мӗш номерӗнче пичетленсе тухнӑ. Цензура чарасран калава халлап тенӗ.

*„Ялти пурӑнӑҫ“*—пӗрремӗш хут 1907 ҫулта „Хыпарӑн“ 18-мӗш номерӗнче тухнӑ. Хаҫачӗ хупӑннӑ пирки пьеса пичетленсе пӗтмен.

**Г. А. КОРЕНЬКОВ.**

*„Хальхи пурӑнӑҫ“*—пӗрремӗш хут 1906 ҫулта „Хыпар“ хаҫатра тухнӑ. К. тесе алӑ пуснӑ. Пирӗн хрестомати валли автор ятарласа пӑхса тухса, ӗлӗк цензура улӑштарнӑ вырӑнсене тата корректор йӑнӑшӗсене малтан хӑй ҫырнӑ пек юсаса пачӗ.

**ВАҪҪА АНИҪҪИ.**

*„Ялта“*—„Хыпар“, 6-7-мӗш номер, 1907 ҫ.

**Й.**

*„Пирӗн ялта пур пуян“*—„Хыпар“, № 10, 1907 ҫ.

**ТУРХАН.**

*„Варуççи“*—пĕрремĕш хут 1906 çулта „Хыпар“ хаçатăн 20-мĕш номерĕнче тухнă.

**ТĂВАН ЯЛСЕМ СЕРГЕЙ.**

*„Шăпчăк юрри“*—пĕрремĕш хут поэма „Хыпарăн“ 1907 çулхи 6-7-мĕш номерĕнче пичетленнĕ. Урăх ниçта та тухман. Ку кĕнекене кĕскетсе кĕртнĕ.

*„Ялта“*—хаçатăн çав номерĕнчех пичетленнĕ.

Ку произведенисемсĕр пуçне Тăван ялсем Сергейĕн „Хыпар“ хаçатра 1906 çулхи 17-мĕш номерте „Эрех ĕçĕр“ ятлă кĕске сатира тата 1907 çулхи 6-7-мĕш номерте „Мĕн тăвас“ ятлă сăвă тухнă.

**АВТОРНЕ КĂТАРТМАН.**

*„Хура халăх“*—поэма. „Хыпар“ хаçатăн 1907 çулхи 13-мĕшпе 15-мĕш номерĕсенче пичетленнĕ. Урăх ниçта та тухман.

**К. В. ИВАНОВ.**

*„Ватă вăрман шухăшĕ“*—пĕрремĕш хут Ухсай Яккăвĕн „К. В. Ивановăн пичетленмен произведенийĕсем пирки“ ятлă статьинче пичетленнĕ („Хĕрлĕ Урал“ альманах, Уфа, 1936 çул.) „К. Иванов алçырăвĕнче“ „Ватă вăрман шухăшĕ“ халлапăн пуçламăшĕ пур Ун айне „Отрывок из легенды про чувашского царя“ тесе çырнă“, тет Ухсай çав статьяра.

*„Сăпка юрри“*—пуçласа 1940 çулта „Чăваш Коммуни“ хаçатра тата „Сунтал“ журналта пичетленнĕ.

*„Сивĕ çил вĕрет“*—çавăнтах.

*„Шуйттан чури“* (çырса пĕтермен трагеди сыпăкĕсем)—пĕрремĕш хут Ухсай Яккăвĕн „К. В. Ивановăн пичетленмен произведенийĕсем пирки“ ятлă статьинче тухнă. („Хĕрлĕ урал“ альманах, Уфа, 1936 çул, 61—73 стр.)

*„Икĕ хĕр“*—1908 çулта „Сказки и предания чуваш“ кĕнекере пичетленнĕ (3 стр). Автор ятне пĕрремĕш хут ку сăвва 1923 çулхи календарьте пичетленĕ чухне тин кăтартнă. („Чăваш кăлентарĕ“, Шупашкар, 1923 çул, 137 стр.).

Пилĕк произведенийĕ те К. В. Ивановăн 1940 çулта пичетлесе кăларнă сочиненисен пуххине кĕнĕ.

**Т. К. КИРИЛЛОВ.**

*„1812 çулхи вăрçă çинчен хывнă юрăсем“*—1911 çулта Хусанта уйрăм изданипе тухнă „Песни о войне 1812 года“ ятлă кĕнекере пичетленнĕ.

*„Львовпа Перемышле илни“*—1916 çулта Хусанта тухнă „О войне“ ятлă сборникрен илнĕ. Т. К. К. тесе ал пуснă.

*„Хресчен хăйĕн ĕçĕсем çинчен хывнă юрăсем“*—1912 çулта Хусанта уйрăм кĕнекен тухнă. Кĕнеке ятне вырăсла çырнă. Т. К. К. тесе алă пуснă. Кĕскетсе пичетлетпĕр.

*„Пулăшăр“*—1905 çулта Хусанта уйрăм кĕнекен пичетленсе тухнă. Автор ятне кăтартман.

**Я. ИОВЛЕВПА Т. КИРИЛЛОВ.**

*„Тăрăшакан ырă курать“*—1912 çулта Хусанта уйрăм изданипе тухнă. Кĕнекин пĕтĕмĕшле ачĕ—Я. Иовлев и Т. К. К. „Бог труды любит Труд кормит, лень портит. Турă тăрăшакана юрататъ. Тăрăшакан ырă курать“. Ку хрестоматие кĕскетсе кĕртетпĕр.

**ВЫРĂСЛАРАН**

*„Çурта çунса пĕтрĕ“*—„Хыпар“ хаçатăн 1906 çулхи 36-мĕш номерĕнче пичетленсе тухнă.

# ТУПМАЛЛИ


Стр:

*Хветĕр Уяр* Умсăмах . . . . . . . . . . 3

**С. М. Михайлов**

Кил хуçипе калаçни. *Н. Ф. Данилов* куçарнă . . . . . 11
Чее кушак. *Хветĕр Уяр* куçарнă . . . . . . . . . . 15

**М. Ф. Федоров**

Арçури . . . . . . . . . . . . . . . . . . 16

**И. Н. Юркин**

Вичĕкĕн шăллă шăши . . . . . . . . . . 22
Урине . . . . . . . . . . . . . . . . . . 23

**Юлташ.**

Çĕнĕ юрă . . . . . . . . . . . . . . . . 28

**Тайăр Тимкки**

Чаплă вилĕм юрри . . . . . . . . . . . 29
Шухăш . . . . . . . . . . . . . . . . . 30
Çĕнĕ çул . . . . . . . . . . . . . . . . 31
Çăлăнăç . . . . . . . . . . . . . . . . 32
Пурăнăç çутти . . . . . . . . . . . . . 33
Çутта тухасчĕ . . . . . . . . . . . . . 35

**Авторĕ паллă мар.**

Тĕлĕнмелле . . . . . . . . . . . . . . . 36

**Н. И. Полоруссов-Шелепи**

Тав . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 38
Çăрăмсапа Хăнтăрçа . . . . . . . . . . 39

**М. Ф. Акимов.**

Шўт туни . . . . . . . . . . . . . . . . 48
Ялти пурăнăç . . . . . . . . . . . . . . 50

**Г. А. Кореньков.**

Халăхи пурăнăç . . . . . . . . . . . . . 54

**Ваçça Аниççи.**

Ялта . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 56

**И**

Пирĕн ялта пур пуян . . . . . . . . . . . . . . . 57

**Турхан.**

Варуççи . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 58

**Тăван ялсем Сергей.**

Шăпчăк юрри. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 61
Ялта . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 64

**Авторĕ паллă мар.**

Хура халăх . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 66

**К. В. Иванов.**

Ватă вăрман шухăшĕ. . . . . . . . . . . . . . . . . 70
Сăпка юрри. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 70
Сивĕ çил вĕрет. . . . . . . . . . . . . . . . . . 71
Шуйттан чури . . . . . . . . . . . . . . . . . . 71
Икĕ хĕр . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 77

**Тарас Кириллов.**

1812 çулхи вăрçă çинчен хывнă юрăсем. . . . . . . . 79
Львовпа Перемышль хулисене илни çинчен хывнă юрă. 81
Хресчен хăйĕн ĕçĕсем çинчен хывнă юрăсем. . . . . . 82
Пулăшăр . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 84

**Я. Иовлев, Т. Кириллов.**

Тăрăшакан ырă курать . . . . . . . . . . . . . . . 87

**Вырăсларан.**

Çурта çунса пĕтрĕ . . . . . . . . . . . . . . . . 90

**Асăрхаттарнисем** . . . . . . . . . . . . . . . . . 93

Редактор С. В. Эльгер.

НТ 00038. Заказ № 1453 Подписано к печати 28—I—1946 г.

Количество печ. знак. в 1 п. л. 40206. Тираж 5.000 экз. Объем 6 п. л.

Типография № 2 Управления полиграфпромышленности
при СНК ЧАССР, гор. Алатырь.

Цена / Хакĕ 5 руб. / тенĕ

Иван Мучи,
Федор Уяр

# ДОРЕВОЛЮЦИОННАЯ ЧУВАШСКАЯ ЛИТЕРАТУРА

На чувашском языке

ЧУВАШГИЗ ◆ ЧЕБОКСАРЫ
1946